К 86.3
А 90
ЧУВ-34500
-ЧУВ



# АСЛĂЛАХ КĔНЕКИ

Национальная библиотека ЧР
4-034500

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

86.3
А 90

# ĂСЛĂЛĂХ КĔНЕКИ

СОЛОМОНĂН ӲКĔТ КĔНЕКИ

ЕККЛЕСИАСТ КĔНЕКИ

СОЛОМОНĂН «ЮРĂСЕН ЮРРИ»

Сăвăласа куçараканĕ
Николай Кушманов

ШУПАШКАР
1993

86.37-200 18

**АСЛАЛАХ КĔНЕКИ**
**Сăвăласа куçараканĕ Н. Кушманов**

Сăвăсен текстне 1904 — 1907 çулсенче Петербургра пичетленнĕ «ТОЛКОВАЯ БИБЛИЯ» тата Мускав патриархийĕ 1988 çулта кăларнă «БИБЛИЯ» кĕнекесен тĕп шухăшне шута илсе чăвашла сăвăласа куçарнă.
Асăрхаттарусемпе ăнлантарусем куçаруçăн.

Рецензентсем — Илия К А Р Л И Н О В протоиерейпе Петр ФЕДОРОВ иерей.

Кĕнекене Чăваш республикинчи Писательсен союзĕн правленийĕпе Поэтсен ассоциацийĕ пичетлеме сĕннĕ.

Печатается по рекомендации правления Союза писателей и Ассоциации поэтов при СП ЧР.

ПРОВЕ... 2010 2 АВГ 2017

34500-46

Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького

**Шупашкарпа Чăваш Архиепископĕ ВАРНАВА пилленипе**
**С благословения Архиепископа Чебоксарского и Чувашского ВАРНАВЫ**

## УМĔН КАЛАНИ

Библие вырăс тата тĕнче литературин чĕлхисене сăвăласа куçарасси авалтанах йăлана кĕнĕ. Ку вăл этемлĕхе ĕлĕк те, паян та, пулас кунсенче те яланах хумхантаракан, кăсăклантаракан ыйтусем пулнипе тачă çыхăннă. Искусство çыннисем çак ĕçрен айккинче пăрăнса юлмаççĕ. Вĕсем турăшсене, скульптура портречĕсене, Библире çырса кăтартнă пулăмсене сăнласа ӳкерессине хăйсен тивĕçĕ вырăнне хураççĕ. Паллах, писательсемпе поэтсем те çак сăваплă ĕçе хутшăннă май, Библири темăсемпе яланах интересленеççĕ. Кунта çакна палăртса хăварни те вырăнлă пулĕ: Библи кĕнекисенчи шухăшсене тепĕр тĕрлĕ илемлетсе сăнарлани çынсем хушшинче анлă сарăлнă. Çавăнпа та вăл нумай-нумай халăхăн чи юратнă та çывăх кĕнеки пулса тăрать.

Библи поэтики, Авалхи Хĕвелтухăçĕнче аталаннăскер, авалхи тата классикăлла культурăсенчен палăрмаллах уйрăлса тăрать. Çавăнпа та латин, грек тата ытти чĕлхесемпе çырнă поэтсем, ăна тепĕр тĕрлĕ илемлетсе, гекзаметр тата классика виçисемпе сăвăласа куçарма тăрăшнă. Каярахпа вĕсем тĕрлĕ халăхăн поэзи произведенийĕсенче çĕнĕ формăсене кĕрсе аталаннă. Библири шухăшсене тĕрлĕ тĕслĕн илемлетсе каласси вырăс литературинче Симеон Полоцкипрен, Михаил Ломоносовран тата ытти поэтсенчен пуçланнă. Ку ĕç малаллах пырать.

Чăваш литературинче те çак ĕç К. В. Ивановăн, И. Я. Яковлевăн тата ытти куçаруçăсен творчествинче лайăх палăрса тăрать. Эпир сăвăласа куçарнă кĕнекене чăваш вулаканĕсене сĕнесси те çӳлерех асăннă

традицисемпе тачă çыхăннă. Куçаруçă авалхи Библири тĕп шухăшсене пĕр улăштармасăр, анчах та хальхи пурнăç шайне шута илсе ĕçленĕ.

Кĕнеке виçĕ пайран тăрать: «Соломонăн Ӳкĕт Кĕнеки» («Книга Притчей Соломоновых»), «Екклесиаст кĕнеки» («Книга Екклесиаста или Проповедника»), Соломонăн «Юрăсен юрри» («Книга Песни песней Соломона»). Вĕсене Библин «Авалхи Саккунсен Халалĕ» («Ветхий Завет») кĕнекинчен илсе куçарнă.

Пĕрремĕш пайри «Соломонăн Ӳкĕт Кĕнеки» ĕлĕкрех еврей чĕлхипе çырнă Библи канонĕн виççĕмĕш вырăнĕнче пулнă. Унта вăрăм тата кĕске сыпăксене кĕртнĕ. Вулакан асăннă тĕн кĕнекипе паллашсан, ăслăлăхпа тĕрĕслĕх, Çӳлти Турра ĕненесси, Ăна çутçанталăк, этем пăхăнни, çемьене епле тытса тăрасси, çĕр çинче çынсен мĕне тĕпе хурса пурăнасси, килти хуçалăха типтерлĕ усрасси çинчен вуласа пĕлме пултарать. Вырăн вырăнпа вĕрентӳпе пурнăç çинчен сăнаса çырнă каларăшсем те пур. Кĕнекере кулленхи пурнăçа тĕрлĕ енлĕн, анлăн çутатнă. Кунта Моисей саккунĕпе пурăнакан авалхи еврейсен кунçулĕ çинчен тĕплĕн çырса кăтартнă. Еврейле çак кĕнекене Мишле-Шелома е кĕскен Мишле, Машал теççĕ. Асăннă сăмахсем çавăн евĕрлĕ тенине пĕлтереççĕ. «Соломонăн Ӳкĕт Кĕнеки» Моисей саккунĕсем хыççăн çуралнă. Тĕн кĕнекисенче вăл Туррăн çынни пулни, авалхи еврей халăхĕ Ăна ĕненни, пĕлни çинчен çырса кăтартнă. Çавăнпа та «Соломонăн Ӳкĕт Кĕнеки» Çӳлти Турра ĕненсе-шанса, Унăн нихăçан улшăнман саккунĕсене хисеплесе пурăнакан çынсен кунçул-шăпине нумай енлĕн, ĕненмелле çутатса парать.

Иккĕмĕш пай — «Екклесиаст кĕнеки». («Православный церковный календарь. 1991» кĕнекере ку сăмаха Е к к л е з и а с т тесе çырнă). Ăна авалхи Соломон патша (пирĕн эрăчченхи X ĕмĕрте) ячĕпе çырнă пулсан та иккĕленӳ çуралать. Мĕншĕн тесен, XVII ĕмĕрте Гуго Гроций «Екклесиаст кĕнекин» чĕлхи Соломон патша вăхăтĕнчи сăмахлăхран пач уйрăлса тăни, унăн уйрăмлăхĕсем çинчен çырса хăварнă. Хальхи вăхăтри ăсчахсем те çак произведение пирĕн эрăчченхи 300-мĕш çулсенче çырнă тесе шутлаççĕ. Оригиналта ăна Кохелет теççĕ. Ăнланмалларах куçарсан (грекла эккле — пуху), вăл «çын пухура тухса калаçни» тенине пĕлтерет.

«Екклесиаст кӗнеки» писательсемпе историксене, философсемпе поэтсене авалтанпах питӗ те кӑсӑклантарнӑ. Малтанах асӑннӑ произведение III-мӗш ӗмӗрте Григорий Неокессарийский тепӗр тӗрлӗ илемлетсе вулакансем патне ҫитернӗ. Вырӑс вулаканӗсем хальхи вӑхӑтра унӑн хӑшпӗр сыпӑкӗсемпе Герман Плисецкийӗн хӑйне евӗрлӗ сӑвӑлла куҫарӑвӗпе паллашнӑ. (Литература хаҫачӗ, 43 №, 11 стр., октябрӗн 10-мӗшӗ, 1990 ҫул). Умсӑмахне Александр Мень протоиерей ҫырнӑ. Эпир хамӑрӑн статьяра унӑн шухӑшӗсемпе те усӑ куратпӑр. Екклесиаст вулакансене поэзи чӗлхин хӑвачӗпе ҫеҫ мар, тарӑн шухӑшпа, вӑл Библие кӗрекен ытти кӗнекесенчен пач уйрӑлса тӑнипе те тӗлӗнтерет. Автор авалхи Ҫут тӗнчери картинӑсене анлӑн ҫутатса парать. Анчах та умра аталанусӑрлӑх, сӗмтӗттӗмлӗх, пур ҫӗрте те вӗҫӗмсӗр, хӑйӗн вырӑнне каялла таврӑнакан ҫутҫанталӑк саккунӗсем хуҫаланаҫҫӗ. Библин ытти кӗнекисенче кивӗ йӑла-йӗркесене улӑштарасси ҫинчен сӑмах пырать пулсан, ҫаксем Екклесиастра пачах та ҫук. Ҫынсен умне ҫакӑн пек ыйту та час-часах сиксе тухнӑ: мӗншӗн-ха ӑсчахсем ҫак салхуллӑ та кичем поэмӑна Библие кӳртнӗ? Чылай интерпретаторсем ҫапла ӑнлантараҫҫӗ: Екклесиаст сӑваплӑ кӗнекесемшӗн урӑхларах пӗлтерӗшлӗ пулсан та, вӑл Библин тӗнчекурӑмлӑхӗ диалектика саккунӗсемпе малалла аталанни ҫинчен ҫеҫ асӑрхаттарса систерет. Мӗншӗн тесен, малтанхи ҫынсем ҫӗр ҫинчи ырлӑх-пурлӑха курассине ҫӳлти тӳпери ҫӑтмахпа танлаштарнӑ. Анчах та чап, пуянлӑх, ачасене ҫеҫ ӳстересси тата ытти пулӑмсем этем чунне йӑлтах тивӗҫтереймен. Ӗнтӗ ҫынсен чун ҫимӗҫӗ пирки шухӑшлама вӑхӑт ҫитсе пынӑ. Ҫавӑнпа та Екклесиаст хӑйне евӗрлӗ чикӗре — ҫынсен малашне пысӑк тӗпчев-шыравра пулмалли ҫинчен систерет. Пурнӑҫра этем нумай опыт пухни, шухӑшлани, тӳсни «ниметӑманлӑх» кӑна иккен. Ҫапах та авалхи поэт кӗнеке вӗҫӗнче урӑхларах шухӑшсене ҫырса кӑтартса, малтанхи салху туйӑмсене кӑштах ҫемҫетет.

Кунта ҫакна та асӑнса хӑвармалла. Чӑвашла сӑвӑласа куҫарнӑ шухӑшсене археолог шыравӗсемпе танлаштарма кирлӗ мар. Мӗншӗн тесен, эпир сӗнекен Екклесиаста хальхи шӑв-шавлӑ пурнӑҫ витӗмӗ те кӗнӗ.

Виҫҫӗмӗш пай — Соломонӑн «Юрӑсен юрри». Асӑннӑ произведени Библин ариограф ятлӑ кӗнекесен хуш-

шинчи пайра та, вырӑсла ҫырнӑ Библири вӗрентӳ кӗнекисен хушшинче те виҫҫӗмӗш вырӑнта тӑрать. «Юрӑсен юрри» чи лайӑх юрӑ тенине пӗлтерет. Ҫак кӗнекере, Соломон хӑй ӑнланнӑ тӑрӑх, ҫынсен Турра ӗненсе, Ӑна мӗнле пӑхӑнса пурӑнмалли ҫинчен ҫырнӑ. Авалхи автор Турӑ суйланӑ халӑха лили чечекӗпе танлаштарать. Христос чиркӗвӗнче Ориген ҫӗр ҫине часах Христос килессине систернӗ. Вӑл ҫапла ҫырнӑ: «Эпир Моисей вӗрентӗвӗнчен святойсем, святойсем хушшинче тата та святойраххисем, шӑматкунсен хушшинче аслӑ шӑматкунсенӗн шӑматкунӗ, Соломонӑн юррисемсӗр пуҫне унӑн «Юрӑсен юрри» пурри пирки пӗлтӗмӗр». Амвросий Медиоланский святой ӑнлантарса панине те шута илмеллех пирӗн. Вӑл «Юрӑсен юринчи» Суламита (ҫураҫнӑ хӗре) Турӑ амӑшӗпе танлаштарать. Асӑннӑ произведенири (оригиналти) сӑмахсемпе чиркӳн тӗрлӗ уяв кӗллисенче анлӑн усӑ кураҫҫӗ.

Вулакансене эпир ҫакна та каласа хӑварасшӑн: «Юрӑсен юррине» пӗтӗмӗшле, тӳррӗн ӑнланма юрамасть, хӑшпӗр вырӑнсене пач хирӗҫле пӗлтерӗшпе йышӑнмалла. Асӑннӑ произведение, тӗслӗхрен, «Толковая Библия» е тӗн ҫинчен ҫырнӑ урӑх ӗҫсемпе паллашнӑ хыҫҫӑн ҫеҫ тата та уҫӑмлӑрах, лайӑхрах ӑнланма пулать.

# СОЛОМОН ХАЙЛАВĔСЕМ

I

Израильти патшан, хастар Давидăн
Ăс-тăнлă ывăлĕн чылай хайлав.
Ун ячĕ Соломон, ăна тăнла
(Çĕн юррисем те сан чунна йăлт витчĕр).

Пĕлес килсессĕн тĕрĕслĕх вăйне,
Ӳкĕтлесе ăса вĕрентнине,
Мĕскер çинчен систерĕ çĕн каларăш?
Çакна, ăша хывсан кăна, ăнланăн.

Çакна, ăша хывсан, йăлтах ăнланăн:
Çĕн йĕркене епле пăхăнмалла,
Тĕрĕслĕхе епле йышăнмалла?
Хайлавсенче ăна аван каланă.

Ахаль çынна вăл парĕ тавçăрулăх,
Терт-инкеке лексессĕн, хăтăлма.
Çамрăксене—хальччен туйман пĕлӳлĕх,
Вĕсем вĕренĕç тĕрĕс çул тупма.

Ăна ăсчах итлет те васкамасăр,
Ун пĕлĕвĕ татах, татах ӳсет.
Хайлавсенчен ан пăрăн-ха сăлтавсăр,
Тăнли те вĕсенчен канаш илет.

Хайлав чĕлхи, чăнах та, пит ытарлă,
Унта тем тĕрлĕ шухăш упранать.
Ват çын сăмахĕ пултăр тавçăрмалăх,
Тупсăмсенче асамлăх пур, хăват.

Ас-тăн çул-йĕрĕ пуçланать ялан,
Енчен те Турăран эс хăрасассăн.
Айван хисеплемест Ăна нихçан,
Вăл ӳкĕте кĕмесĕр пурăнасшăн.

(Эс ăнлансассăн ыррине тӳрех,
Сана çул-йĕр кăтартĕ аслă Турă.
Ăна хисеплесессĕн чĕререн,
Телей пуçламăшне вара тин тупăн).

Итле-ха, ывăлăм, вĕрентнине,
Сана аçун сăмахĕ кирлĕ пулĕ.
Ан ман аннӳ хушса хăварнине,
Вăл чунунта упрантăр, хаклă мул пек.

Мĕн-ма тесен, вĕсен пĕлӳ çăлкуçĕ
Пуласлăха çул-йĕр чăрмавсăр уçĕ.
Ун чух пуçкăшăлĕ пулать санра —
Телей те юп куран малашлăхра.

Енчен те, ывăлăм, çылăхлисем,
Сан пирĕнпе çеç пулмалла, тесессĕн,

Пĕрле пулма нихçан ан килĕш эсĕ,
Вĕсен кашнин хăрушă ĕмĕтсем.

Сĕнсен: «Пĕрле ларатпăр пытанса,
Пĕр айăпсăр çынна тĕл пуласса,
Чи малтанхи ĕçе çапла пуçлатпăр:
Вăл курăнсассăнах — ăна кăнтатпăр.

Йĕрри-палли те ун юлмасть, чĕр тамăк
Ăна курма тӳр килĕ — пĕттĕрех.
Ун умĕнче пире тухма тӳрре
Кирлех-ши, пурăнсассăн лайăх хамăр.

Тем тĕрлĕ мул пуçтарăнĕ те хăвăрт,
Çурт-йĕр йăлт тулĕ çĕнĕ пурлăхпа.
Тупсассăн тупăш, пурнăç пулмĕ тăвăр,
Киленĕпĕр куллен-кун ырлăхпа.

Шăпа пĕрле яратпăр-ха, мĕн пӳрнĕ,
Унран хальччен никам иртсе курман.
Пирĕнпеле ан пул эс ӳрĕк-сӳрĕк,
Вара юп курăн пурнăçра ялан»,—

Çапла сĕнсен те, ывăлăм, тархасшăн,
Вĕсемпеле çула нихçан ан тух.
Ултавлă сукмакран шав пăрăнмашкăн
Пĕр хăвăнта кăна ялан вăй пух.

Мĕн-ма тесен, вĕсем пĕрмай васкаççĕ
Тӳркăмăллă çынна хĕн кăтартма.
Пĕр хĕрхенӳсĕрех юн юхтараççĕ,
Усалсемпе май çук телей тупма.

Сăна-ха тӳпери кайăксене:
Çын шухăш-ĕмĕтне йăлтах туяççĕ.
Тытас тесессĕн те эс вĕсене,
Серепӳне алхапăл çакланмаççĕ.

Енчен те вăрттăн пытанса ларсан,
Йăви тавра тетел карса хурсан,
Тин чунĕсем сан аллуна çакланĕç.
Вĕсем çак тыткăнран тек хăтăлаймĕç.

Шăп çавăн пек кам çыннăн пурлăхне
Ытла та хапсăнать ялан выçкуçлăн,
Çав вĕçлĕ усалпа çеç çул-йĕрне,
Кун-çулĕ пулнăшăн пит чыссăр унăн.

Ытла та ăслă шухăшлавçă харсăр,
Вăл пытанса лармасть нихçан пĕччен.
Хăй сассине хăюллăнах хăпартĕ
Площадьсенче, хула урамĕнче.

Чи пысăк пухура тухса калаçĕ,
Çынсем йăлт тăнлĕç вăл вĕрентнине.
Кам хулана килет, унпа паллашĕç,
Ыйтăвĕсем хумхатĕç чĕрене:

«Юратĕç хăçанччен, сиртен ыйтасшăн,
Пач вĕренмен çынна, вăл ăс пухманшăн,
Чăрсăррисем киленĕç иртĕхсе,
Çут пĕлĕве шав сивлĕç айвансем?

Пит тимлĕн итлĕр эп питленине,
Чуна пĕр пытармасăр уçнине,
Хам шухăш-туйăма йăлтах пĕлтерĕп,
Сирĕн пата хыпарăма çитерĕп.

Анчах та, шел, мана итлекенсем,
Эп тилмĕрсессĕн те, пĕрле пулмарĕç.
Алăсене çĕклерĕм-ха, вĕсем,
Сĕм-суккăр евĕр, нимĕн те курмарĕç.

Канаш-сĕнӳсене пач йышăнмарĕç,
Чылайăш пăрăнчĕ сăлтавсăрах.

Тӳрккеслӗхе пӗрмай питлен сӑмахӑм
Вӗсемшӗн пулчӗ ӗнтӗ кӑлӑхах.

Эппин, ҫитсессӗн ахӑрсамана,
Эсир пӗтнишӗн эпӗ савӑнатӑп.
Ун чух сехӗрленетӗр-ха, туятӑп,
Ун чух асилӗр ӑсчаха, мана.

Ҫитсессӗн хурлӑх, тӑвӑл пек, сасартӑк,
Инкек, ҫавраҫил евӗр, ҫавӑрттарӗ.
Вара сисме пуҫлатӑр-ха хуйха,
Кӗрсе ӳкетӗр терт-асаплӑха.

Вара мана чӗнме пуҫлатӑр пурте,
Анчах та сассӑра эп илтмӗп урӑх.
Пулсассӑн та ирех шыракансем,
Ҫавах тӗл пулмӗҫ сӑнӑма вӗсем.

Тӗл пулмӑр ҫав, мӗн-ма тесессӗн, эсӗр
Савмастӑр пӗлӗве, ӑна сивлетӗр.
Ют сирӗншӗн Турра пӑхӑнасси,
Вӗрентӗвне чунпа йышӑнасси.

Сире пурне те тӗрӗс ҫул кӑтартрӑм,
Ӑна эсир ним вырӑнне хумарӑр.
Сивлерӗр эп питленӗ сӑмаха,
Ыр канаша та йышӑнмарӑр-ха.

Шӑп ҫавӑншӑн, пурнӑҫламан ӗҫсемшӗн,
Инкек-синкек куратӑр хӑвӑрах.
Пустуй кун-ҫулшӑн, пушӑ ӗмӗтсемшӗн
Явап тытма тӳр килӗ пурнӑҫра.

Тӳрккес этем хӑй сӑмахне тытать те
Ҫавна пула ҫут кун-ҫулне татать.
Ҫӑмӑлттайла айван ҫын пурӑнать те
Кайран сисмесӗрех кӑнса выртать.

Мана итлекенсен çеç пурнăç ырă,
Хăратмĕ вĕсене нихçан усал.
Тăнăçлăхра кашни тивлет-юп курĕ,
Ĕмĕтленни те тăрĕ шав ăнса».

## II

Енчен те, ывăлăм, халалсене
Иккĕленмесĕр эсĕ йышăнсассăн,
Чунран каланă ман сăмахсене
Куллен-кунах манмасăр упрасассăн,

Ун чух пурне те питĕ тимлĕн итлĕн,
Ас-хакăла пĕрмай мала хурса.
Çут пĕлӳре хăвна та кӳрĕн витĕм,
Тин пуçлăн пурăнма шухăшласа.

Енчен те эс вĕрентĕве шансассăн,
Ăна пĕрмай алла илме чĕнсен,
Пĕлӳ пухасшăн çеç шав ăнтăлсассăн,
Ун вăй-халне йăлт ăнланса çитсен,

Енчен те эс ăна шыран пулсасăн,
Çут кĕмĕл тупнăн, пит хĕпĕртесе,
Ку манăн хаклă пурлăхăм тесен,
Вара пĕлетĕп эпĕ: йăнăшмастăн.

Мĕн-ма тесессĕн, эс ăнланăн лайăх:
Сан Турăран хăрамалла, иккен.
Каярахпа ун ĕçĕпе паллашăн,
Ĕмĕтӳпе çирĕпленсе куллен.

Çакна ăнланăн лайăх: Аслă Турă
Çынна пиллет ялан сӳнми вăй-хал.
Ăна çеç итлесен, пĕлӳлĕх тупăн,
Ун чух эс утăн пурнăçра кал-кал.

Хăрушлăхра Вăл çăлăнăç çеç парĕ,
Инкек-синкек пӳлеймĕ-ха сана.

Вăл хӳтĕлĕ, пĕрмай хавхалантарĕ,
Тасатĕ усалран йăваш чунна.

Вăл тĕрĕслĕх çулне те упрĕ лайăх,
Суялăха сирсе ярса, ăна пӳлсе,
Хăйне çеç парăннă сăваплисен
Сукмак-йĕрне те сыхлĕ çут малашшăн.

Ун чух тĕрĕслĕхе, çут чăнлăха,
Тĕп-тĕрĕс сăмаха аван ăнкарăн.
Пĕртен-пĕр хăвна пӳрнĕ сукмака
Нихçанхинчен те лайăхрах эс хаклăн.

Ун чух пĕлӳлĕх, сан чунна кĕрсе,
Хавхалантарĕ, сĕнĕ çутă шанчăк.
Вара хăпартланса та çĕкленсе
Вĕренӳре тинех тупатăн канăç.

Ун чух, йĕркеллĕ шухăшланăран,
Хăвна ху упрăн тĕрлĕ ултавран.
Енчен те сив инкек çулна пӳлсессĕн,
Ăна хăюллăнах çĕнтерĕн эсĕ.

Тĕлли-паллисĕр пакăлтатакан
Сана суялăх авăрне тĕртсессĕн,
Усал этем те хытă юнасан,
Çавах пур йăх-яха çĕнтерĕн эсĕ.

Тӳп-тӳрĕ сукмакран пăрăнаканăн
Малашлăхĕ нихçан аван пулман-ха.
Мĕн-ма тесессĕн, вăл тĕттĕмлĕхе
Е кукăр çул-йĕре савать, иккен.

Ытла та савăнать усал этем
Пурнăçĕнче çынна хĕн кăтартнишĕн.
Е, намăса манса, пит хĕпĕртет,
Ним уямасăрах аскăнланнишĕн.

Суя çулпа ăнтăлакан çынсем
Каварлашса мĕн чухлĕ тунă сăтăр?
Сукмакĕ кукăр-макăр-ха хăйсен,
Вĕсем кирек хăçан ĕçлеççĕ вăрттăн.

Хăй майлă çавăрас тесен, хĕрарăм
Йăпăлтатса та илĕртсе астарĕ.
Сăмахĕпе, тертрен хăтарăп, тет,
Анчах санах синкерлĕхе тĕртет.

Вăл Турă умĕнче каланине
Манса кайма пултарнă питĕ хăвăрт.
Çухатнă хăйĕн ырă тивĕçне,
Шăп çавăншăн кун-çулĕ пулĕ тăвăр.

Çурт-йĕрĕ унăн тупăк евĕр ларĕ,
Сив вилĕме çывхартĕ хăй патне.
Вĕçленĕ май масар çинче çулне,
Унпа кашнин сукмакĕ çывăхланĕ.

Кам çак пӳрте кĕрет — унтан тухаймĕ,
Вăл ĕмĕрне те вĕçлĕ çавăнтах.
Шăв-шавлă пурнăç çулĕпе утаймĕ,
Ĕмĕтленеймĕ хумханса татах.

Шăп çавăнпа та, ывăлăм, ыйтатăп:
Таса кăмăллисен çулне юрат.
Тӳр чунлă çынсенче кăна хăват,
Çакна ăнланнă май телей тупатăн.

Мĕн-ма тесессĕн, тӳрĕ чунлисем,
Ыр кăмăлне пула, пурнаççĕ лайăх.
Пĕтме тивет усал сунакансен,
Вĕсен çак çĕр çинче пулман малашлăх.

Кам саккуна хăять хирĕçлеме,
Çитсессĕн вăхăчĕ — тивет вилме.

Ултавçăсен те çулĕ-йĕрĕ ăнмĕ,
Вĕсем те çĕр çинчен çухалĕç, кăнĕç.

III

Ыйтатăп, ывăлăм, вĕрентнине
Манса ан кай, ялан асра тытсамччĕ.
Чунран калană ман халалсене,
Ăша хывса, пĕрмай эс упрасамччĕ.

Эп хушнине куллен-кун пăхăнсассăн,
Май пулĕ вăрăм çул-йĕрпе утмашкăн.
Ун чух тин пурнăçланĕ ĕмĕтӳ,
Тăнăçлăхра çеç иртĕ ĕмĕрӳ.

Кирек хăçан та чăнлăха юрат,
Ыр кăмăл, хĕрхенни те кирлĕ питĕ.
Скрижаль çинче çырни пек, вăл чунра,
Ыр туйăмсем çураттăр, кӳтĕр витĕм.

Вара эс Аслă Туррă умĕнче те,
Ĕçчен, мухтавлă халăх хушшинче те,
Ӳстернĕ май вăйна, хастарлăхна,
Çӳле çеç çĕклĕн хăвăн ыр ятна.

Сан пурнăçу кăткăсланса кайсан та,
Чун-чĕрӳпе Турра кăна ĕнен.
Вĕренӳпе пит палăрса тăрсан та,
Унпа виçеллĕ усă кур куллен.

Кирек мĕнле лару-тăру çитсен те,
Иккĕленмесĕрех Ăна тăнла.
Сана халь кирлĕ мар-ха тĕрлĕенлĕх,
Эппин, Унпа кăна эс çывăхлан.

Ăс-хакăлăм çӳлти шайра тесе,
Хăпартланса кайса ан сик, тархасшăн,

Ыр куран, Тураран пит шикленсен,
Усал вăйран хăпмашкăн мел тупсассăн.

Çак майсемпе кăна хăвна ху упрăн,
Çак майсемпе кăна телейлĕ пулăн.
Çылăхсенчен ӳт-пӳ тасалнăçем,
Тин куран Унпала пĕрле илем.

Ăна хисеплесе пуççапнă май,
Услам илес пирки те эс ан ман.
Чи малтанхи пайталлă ĕçĕн пайĕ
Сан аллунтан Ун патнелле çеç кайтăр.

Вара хуçалăху шав пуянланĕ:
Вăл тулĕ тĕрлĕ çимĕç-пурлăхпа,
Çĕн эрехпе те тутлă симпылпа,
Иртен-çӳрен ун чух сана ăмсанĕ.

Кăлтăкусемшĕн, ывăлăм, хăш чух
Айăпласассăн Турă, эс ан тарăх.
Мĕн пӳрнине кăна чăтма вăй пух,
Тӳрре тухма, пĕлетĕп, кирлĕ мар-ха.

Мĕн-ма тесессĕн, Турă йăлт курать,
Кама савать вăл — пĕр çавна хурлать.
Юратнă ывăлне пĕртен-пĕр ашшĕ
Ыр тăвассишĕн вăрçнă пек ачашшăн.

Киленĕç куракан маттур этемĕн
Ăс-хакăлĕ чăрмавсăр ӳснĕçемĕн,
Сисмесĕрех вăй-халĕ хушăнать,
Кайран чун-чĕмĕ те пуянланать.

Ун чух ăс-тăн нимпе те танлашаймĕ,
Вăл хаклă пулĕ ылтăн-кĕмĕлрен.
Ăна хăй аллине илес текен,
Мулне шеллемесен те, туянаймĕ.

Унпа танлашаймасть алмаз-ахах.
Ăс çукраххи тем те пĕр хăтлансан та,
Ĕмĕтленни те пулĕ кăлăхах,
Пач сӳнĕ умĕнче ултавлă шанчăк.

(Усал-тĕсел те хирĕç тăраймасть,
Çут чăнлăхпа, ăспа тавлашаймасть.
Такамшăн та ку — ĕмĕр пулнă паллă:
Пĕлӳ тӳрккеслĕхрен хăватлă, аслă).

Ăс-хакăлăн ыр енĕ пит чылай,
Çынсемшĕн сӳнмĕ унăн ырă хĕмĕ.
Пĕр аллипе пиллет вăл вăрăм ĕмĕр,
Тепри парать пуянлăх, чап пĕрмай.

(Тĕрĕслĕхпе пит туслă пулнăран,
Ăна хаклать вăл кăткăс пурнăçра.
Саккунлăхпа ыркăмăллăх ун майлă,
Вĕсемпеле те пурăнать пĕртанлăн).

Ăс-хакăл çулĕ евĕк, пархатарлă,
Унпа эс киленсе утма пултарăн.
Кашни сукмакĕ тăнăçлăх сунать,
Малашлăха чунтан савма хушать.

Вăл — пурнăç йывăçĕ. Эппин, ешертĕр,
Çынсен пĕлӳлĕхне хăват парса.
Ăна упракансем, хавхаланса,
Киленӳре ыр курччăр, килĕштерччĕр!

Аслăлăха тĕпе хурса кăна,
Тăван çĕре тума пултарнă Турă.
Çӳл тӳпепе хупăрласа, ăна
Каланă: халĕ ыррăн-сыввăн пурăн.

Ун ăсăпе çеç тĕпсĕр уçлăхра
Хăп-хăмăр пĕлĕтсем пуçтарăнаççĕ.

2. Заказ № 810.

34500-гу
Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА

Çĕр кăкăрне, пĕр Вăл çеç хушнăран,
Çут сывлăмпа ирех çăвăнтараççĕ.

Эс, ывăлăм, чухла пĕлӳ вăйне,
Сан куçусем ăна пĕрмай сăначчăр.
Чипер шухăшусем чунра упранччăр,
Куллен-кун савччăр тĕрĕслĕх çулне.

Вара сан пурнăçу шав илемленĕ,
Ăс-хакăл çимĕçне активнĕрен.
Пăрăнманнишĕнех тĕрĕслĕхрен,
Ят-сумлăху пит хăвăрт çирĕпленĕ.

Ун чух хăв палăртнă çул-йĕрпеле
Ним хăрамасăр, такăнмасăр утăн.
Чун кĕтнине каярахпа кĕç тупăн,
Вăл пулĕ нихăçан сӳнми телей.

Ĕшеннĕ хыççăн çывăрма выртсассăн,
Усалсенчен пĕрре те хăрамасăр,
Йăпанăн ăшă тĕлĕксем курса,
Çӳлти Турра ыр касшăн тав туса.

Сана сиен кӳресчĕ-ха тесе,
Ултавçă хăратма хăйса пăхсассăн,
Эс пурăнăн инкек-синкек курмасăр,
Ним пулман пек, Турра çеç ĕненсе.

Мĕн-ма тесессĕн, Вăл кăна ăшпиллĕн
Сан çутă шанчăкна сыхлать куллен.
Хăтăлнăçем сивлек синкерлĕхрен,
Ун ячĕпе пурнатăн сумлăн, пиллĕн.

Кам çăлăнăç ыйтать, эс çав çынна
Турткаланмасăр пулăшсам, тархасшăн,
Пĕрре те ан шелле вăй-хăватна,
Аллу сан ывăнмĕ ыр ĕç тусассăн.

Тусу пĕр-пĕр тавар пама ыйтсассăн:
«Ыран килсессĕн, илĕн-ха»,— тесе,
Ăна ан хăвала тӳрккесленсе,
Мĕн пуррине унпа пайла сăмахсăр.

(Ыран мĕскер пулать, çавна пĕлместĕн,
Сăлтав та çук тусна çиллентермешкĕн).

Ан пултăрччĕ нихçан та вăрттăн шухăш,
Çумри чи хаклă юлташна пула.
Чун-чĕмĕ тап-таса, каварлăх çук ун,
Сана кăна вăл пурнăçра ырлать.

Вĕриленсе кайса, çынпа сăлтавсăр
Нихçан та, ывăлăм, эс ан тавлаш.
Вăл пурăнасшăн-çке пĕр харкашмасăр,
Унпа тӳлеккĕн, ыр сунса калаç.

Тӳрккес этем, ăнăçусем тусан та,
Ун çул-йĕрне, ыйтатăп, ан ăмсан-ха.
Усал ĕçе пула вăл йăнăшать,
Кайран хăех инкек-синкек курать.

Мĕн-ма тесессĕн, Турă умĕнче те
Киревсĕр ĕçшĕн тытмалла явап.
Тӳр кăмăллă этем курмасть асап,
Сăпайлăран пĕрмай Ун хӳттинче вăл.

Усалăн чыссăр чун-чĕри патне
Çитет-ха Аслă Туррăн сив ылханĕ.
Таса этемĕн хăтлă кил-çуртне
Пехилĕ Унăн, кайăк евĕр, анĕ.

Хайне хисеплемен çынсем пулсассăн,
Йĕкĕлтесе кулать Вăл вĕсенчен.
Ытла йăваш чунлисене курсассăн,
Парать пурне те ырлăхне куллен,

Ăсчахăн чапĕпе мухтавĕ куçĕ
Ачисемпе пĕрле ламран лама.
Айваннисен сăлтав çук савăнма,
Вĕсемшĕн аякра пуласлăх кунĕ.

## IV

Аçу тăн панине эсир, атьсем,
Кирек хăçан та питĕ тимлĕн итлĕр.
Чунтан каланă ăшă сăмахсем
Пурин патне те пĕр чăрмавсăр çитчĕр.

Мĕн-ма тесессĕн, эп сире куллен
Сăпай пулма та ăс пухма вĕрентрĕм.
Халалăмсем, чăнах та, тĕрлĕ енлĕ,
Ан ютшăнăр нихçан та вĕсенчен.

Ача чухне атте мана ытла та,
Ыр кăмăлне кура, хыт юрататчĕ.
Пĕртен-пĕр ывăлăм эс ман, тесе,
Аннем пурнатчĕ пит хисеплесе.

Атте мана куллен-кун ăс паратчĕ:
Пил сăмахне чĕрӳ ялан упратăр.
Халалсене нихçан та эс ан ман,
Вĕсем сана вăй парĕç пурăнма.

Тĕрĕслĕхе хисеплесен кăна,
Ăс-хакăлна пуянлатма пултарăн.
Пĕлӳ çăлкуçĕ питĕ анлă, тарăн,
Асра тыт, ывăлăм, ялан çакна.

Çут чăнлăха ан ман — сана вăл сыхлĕ,
Ăна хавхаланса чунтан юрат.
Унпа кăна тупатăн эс хăват,
Унпа кăна пурнатăн ыррăн-сыввăн.

Ăс-хакăл витĕмĕ кирек хăçан та
Малтан мала çынна ертсе пырать.
Пĕлӳ пухсассăн, сӳнмĕ çутă шанчăк,
Сана вăй парĕ вăл çеç пурнăçра.

Ăна мăнаçланса мухта, хакла,
Вара вăл çĕклĕ ят-сумна ялан.
Ăс-хакăлпа хастарлăхна ӳстерĕн,
Йывăрлăхра чăрмавсене çĕнтерĕн.

Пĕрмай илĕртекен пĕлӳ çăлкуçĕ,
Хĕвелĕн хĕмĕпе çиçсе, çул уçĕ.
Ун чух пуçкăшăлĕ пулать санра —
Телей те ыр куран малашлăхра.

Тăнла эс, ывăлăм, ман сăмаха,
Ан пултăрччĕ вăл саншăн кăлăхах.
Ун чух çут ĕмĕтӳ йăлт пурнăçланĕ,
Пурнас кунсен çул-йĕрĕ вăрăмланĕ.

Сана эп чăнлăхшăн, çине тăрса,
Вăй шеллемесĕр, кĕрешме вĕрентĕп.
Хăвна çеç пӳрнĕ сукмака шанса,
Унпа эс тӳррĕн пырасса ĕненĕп.

Малтан мала хăюллăн утнăçемĕн,
Ун чух сана никам та хĕсĕрлеймĕ.
Ĕшеннине манса кайса чупсан,
Шанатăп: такăнмастăн-ха нихçан.

Халалăмсем — ăс-хакăл шевлисем,
Çут пурнăçăн сӳнми хĕлхемĕсем.
Эс вĕсене асра тыт питĕ çирĕп,
Вара тин пуçлăн ыр курма каç-ирĕн.

Ултавçăсен сукмакĕ пултăр ют,
Пĕртен-пĕр тӳрĕ çулпала çеç ут.

Усал çынсем сана пит илĕртсессĕн,
Вĕсемпеле нихçан ан килĕш эсĕ.

Суялăхăн ытамĕнче тупаймăн
Хăвна тивĕçтерен çут чăнлăха.
Эппин, унран хăпмашкăн тăрăш-ха,
Шуçлак çулпа пĕр шухăшсăр утаймăн.

Мĕн-ма тесен, хаяр çынсем каварлăн
Тĕрĕслĕхе пӳлесшĕн, хур тăвасшăн.
Вĕсен пĕр ĕмĕт пур, вăл пит хура:
Тӳр кăмăллисене путлантарас.

Вĕсен ĕмĕчĕсем пит иртĕхӳллĕ:
Эрех вăрлас, çын çăкăрне çиес,
Саккунлăха куллен-кун хирĕçлес,
Курар-ха ырлăхне паян е ӳлĕм.

Пач урăхла таса çынсен кунçулĕ:
Ĕç-хĕлĕ, сар хĕвел пек, ырă, çӳллĕ.
Халсăррине ир пуçласа каçчен
Пиллеççĕ ăс хăйсем ӳркенменрен.

Саккунлăха пĕрмай хирĕçлекенĕн
Шăпи ултавлă та ытла пĕр енлĕ.
Тĕттĕмлĕхреirттерĕ ĕмĕрне,
Тĕл пулĕ сакăлта çине-çинех.

Тăнла эс, ывăлăм, сăмахсене,
Асу сан çивĕчлентĕр ирĕн-каçăн.
Аша хывсассăн ман халалсене,
Чуну-чĕмӳ ыр курĕ, тупĕ канăç.

Сăпайлăхпа куçсен таса хĕмне
Нимле хура вăйсем те ан варлаччăр.
Чи хаклă ахах евĕр, чун тĕпне
Каларăшсем черетленсе вырнаçчăр.

Мĕн-ма тесен, ман халалсем саккун пек,
Сан тивĕ пăхăнмашкăн вĕсене.
Итлекене вăл ырлăх-сывлăх сунĕ,
Кăткăслăхран хăтарĕ кулленех.

Çапах та пуринчен те ытларах
Чи хаклине — хăв чĕрӳне упра.
Вăл хăй кăна, ав, иксĕлми çăлкуç пек,
Чăрмавлăха сирсе, умра çул уçĕ.

Суялăха нихçан та эс ан йышăн,
Ăна сивле, мĕнпур вăйна пухса.
Чее çын шухăшне пĕлме пит йывăр,
Çавах унран ан кай-ха пăрăнса.

Хĕм сапчăр таврана сан куçусем,
Умри çула хĕрхӳллĕн ан тинкерччĕр.
Куç харшисем — курак çуначĕсем,
Тӳрĕлĕхе савса, вĕçме çĕкленччĕр.

Умри сукмак ан пултăр сакăлталлă,
Ăна мĕнпур енчен тĕпче, сăна.
Вара, шанса умри пуласлăхна,
Ун тăрăх ут малтан мала хастарлăн.

Ансат çул-йĕрĕсем пит илĕртсессĕн,
Сылтăмалла ан пăрăн васкаса.
Ан шан сулахайра ыр курасса,
Тем тĕрлĕ илĕртӳлĕхрен хăп эсĕ.

(Мĕн-ма тесессĕн, сылтăмри çула
Асăрхасах тăрать-çке Аслă Турă.
Сулахайри ансат сукмакпала
Утсассăн, яланах инкек çеç тупăн.

Шăп çавăнпа та Вăл сана тӳп-тӳрĕ
Пĕртен-пĕр çул-йĕрпе кăна утма

Вăй-хал паратъ. Шăпу çавна çеç пӳрнĕ.
Эппин, вĕрен çак чăнлăха савма).

## V

Эс, ывăлăм, шута хур чăнлăха
Эп вĕрентни ан пултăрччĕ ахаль.
Сан шухăшу ман шухăшпа пĕрлештĕр,
Пĕр-пĕринпе куллен-кун килĕштерччĕр.

Сăваплăран сăваплă халала
Кирек хăçан та сан йышăнмаллах.
Мĕн калани чун-чĕрӳнте упрантăр.
(Чее хĕрарăм ан кăсăклантартăр).

Чăнах та, ун хитре тути-çăварĕ
Пĕр вĕçĕмсĕр симпыл çеç юхтарать.
Калаçăвĕ сана йăлт пăхăнтарĕ,
Çу пек, чĕлхи хăй майлă çавăрать.

Анчах çак йăпану иртсе кайсассăн,
Эс эрĕм çинĕ пек хăвна туян.
Е, икĕ енлĕ çивĕч хĕç амантнăн,
Халсăрланса кайса, аран утан.

Хĕрарăм урисем, шав чакнăçем,
Ăна сив вилĕм ытамне чĕнеççĕ.
Вара, тĕлли-паллисĕр утнăçем,
Кайран хăйнех чĕр тамăка тĕртеççĕ.

Шăпи ытла вылянчăк пулнăран
Ун пурнăçне нихçан та эс чухлаймăн.
Хăйне вăл ним пулман пек тытнăран,
Пытарăнчăк чунне те ăнкараймăн.

Шăп çавăнпа та эсĕр, ачамсем,
Ман сăмаха чунтан ĕненĕр, итлĕр.

Туйсах тăратăп-ха: пурăннăçем
Вĕрентĕвĕм сире пурне те кирлĕ.

Илĕртекен хĕрарăм çулĕпе
Сан сукмаку нихçан та ан пĕрлештĕр.
Ан кăсăклан-ха ун алăкĕпе,
Ан кӣлĕш-ха эс ун пӳртне кĕмешкĕн.

Енчен те шут тытсах е ăнсăртран
Çав илĕртӳллĕ çурт ăшне лексессĕн,
Унта асапланса тертленĕн эсĕ,
Унтах хастарлăху та чакĕ сан.

Вăй-халупа, таса кăмăлупа
Санран кулакансем çеç усă курĕç.
Тар юхтарса пуçтарнă пурлăхпа
Ху мар, пач ют çынсем тивлетлĕх тупĕç.

Вара ӳтӳ-пĕвӳ имшерленсен,
Выçăхнипе йăлт аптраса çитсен,
Тин ăнланма пуçлатăн питĕ лайăх,
Эс йăнăшнă иккен: кунта — чуралăх.

Тарăхнипе хăвна вăрçма пуçлан:
«Çын сăмахне мĕскершĕн тăнламарăм,
Чĕрем ăс панине ма йышăнмарĕ,
Суйларăм мĕншĕн-ха ансат çула?

Хама ыр тăвас тенĕ туссене
Мĕскершĕн вăхăтра эп итлемерĕм?
Чи ырă вĕрентӳçĕсен пилне,
Ăс-хакăлне сăлтавсăр ма тиркерĕм?

Шăп çавăпа та эпĕ çак терте
Ултавлă йăпанушăнах çаклантăм.
Çын хушшинче чакать хисепĕм те.
Вараланма пуçлать ак ырă ятăм!»

Чӗркӗмӗл пек шыва ӑсма хушаҫҫӗ
Хӑв туса лартнӑ ҫӳллӗ валакран.
Пускил патне пӗрмай чупаканран
Ҫынсем йӗкӗлтесе кӑна кулаҫҫӗ.

Эппин, ҫӑлкуҫӗ шӑнкӑртаттӑр, юхтӑр,
Таса илемӗпе шав илӗртсе,
Ун юхӑмӗ урамсене ан тухтӑр,
Тата ан лартӑрччӗ йӑлтах типсе.

Мӗн-ма тесессӗн, ҫак пуянлӑхпа
Пӗр эсӗ ҫеҫ хуҫа пулса тӑратӑн.
Ют ҫын кӑсӑклансассӑн та унпа,
Ӑна куҫ шӑрҫи евӗрех упратӑн.

Чӗркӗмӗл пек юхан сив шыв, ҫӑлкуҫӗ —
Вӑл эс юратнӑ савнӑ арӑму.
Унпа тупан киленӗҫ, ырлӑх, мул,
Ӑна пула умри ҫул-йӗрӗ уҫӑ.

•

Вӑл, пӑлан евӗр, питӗ килӗшӳллӗ,
Ту качаки пек, вирхӗнет хитре.
Ун кӑкӑрӗ сипетлӗ, эсӗ ӳлӗм
Ыр курӑн-ха ҫӑтмах-киленӗҫре.

Эппин, кала-ха, ывӑлӑм, тархасшӑн,
Кирлех-ши ют хӗрарӑм шырама,
Кирлех-ши сан унпа ыталашма,
Енчен те мӑшӑру ҫумра пулсассӑн?

Кашни этемӗн кӑткӑс ҫул-йӗрне
Пӗртен-пӗр Турӑ шав Ҫӳлтен сӑнать-ҫке.
Ҫитӗнӗвне е ӑнӑҫман ӗҫне,
Хӑй ӑсӗпе курса, ялан хаклать-ҫке.

Саккунсӑрлӑхӑн серепи каварлӑ,
Унпа туслашнӑ ҫыншӑн пит юнавлӑ.

Енчен те вăл çав ытама лексен,
Касаматри пек пурăнать иккен.

Хăй ăссăр пулнăшăн инкек тӳсет,
Каярахпа кунçулĕ лап сӳнет.
Мĕн-ма тесессĕн, пурăннă тĕллевсĕр,
Халалсене пачах та ĕненмесĕр.

VI

Тăван е çывăх çын хутне кĕрсессĕн,
Ана йывăрлăхра шав пулăшсан,
Ыр тунине вăл манмĕ-ха, тесен те,
Çапах та, ывăлăм, çакна ăнлан.

Хăв сăмахна пула кĕç çакланатăн
Малтан курса тăман серепене.
Яваплăхна çав çынпала пайлатăн,
Пайлатăн савнăçне те хурлăхне.

Эс, ывăлăм, ту эпĕ хушнă пек,
Сана терт кăтартать çав серепе.
Эппин, çав пĕлĕшӳ патне кайсассăн,
Ана кала: тинех пĕрле утмастăп.

Ним пулман пек ан пурăн-ха, ан çывăр,
Нуша курма пулать ыйхăласан.
Инкекĕ юнашар çӳрет, вăл çывăх,
Унран хăпма çул тупмаллах халь сан.

Ту качаки танатана курсассăн,
Шыранă евĕр çăлăнăç пĕччен,
Е кайăк хăтăлнăн сереперен,
Эс ху та тар-ха сехметрен, тархасшăн.

Сăна-ха кăткă пурнăçне, ӳркевçĕ,
Пĕрваскамасăр ĕç-хĕлке тĕпче.

Кашни хусканăвĕ епле тĕллевлĕ,
Епле вăл пурăнать çак çĕр çинче.

Ун пуçлăхĕ пулман, пулас та çук,
Ăна хăратаймасть тӳре таврашĕ.
Вăл кирлĕ-кирлĕмаршăнах аташмĕ,
Умри çулне пӳлеймĕ ăçтиçук.

Çавах та, апат-çимĕç хатĕрлет,
Пӳртне-çуртне йăлтах хăй тирпейлет.
Çулла, хĕлле те пурăнать нушасăр,
Мĕн-ма тесен, ĕçлет ялан канмасăр.

(Пыл хурчĕн пурнăçне те эс сăна,
Вĕçет те вăй хурать яра куна.
Ун сиплĕ çимĕçне мухтать патша та,
Кăсăклантарĕ вăл ахаль çынна та).

Ӳркевçĕ, эп ыйтасшăн-ха санран,
Эс хăçанччен хăв ыйхуна тăсасшăн,
Тӳшек çинче шав сарăлса выртасшăн,
Ĕçе тухма шутлатăн-и паян?

Эп ывăнтăм-ха, халĕ, ак, канатăп,
Кăшт тĕлĕрсе илсен, ĕçе тухатăп.
Шăп çакăн евĕр аллуна уссан,
Пуш ĕмĕтпе хăвна шав йăпатсан,

Сисместĕн те, иртен-çӳрен пек, хăвăрт
Килне кĕç кĕрĕ юрлăх, туйăн хăв та.
Вăл хуçаланĕ, вăрă-хурах пек,
Чухăнлăхра вара тертленĕн тек.

(Енчен те ĕçшĕн хыпăнса ӳксессĕн,
Ăна часрах вĕçлесчĕ-ха тесессĕн,
Вара хăрамăн эсĕ нушаран,
Нихçан та татăк тăмăн çăкăртан).

Чее этемĕн пурнăçĕ ултавлă,
Шап-шур тĕсе ялан вăл хуратать.
Калаçăвĕ шăв-шавлă та ытарлă,
Суялăхĕ çынна ataштарать.

Куçне-пуçне пĕлет-ха вылятма,
Урисемпе темтепĕр кăтартма.
Аллисемпе хитрен хăлаçланмашкăн,
Итлекене хăй майлă çавăрмашкăн.

Анчах та унăн чĕринче упранĕç
Киревсĕр те каварлă шухăшсем.
Ăна пула хирĕçӳсем çуралĕç,
Çухатĕç канăçне юлташĕсем.

Çапах та тавăру ултавçăна
Кĕтмен çĕртен пырса çапать сасартăк.
Вара эмел те çăлаймасть ăна,
Çапла вĕçленĕ пурнăçĕ усалăн.

Çынсен тем тĕрлĕ кăлтăкĕ чылай:
Çӳлти Турра хытах çиллентереççĕ.
Эп улттăшне хам асăрханă май,
Сире, аса илсе, йăлтах пĕлтерĕп.

Вĕсем çаксем: мăнкăмăллă куççем,
Ултавлă та суеçĕ чĕлхесем.
Çынсен юнне пĕрре те шеллемесĕр
Юхтаракан алсем те пит киревсĕр.

Усал шухăшсемпе пурăнаканăн
Пĕр хăйĕншĕн кăна тапан чĕри.
Е вăрă-хураха пуççапаканăн
Мала пит хăвăрттăн чупать ури.

Пĕр айăпсăр çынна элеклекенĕн
Чĕри, сăна-ха, тикĕт пек, хура.

Чĕлхи чараксăр. Вăл ура хурать.
Аркатĕ туслăха, ăна хĕрхенмĕ.

Упра эс, ывăлăм, халалсене,
Сана аçун пехилĕ кирлĕ пулĕ.
Ан ман аннӳ пĕрмай вĕрентнине,
Вăл чунунта сыхлантăр, хаклă мул пек.

Халал сăмахĕсем чун тĕпĕнче,
Йывăрлăхсем пулсассăн та, упранччăр.
Тем тĕрлĕ шухăшсем капланнăçем,
Сана вĕсем усал вăйран сыхлаччăр.

Вĕсем çула тухсассăн пулăшаççĕ,
Вĕсем сыхлаççĕ, эс канма выртсан.
Халалăмсем, тӳшек çинчен тăрсан,
Тӳлеккĕн калаçаççĕ, ыр сунаççĕ.

Лампада евĕрех халалăмсем,
Канаш парса, чунра чĕртеççĕ çутă.
Ас-хакăла пуянлатса, вĕсем
Сĕнеççĕ: пурнăçра тĕллевлĕн утăр.

Вĕсем сана: пул пархатарлă, теççĕ,
Ан çывăхлан ăнман хĕрарăмпа.
Йăпăлтине те яланах сивлеççĕ,
Килĕштереймĕн эс нихçан унпа.

Пит ан ăмсан суя чиперлĕхе,
(Серепине ан лек шухăшламасăр).
Вĕрен курма чăн-чăн илемлĕхе,
Куç пăвакансенчен мел туп хăпмашкăн.

Ясар хĕрарăмпа çывăхлансассăн,
Арçын ялан тăрса юлать укçасăр.
Мĕн-ма тесен, таса чуна пĕрмай
Вăл пултарать хăй майлă çавăрма.

Хĕве хупма пулать-и çулăма,
Ӳте-пĕве пачах суранлатмасăр?
Çири тума май пур-и сыхлама,
Енчен ăна вут ăшĕнче тытсассăн?

Вĕри кăварăн çиййĕпе утмашкăн
Мел тупăн-и-ха эс çара уран?
Нуша курмасăр е пиçсе каймасăр
Тухма пултарăн-и çав тамăкран?

Шăп çакăн пек, тус-юлташун килне
Кĕрсе кайсассăн, унăн арăмне
Хăв майлă çавăрма эс хăтлансассăн,
Кайран явап тытма тӳр килĕ санăн.

Выçсан е кăмăлне çĕклес тесе,
Çын пурлăхне шав хапсăнать-ха вăрă,
Кукăр алли ытла та унăн йăрă,
Пуясшăн тăрăшать вăл иртĕхсех.

Анчах çаратнă чух ярса тытсан,
Ун тĕрлĕ пурлăхне туртса илеççĕ,
Пур халăх умĕнче хытах хĕнеççĕ
Пĕр шеллемесĕр, намăс кăтартса.

Кам аскăн ĕçшĕн пит хыпса çунать,
Ясар хĕрарăма хыт кăмăллать,
Çав çыннăн пĕчĕк-ха ăс-хакăл шайĕ,
Чунне варланăçем, ун ӳсĕ айăп.

Хăй шăпинчен ниçта та вăл тараймĕ,
Тӳр килĕ пĕрмаях патак çиме.
Çын хушшинче чысне-сумне тупаймĕ,
Мĕн пӳрнинчен май килмĕ ун иртме.

Мĕн-ма тесессĕн, курайманлăх вучĕ
Кĕвĕçӳпе пĕрле хутăшнăскер,

Ăна çунтарĕ шеллемесĕр, сучĕ
Арçыннăн пулĕ питĕ те тискер.

Айăпланаканни парне парсан та,
Пур çылăхне йăлтах манма ыйтсан та,
Этем сăнне-чысне çухатнăран,
Ясар çынна каçармĕç нихăçан.

## VII

Пил сăмахне эс, ывăлăм, упра,
Вĕрентĕвĕм сан чунунта сыхлантăр.
(Пуçа тайса итле Çӳлти Турра,
Вара хăраса тăмăн никамран та).

Çут тĕнчере куллен пурăннăçем,
Халалăмсем, саккун пек, саншăн пулĕç,
Куç шăрçи евĕр, ыррăн-сыввăн юлĕç,
Аяккалла ан пăрăн вĕсенчен.

Пил сăмахне çĕррӳ çине çырсам,
Вулаччăр-ха ăна скрижаль çинче те,
Çула тухсассăн е канма ларсан,
Унпа паллашчăр сан юлташусем те.

Тĕрĕслĕхе: «Эс манăн йăмăк!» — те,
Ăсна тăванупа çеç танлаштар-ха.
Ун чух çунатлă ырă ĕмĕте
Çут тĕнчере пурнăçлама пултарăн.

Ăс-хакăлпа çут чăнлăх яланах
Ăнман хĕрарăмран хăпма вăй парĕç.
Е илемпе сăхлантаракана
Санпа сăмахламашкăн чăрмантарĕç.

Тăван килте çапла пĕррехинче
Лараттăм шухăша кайса пĕччен.

Кăшт тăрсанах чӳречерен сăнарăм,
Кĕтмен çĕртен, ак, эп мĕн асăрхарăм:

Ман кантăк умĕнче яш каччăсем
Пăт-пат сăмахсемпе перкелешетчĕç.
Тата пĕр йĕкĕт васкаса иртетчĕ,
Ăна пĕлместчĕç пуль тăракансем.

Пĕрре пăхсах-ха паллă: вăл — айванçă,
Нимле ĕçе хăй тĕллĕн туманскер.
Площаделле кĕтес енчен каçатчĕ,
Аçта каяссине чухлаканскер.

Каç пулнăччĕ. Хĕвелĕн вутлă хĕмĕ
Сапмастчĕ таврана хăй çутине.
Шутларăм: еплерех-ши шухăш-ĕмĕт
Çитернĕ йĕкĕте ман çурт тĕлнех?

Кĕç ăна хирĕç тухрĕ пĕр хĕрарăм,
Чипер тумланнă, куçĕсем ясар.
Хитре хусканăвĕ çынна астарĕ,
Сăмахĕсем ытла та ун япшар.

Шăв-шавлă пурнăçа иленнĕскер,
Кун каçипе çитет-ха вăл таçта та,
Пĕр хăйне çеç тытса чарайманскер,
Кил-çуртĕнче ларма пĕлмест нихçан та.

Е урамра, е площадьре çӳрет,
Е кĕтесре арçынсене кĕтет.
Ултавлă, ăшă кулăллă каварĕ
Кирек кама хăй майлă çавăрттарĕ.

Хĕрарăм каччăна кĕç тытса чарчĕ,
Ăна пуçларĕ хыттăн чуптума:
Пачах та пĕлменскер намăсланма,
Ним пулман пек пакăлтатма пуçларĕ:

«Паян уяв. Ӑна палӑртмалла.
Эп, вылькӑха пусса, пӗччен чӳк турӑм.
Ҫакна, пӳрте кӗрсен, йӑлтах хӑв курӑн.
Эппин, сан манпа ҫеҫ халь пулмалла.

Ма пытарас: эп питӗ тунсӑхларӑм,
Сана ҫеҫ кӗтрӗм питӗ тӗмсӗлсе.
Чипер сӑнна умра курас тесе,
Канӑҫӑма сисмесӗрех ҫухатрӑм.

Пӳрт-суртӑма тасатрӑм, тирпейлерӗм,
Стена ҫинче вырнаҫрӗҫ кавирсем.
Тӳшек-ҫытарсене те илемлетрӗм,
Египет пусмипе эрешлесе.

Алоэпе корица шӗвекне те,
Смирнан пит техӗмлӗ ыр шӑршине те,
Ҫывӑрмалли ман пӳлӗме кӗрсен,
Эс сывлӑн антӑхса та киленсе.

Кӗрсем, йӑпанӑпӑр пӗрле ирччен,
Манпа ыр курӑн, йӑлт ывӑнччен.
Сана эп ҫӗрӗпех хӗрӳн ыталӑп,
Таса юратӑва ачашшӑн парӑп.

Пире пӳртре никам та чӑрмантармӗ,
Мӗн-ма тесессӗн, эпӗ халь пӗччен.
Кил пуҫӗ — упӑшкам мана хӑварнӑ,
Паян, ыран-и — килмӗ инҫетрен.

Вӑл кӗмӗлне тултарчӗ те пӗр енчӗк
Каларӗ: эсӗ питӗ илӗртсен те,
Пулатӑп ют ҫӗрте. Мӗн тӑвӑн-ха?
Санпа тӗл пулӑп уйӑх тулнӑ каҫ».

Вӑл каччӑпа калаҫрӗ нумайччен,
Пуплевӗ пулчӗ унӑн ырӑ, ҫепӗҫ.

Çапла вара, чылай илӗртнӗçем,
Ăна хăй майлă çавăрчӗ веçех.

Пусас чух вăкăра пит илӗртеççӗ,
Унтан ăна тискеррӗн вӗлереççӗ.
(Сăнчăрласах тесен усал йытта,
Малтан апат пАраççӗ кăмăлтан).

Пăлан чупса тухать те вӗтлӗхрен
Ӳксе вилет — сунарçă пенӗрен.
Тин çеç-ха ирӗкречче ăмăрткайăк,
Тек вăл çӳлте вӗçеймӗ — сапă карнă.

Шăп çакăн пекчӗ çамрăк каччăн пурнăç,
Хӗрарăм аллинчен тухаймӗ урăх.
Вăл хăйӗн ӳт-пӗвне йăлт вАралать,
Таса чунне сутать те тӗп тăвать.

Эппин, ман пуплеве эсир, атьсем,
Нихçанхинчен те лайăхрах халь тăнлăр.
Пуçа кӗрсессӗн пăсăк шухăшсем,
Çак каччă евӗр, йăнăшсем ан тăвăр.

Ясар хӗрарăм питӗ илӗртсен те,
Май шырăр пăрăнма унран ялан.
Сукмакăр тӳрӗ пултăрччӗ, пӗр енлӗ,
Куллен-кун хаклăр çутă ăс-хала.

Мӗн-ма тесессӗн, аскăнланнăран
Çак çӗр çинче чылай арçын аманнă.
Хăйсен ыр кун-çулне нумайăш татнă,
Кам иртӗхет, çав курӗ терт ялан.

Хӗрарăмăн астармăш, хăтлă çурчӗ
Танлашӗ чӗрӗ тамăкпа кăна.
Унта пулсан, кайран асап çеç курăн,
Е çухатма пултарăн пурнăçна.

## VIII

Ытла та ăслă шухăш йыхăрать-ши,
Пĕлӳ хăй сассине шав хăпартать-ши?
Тăраççĕ çӳллĕ вырăнта вĕсем,
Çул юппинче янраççĕ чĕнӳсем,

Йыхравлă сас хула çывăхĕнче,
Эрешлĕ ун хапхийĕ умĕнче,
Янрать, янрать-ха питĕ тархасланăн,
Ана илтмешкĕн йăлт тӳр килĕ санăн:

«Этемĕн ывăл-хĕрĕсем, ыйтатăп,
Сире пит йăлăнатăп, тархаслатăп,
Чĕнӳллĕ ман сасса тăнланăçем,
Шав çивĕчленччĕр сирĕн шухăшсем.

Ăс-хакăл çитменни хăй пĕлĕвне,
Мана итленĕçем, пĕрмай ӳстерĕ.
Чухлайманни те юлмĕ айккине,
Вĕреннĕçем айванлăхне пĕтерĕ.

Каланине йăлт итлĕр, ма тесессĕн,
Эп кирлĕ шухăшсем çеç пĕлтересшĕн.
Чĕрем çуратнă ыр каларăшсем —
Çут чăнлăхăн таса хĕлхемĕсем.

Ман тивĕçĕм — тĕрĕслĕхе хăюллăн
Куллен-кун сыхласси те сарасси.
Тĕп ĕçĕн вырăнĕнче ĕмĕр юлĕ
Ултавлăха яр-уççăн сивлесси.

Сăмахăмсем тӳрĕлĕхе саваççĕ,
Çук вĕсенче чееленни, суйни.
Тасалнăн пылчăк-юшкăнран кашни,
Çут кĕмĕл пек, çиçсе йăлтăртатаççĕ.

Вĕсем пит уçăмлă — ăнланаканшăн,
Вĕсем, кăвак тӳпе пек, тап-таса.
Ăс-хакăла мала çеç хураканшăн
Ялан тăрайччăр, çул-йĕр кăтартса.

Çут кĕмĕлшĕн пуçăрсене ан ватăр,
Ăс панине кăна шав йышăнсамăр.
Вĕрентĕвĕм, ăнланăр-ха тӳрех,
Суйланă ылтăнран та кирлĕрех.

Мĕн-ма тесен, хĕвел пекех, ăс-хакăл
Тем тĕрлĕ ахахран та ĕмĕр хаклă.
Унпа нимле эреш танлашаймасть,
Нимле усал хăват тупăшаймасть.

Эп — ăслăлăх. Пĕлӳ çĕршывĕнче
Пурне те лайăх ăнланса пурнатăп.
Йĕркеллĕ шухăшсен ытамĕнче
Пĕртен-пĕр чăнлăх çул-йĕрне шыратăп.

Пĕр эп кăна тĕрĕслĕхе упратăп,
Ĕçе пуçăниччен шав канашлатăп.
Ăс-хакăлăм тĕллевлĕ пулнăран,
Вăй-халăм иксĕлмест ман нихăçан.

Манпа туслашнăран çак çĕр çинче
Чылайăшĕ патша пулса пурнаççĕ.
Çут чăнлăха çеç сума сунăçем,
Куллен-кун çĕнĕ саккунсем çыраççĕ.

Мана аса илсе çеç, хуçасем
Çурт-йĕр çĕклеççĕ, пурлăх пуçтараççĕ.
Ят-сумлă улпутсем те тӳресем,
Айăплисем пулсассăн, суд тăваççĕ.

Хама кăмăллакан çынсемшĕн эпĕ
Шеллемĕп тап-таса юратăва.

Мана шыракансен ӳсет хисепĕ,
Вĕсем те тивĕçлĕ мĕнпур тава.

Пуянлăхăм, мухтавăм пур-ха манăн,
Вĕсем иксĕлес çук-ха нихăçан та.
Мул хушăннă пек, ĕмĕр-ĕмĕрех
Упранĕ чăнлăхăм та кулленех.

Ăс çимĕçĕ çап-çутă ылтăнран та,
Суйланă кĕмĕлрен те хаклăрах.
Ман шухăш-кăмăлпа пайта кӳран та,
Тивлет тупатăн шавлă пурнăçра.

Çӳретĕп-ха тӳп-тӳрĕ çул-йĕрпе,
Пĕртен-пĕр аслă чăнлăха ырлатăп.
Тĕрĕслĕхе хӳтĕлекенсемпе
Кирек хăçан та ăшшăн сăмахлатăп.

Хама юратакан çынсен килне
Пит кирлĕ ырлăх-пурлăх çитеретĕп.
Телей сунатăп та эп кашнине,
Мул шеллемесĕр ят-сумне çĕклетĕп.

(Паян, ыран мĕскер пулассине
Пĕлсе-курса эп тăнăçемĕн лайăх,
Кив ĕмĕрте çухалнă кунсене
Манмастăп-ха, упратăп асăнмалăх).

Эп Аслă Турăпа çак çĕр çинче
Умри çула анлăлатмашкăн килнĕ.
Сĕм авалтан Унран кăна вăй илнĕ,
Хисеплесе Вăл тунă йĕркене.

Ун ячĕпе çул-йĕрĕм такăрланнă,
Мана Вăл чи малтан çунатлантарнă.
Çĕр чăмăрĕ çинче кун пуличчен,
Хĕвелĕ хăй хĕмне сапаличчен.

Вĕçĕ-хĕррисĕр уçлăх. Çăлтăрсем
Çĕре халь пур енчен те хупăрланă.
Пур шăнкăр-шăнкăр çут юханшывсем,
Эп вĕсенчен те маларах çуралнă.

Эп пуринчен те маларах çуралнă:
Çӳл тӳпене тусем çĕклениччен,
Вĕсем çине шур юрĕ ӳкиччен.
Кашни ӳкерчĕке савса сăнанă.

Çĕр чăмăрне туса хуриччен,
Çут тĕнчере тусан пуличченех.
Хир тăрăх утиччен Вăл пит мăнаçлăн,
Эп Унпала çӳренĕ пит хаваслăн.

Çĕре пĕр ункăпа çавăрнă майăн,
Пуçтарнă чух Вăл тĕрлĕ пĕлĕтсем,
Ун пултарулăхне хисеплесе,
Тĕпчерĕм пур ĕçе те питĕ лайăх.

Тӳпен виçесĕр анлăшне сарса,
Вĕсен чиккисене палăртнă чух та,
Шăв-шавлă тинĕссем валли те туххăм
Йĕри-тавра Вăл çырансем тусан,

Кирек мĕнле ĕçе пуçăнсанах,
Художник пулнă май, вĕçне те куртăм.
Илемлĕ куншăн тав туса Ăна,
Унпа пĕрле хавасланса йăл култăм.

Çĕр чăмăрĕ çинче хĕпĕртесе,
Савăнăçа çынсемпеле пайларăм.
Кунçул кашниййĕн халь хитре тесе,
Пурне те ăшшăн-ăшшăн саламларăм.

Эппин, атьсем, халь итлĕр-ха мана,
Анчах ан манăр нихăçан çакна:

Кам çулăм-йĕрĕмпе утать тирпейлĕн,
Çав тупĕ пурнăçра сӳнми рехетлĕх!

Халалăма шав тăнлăр-ха эсир,
Вара куратăр лăпкă, савăк ир.
Мĕн ĕмĕтленнĕ — çавăнтан ан чакăр,
Куллен-кун ӳстĕрччĕ сирте ăс-хакăл.

Канăçăма ăшпиллĕн кам сыхлать,
Эрешлĕ алăк патĕнче тăрать,
Кам ӳркенмесĕр маншăнах çĕкленĕ,
Çав çын ыр курĕ те киленĕ.

Мĕн-ма тесен, манпа тĕл пулакан
Хĕвеллĕ пурнăçа тупать ялан.
Пĕр уншăн нихăçан та чакмĕ пурлăх,
Ăна телей те савнăç парĕ Турă.

Мана хирĕçлекен, айăплакан
Чунне хăех амантĕ хĕрхенмесĕр.
Ăс-хакăла ытла курайманран,
Тӳр килĕ чыссăррăн пĕтме, вилмешкĕн».

IX

Пĕр хăй валли çеç Ăслăлăх çĕклерĕ,
Куçа илĕртекен илемлĕ çурт.
Юписене Вăл, вырнаçтарнă чух,
Васкавлăн çиччĕшне те эрешлерĕ.

Унтан пĕр ӳркенмесĕр выльăх пусрĕ:
Апат çиме какайĕ кирлĕ пулĕ.
Эрех пирки те Вăл манмарĕ-ха,
Ăна шывпа çеç хутăштарчĕ халь.

Кăшт тăрсанах, тарçисене пуçтарчĕ,
Пурне те урама кăларса ячĕ.

Лешсен, кăшт çӳлĕрех сăртсем çинчен,
Чĕнĕвĕсем янрарĕç, ак, кĕçех:

«Ăс-хакăл шайĕ камăн пĕчĕкрех,
Çав килтĕр пирĕн çывăха халех!
Ним чухлайман, тĕшмĕртеймен çынна та
Илемлĕ çурт патне пыма ыйтатпăр.

Астивĕр пирĕн ăшă çăкăра,
Ан тăрăр айккинче хăра-хăра.
Шывпа çеç хутăштарнă эрехе те
Эсир кашниййĕ пырсанах ĕçетĕр.

Айванлăха манмашкăн вăхăт çитрĕ,
Май пур чух пурăнар-ха ытлă-çитлĕ.
Ăс-тăн çитменлĕхне сивлемелле,
Ăна йăлтах, йăлтах пĕтермелле».

Анчах усал çынна вĕрентнипе
Хăвна валли, ак, чыссăрлăх тупатăн.
Киревсĕре пĕрмай тиркенипе
Таса ятна сисмесĕр варалатăн.

Ытла та ан питле-ха йĕксĕке:
Ун курайманлăхĕ ӳсме пултарĕ.
Вăрç ăслăрах çынна, ăна тирке,
Вăл çакăншăн сана чунтан мухтать çеç.

Ăсчах пулать тата та ăслăрах,
Енчен те эс ăна канаш парсассăн.
Вĕренекенĕн шухăш ытларах.
Пĕлӳшĕн, чăнлăхшăн çине тăрсассăн.

Ăс-тăн çул-йĕрĕ пуçланать ялан,
Енчен те Турăран эс хăрасассăн.
Сăвапçă сăмахне итлен пулсан,
Тӳрĕлĕхе тин ăнланма пуçлатăн.

Мĕн-ма тесен, пурнас кунсен хисепĕ
Ӳсме пултарĕ Вĕсене пула.
Шăп çавăнпа та систересшĕн эпĕ,
Вĕрентĕве пĕрмай хурсам мала.

Енчен сан, ывăлăм, ăс-хакăл шайĕ
Çӳлте пулсассăн та, ăна хаклаймăн.
Енчен те чăрсăр çын эс, пит пуçтах,
Пурне те тӳсме тивĕ хăвăнах.

(Суялăхпа хăйне хăй çĕклекен,
Хирте çил хыççăн чупакан пекех,
Вăл, кайăк вĕçнине сăнанăçемĕн,
Ыран ăçта пулассине пĕлеймĕ.

Мĕн-ма тесен, тĕллевлĕ çул-йĕрне
Шухăшламасăрах пăрахăçланă.
Пуçтарнă тин вăл иçĕм çырлине,
Хăй сачĕ вырăнне те ĕнтĕ маннă.

Утать халь пушхир тăрăх тăр-пĕччен,
Йĕри-тавра сап-сарă хăйăр, хăйăр...
Ĕçесчĕ сивĕ шыв чун каниччен,
Анчах ăна тупма май килмĕ хăвăрт).

Хĕрарăм, чĕлхине чарайманскер,
Сăлтавсăрах пĕрмай шавлаканскер,
Ассăрлăхпа ытла палăрнăран-ши,
Айванлăха кăна кăмăлласа-ши,

Ларать, ним пулман пек, пукан çинче,
Хăй пурнакан кив çурт çывăхĕнче.
Ун пӳрчĕ çӳллĕ вырăнта ларать те,
Шăп çавăнпа ăна курма пулать-ха.

Хĕрарăм тинкерсе пăхать, пăхать,
Кун кaçипе тем тĕрлĕ çын курать.

Вăл кашнине ăшпиллĕн, çĕкленӳллĕн
Чĕнет-ха, ун сасси те илĕртӳллĕ:

«Кам айванрах, çав килтĕр ман пата!
Вăл канăç, лăпкăлăх тупать кунта».
Ним чухлайман çынна та васкамасăр
Калать, ан ирттĕр тенĕн тăнламасăр:

«Вăрланă сиплĕ шыв тути пылак,
Пытарнă шурă çăкăр та çаплах.
Эппин, кашнийĕшне эс халь тутан-ха,
Ман çуртăм тĕлĕнчен ахаль ан кай-ха».

Иртен-çӳрен сакна шута илмест,
Шалта мĕскер пур, вăл ăна пĕлмест.
Ку çуртăн ăшĕнче инкек пуçламăш,
Унта кĕрсе кайсан — тупатăн тамăк.

(Самант та чарăнса ан тăр кунта,
Часрах тарсамччĕ çакă вырăнтан.
Хĕрарăм куçĕнчен пăхма ан хăй эс,
Çулу та улшăнма пултарĕ хăвăрт.

Çапла майпа çеç ют çĕртен хăпайăн,
Ун çăлĕнчен ĕçсе тумастăн айăп.
Вара телейлĕ пулĕ ĕмĕрӳ,
Куллен-кун пурнăçланĕ ĕмĕтӳ).

## X

1

Аслă ывăл ашшĕне
Савĕ, савăнтарĕ.
Айванни хăй амăшне
Ĕмĕр кулянтарĕ.

2

Тĕрĕсмарпа пуçтарнă кĕмĕл
Çынна нихçан та ыр кӳмен.
Çут чăнлăхăн săвапла хĕмĕ
Ялан хăтарĕ вилĕмрен.

3

Таса çынна хĕн кăтартма
Памасть-ха Аслă Турă ирĕк.
Выçкуç хăйсан унран кулма,
Ана Вăл айăплать пит çирĕп.

4

Кахалăн ĕçĕпе
Хуçалăх юхăнать.
Хастар çын вăйĕпе
Куллен мул пухăнать.

5

Аслă ывăл, çу çитсен,
Вăхăтра тырпул пухать.
Кахалли ӳркеннĕрен
Маччана сурса выртать.

6

Тӳрĕ çыннăн пиллĕ çулĕ,
Килĕшӳ шырать куллен.
Саккуна хирĕçлекен
Чăнлăха вăйпа шав пӳлĕ.

7

Таса çыннăн хушамачĕ
Халăх асĕнче упранĕ.
Усаллин йĕрĕнчĕк ячĕ
Манăç çырминче пăчланĕ.

8

Асчах чун-чĕринче ялан
Çынна савма чĕнен халал.
Айванăн çулĕ урăхла:
Кирек хăçан чакать ракла.

9

Таса туйăмлă çынсен
Çулĕ-йĕрĕ пĕр сиенсĕр.
Урăхла икпитлисен —
Пурнăçĕ ялан ыр енсĕр.

10

Куç-пуçне вылятакан
Эрлĕк шухăшсем çуратĕ.
Ыр курайман тăмсайран,
Ма тесен, ун ăсĕ катăк.

11

Тӳрĕ çыннăн пурнăç çулĕ,
Сар хĕвел пек, йăлтăрать.
Усалли пĕр хăйшĕн çунĕ,
Килĕштерĕ пусмăра.

12

Курайманлăх харкашу çуратĕ:
Ун чухне шăртланчăк çын усал.
Юрату çеç пурнăçра хăватлă,
Такама та вăл пиллет вăй-хал.

13

Икĕенлĕх çынсенче ялан:
Асхаллин тĕллевлĕ, пиллĕ çулĕ.
Айванни пурнасшăн урăхла,
Çавăнпа та астивет вăл хулă.

14

Ăсчах пӗлӳлӗхе упрать:
Пакăлтатмасть вăл урлă-пирлӗ.
Тăмсай, чӗлхи пит вăрăмран,
Чылай чухне тупать терт, вилӗм.

15

Куç умӗнчех пуянăн пурлăх —
Вăл куллен-кун тӗрекленен хула.
Ӗçлекеннин шăпи пач урăхла —
Пӗрмай ун пурнăçӗ пит юрлă.

16

Тӳркăмăллă ӗçченӗн
Чун-чӗринче упранӗ çынлăх.
Ялан хӗсӗрлекенӗн
Анăçура та пулӗ çылăх.

17

Ăсна упран пулсан —
Кунçул тӗллевлӗ сан.
Кам ӳкӗте кӗмест,
Çавна телей кӗтмест.

18

Чунунта пулсассăн курайманлăх —
Сăмахусенче пулать ултавлăх.
Е элек кăна саран пулсан,
Эс çынсемшӗн пӗрмаях айван.

19

Чӗлхӳн чаракӗ пулмасан,
Кӗретӗн çылăха сисмесӗр.
Ăсчах, сăмах вăйне туйса,
Пурнать тӗллевлӗ, шар тӳсмесӗр.

20

Тӳр ҫыннӑн пиллесе калан сӑмахӗ,
Суйланӑ кемӗл пек, ялан.
Санпа юнашарах пурнан йӑх-яхӑн
Чун-чӗм нихҫан тасӑ пулман.

21

Таса кӑмӑллисен ӑс-халӗ
Хӑтарӗ ҫынсене хӗнре.
Ӑс ҫитменни ҫут тӗнчерен
Ыр ятсӑр, сумсӑрах ҫухалӗ.

22

**Тивлечӗ Ҫӳлти Туррӑн**
**Чуна пуянлататъ.**
**Унпа эс хурлӑх курмӑн —**
**Вӑл пур хуйха тартатъ.**

23

Усал ӗҫ тӑвасси тӑмсайшӑн,
Ача вӑййи пекех, иккен.
Ӑслишӗн ют ялан инкек,
Пӗрмай вӑл тӳр ҫулпа утасшӑн.

24

Кам айӑпа кӗрет,
Ҫав курӗ-ха типшар.
Ыркӑмӑллин кӗтрет —
Ӗненччӗ — юнашар.

25

Иртсе кайсан ҫил-тӑвӑл,
Усаллӑх ҫухалать.
Ыр ҫыннӑн, хӑть мӗн тӑвӑр,
Яш ӗмӗрӗ юлать.

26

Уксус хыт чĕпĕтсен шăла,
Йӳç тĕтĕмпе куç шывлансан та.
Тем-тĕрлĕ пулăм нихăçан та
Кăсăклантармĕ кахала.

27

Кам Турăран хăрать,
Ун ĕмĕр вăрăм пулĕ.
Кулма хăйсан Унран,
Кĕске этем кунçулĕ.

28

Чăтса, кĕтсĕ илсессĕн чăнлăха
Этемлĕх курĕ савнăç, танлăх.
Икĕ питли уҥ чух пит тарăхать,
Яланлăхах пĕтнишĕн шанчăк.

29

Тур(ă) çырнипе пурăнаканăн
Çул-йĕрĕ такăр та хитре.
Кам айăплă — çухатĕ канăç,
Хăпаймĕ вăл çитменлĕхрен.

30

Иккĕленӳсĕр, чăнлăха савса,
Таса этемĕн ĕмĕр иртĕ.
Черетленет-и каçĕ, ирĕ,—
Нихçан юп курмĕ çĕр çинче усал.

31

Тӳрĕ çын чĕлхи-çăварĕ
Ăслăлăх пиллет сана.
Усаллин, сиссем, çакна:
Хăш чухне пуçна кастарĕ.

32

Чыса мала хуран этемĕн
Кирек хăçан та ăнăçу.
Çакна ясар çын тивĕçеймĕ —
Иртĕхнĕрен ун ним те çук.

## XI

1

Юсавлă мар-тăк тарасу,
Çиллентерен Турра, асту.
Тĕп-тĕрĕс вăл виçет пулсан,
Аш-чик нихçан пăтранмĕ сан.

2

Пулать мăнна хураç тени те,
Намăсланма та вăхăт çитĕ.
Кăмăлласан лăпкăлăха,
Çивĕчленет чунра ăс-хал.

(Тӳркăмăллă этем вилме выртсан,
Пăшăрханать тăшман юлнишĕн.
Çапах та халăх савăнать кайран,
Кĕтмен çĕртен усал кăннишĕн).

3

Тӳркăмăллăхăн çулĕ-йĕрĕ
Сивлет шав тĕрĕсмарлăха.
Чейи малтан ултале-ха,
Кайран хăех ларса вăл йĕрĕ.

4

Пуянлăхпа тем те тума пулать,
Тесе ытла ан шан айваннăн.
Хаяр кунсем çитсен ăнланăн:
Çут чăнлăх çеç сив вилĕмрен çăлать.

5

Таса чунлин
Çул-йĕрĕ ĕмĕр такăр.
Киревсĕррин
Умрах ав тĕпсĕр авăр.

6

Тĕрĕслĕхе савакансем
Пĕтмеççĕ пурнăçра нихçан та.
Çут чăнлăха хурлакансем
Тӳре серепине çакланĕç.

7

**Еретсĕр çын вилсен**
**Каласçĕ: «Анчăк».**
**Тинех ун майлисен**
**Çухалĕ шанчăк.**

8

Ан чав-ха шăтăк, тетĕп,
Тӳре валли эс нихăçан.
Никам та мар, пĕлетĕп,
Хăвах унта кĕрсе выртан.

9

Чее этем — каварçă
Хĕнре тусне сутать.
Ăсчах пулман-ха тарçă,
Çут çăлăнăç тупать.

10

Çын савăнать, калать вăл, тав,
Чечекленсен тавралăх, пурнăç.
Тăшман пĕтсен, саманчĕ урăх:
Ун чух çĕршывĕпех уяв.

11

Ăсчахăн пилĕпе
Хула çĕкленĕ.
Айванăн ăсĕпе
Хур курĕ енĕм.

12

Пĕри: эп ăслă теекен,
Тус-юлташне вăрçать сăлтавсăр.
Тепри, пач урăхла иккен,
Чĕнмесĕр пулăшать, шăв-шавсăр.

13

Пакăлтин чĕлхи чараксăр,
Вăрттăн шухăша тытаймĕ.
Шанчăклă тусун çук айăп,
Çавăнпа вăл саншăн хаксăр.

14

Ăсчахçăсем чылай пулсан,
Юп курĕ ĕмĕр-ĕмĕр халăх.
Хута кĕрекенсем чаксан,
Тертленĕ, сӳнĕ унăн халĕ.

15

Енчен те эс ют çын хутне кĕрсессĕн
Сиен çеç курăн,
Теприн, çакна шав сивлекенĕн,
Шăпи пач урăх.

16

Чипер сăн-питлĕ арăм
Чапа та тухĕ.
Ĕçченĕн пулмĕ парăм.—
Пуянлăх пухĕ.

(Чăнлăха савман этемĕн
Чысĕ-сумĕ çук.
Ӳркенсе тăран лӳпперĕн
Пулмĕ ăнăçу).

17

Ыр кăмăллă çынсен
Çап-çутă-çке чун-чĕмĕ.
Ытла хаяррисен,
Хура кас евĕр — сĕмлĕх.

20

Турра пулать йĕрĕнтермешкĕн.
Пулсассăн чĕрӳнте ултав.
Юра Ăна, çиллентермешкĕн
Ан пултăрччĕ санра сăлтав.

18

Юлхавăн ĕçĕнче
Куратпăр кăлтăк çеç.
Упран-тăк чăнлăха,—
Тупан ят-сумлăха.

19

Ырă, лайăх пурнăç килĕ,
Тĕрĕслĕх çунат сарсан.
Ăнтăлсан мала усал,
Хăй валли çеç тупĕ вилĕм.

21

Çумкурăкне паян, ыран-и
Йăлтах кăкласçĕ, пур-ха шанчăк.
Эппин, аксассăн ырă вăрлăх,
Шеп çимĕçĕн тымарĕ хăрмĕ.

22

Сăмси çинче сыснан пулсан та ылтăн
çĕрĕ,
Çавах çынсемшĕн выльăх вăл, сыснах.
Хĕрарăмĕ, чăнах, хитре, хута та кĕрĕн,
Анчах пуш чунлă, ăсĕ çук пачах.

23

Хаяр инкек килсе çапсан,
Пит савăнать вара усал.
Çынсем юп курччĕр, тет, ялан,
Ырра кăна кăмăллакан.

24

Тараватлă, ыр хуçан
Вĕççĕр ӳсĕ пурлăх.
Хыткукарлансан ялан,
Пурнăç пулĕ хурлă.

25

Çынна юп ту: ĕçтер, çитер,
Ялан пулатăн хăв та тутă.
Çитменнине пĕрмай çитер:
Ыр çыннăн чунĕ ĕмĕр çутă.

26

Тырра пытаракан
Ылхан сăмахĕ илтĕ.
Суту-илӳ тусан,
Упранĕ халăх пилĕ.

27

Хĕвçллĕ куншăн кам çунать,—
Çав тупĕ килĕшӳлĕх.
Усал усаллăх çеç тупать,
Ана хал памĕ пӳлĕх.

28

Пулмĕ ылтăнра çут шанчăк,
Вăхăт çитĕ — вăл пĕтет.
Тӳрĕ çын — хăй çутçанталăк —
Ыррине кăна чĕртет.

29

Япăх, юхăннă çуртра
Çил ачи вылять хавассăн.
Ун хуçи — айван чура —
Пилĕкне авать ăсчахшăн.

30

Пурнăç йывăçĕнчен, теççĕ,
Тӳрĕ çыннăн çимĕçне.
Илĕртнишĕн чунсене
Ăсчаха шав хисеплеççĕ.

31

Ырăшăн ырăпа тавăр,
Пулĕ вара çыннăн тавĕ.
Айăп пулсан çĕр çинче,
Çăлăнăç çук пӳрнинчен.

## XII

1

Тăрă шыв çине кăларччĕ,
Суяна кирек хăçан.
Ӳкĕте кĕрет, ăнланччĕ,
Пĕлĕве çеç савакан.

2

Ырă чунлă çын çеç тупĕ
Çӳлти Турăран сăвап.

Уншӑн ют ялан услап,
Алӑкӗ те уншӑн хупӑ.

3

Юман тымарӗ евӗр ҫирӗп
Тӳркӑмӑллӑ ҫынсен кунҫул.
Саккунлӑха ан тӑр эс хирӗҫ,
Тӗрекленмест капла влаҫу.

4

Хӗвел пек ҫутӑ, ырӑ арӑм
Арҫыншӑн яланах тӗрев.
Ят яраканӗ — ҫӗрӗк-марӑк,
Типшӗмлетет шӑмма-тире.

5

Аслӑ ҫыннӑн шухӑш евӗк:
Тӗрӗслӗх вӑл тупӗ пурпӗр.
Урӑхла усал тӗллевӗ:
Ыр ҫынсем хӗн-хур ҫеҫ курччӑр.

6

Ултавҫӑна шав ӗненсессӗн,
Юн тӑкӑн, хуптӗре лексен.
Ҫав тамӑкран тухсассӑн, эсӗ
Хӑвна ҫӑлакана ӗнен.

7

Усал йӑхсен, терте лексен,
Йӗрри-палли юлмасть, иккен.
Анчах та тӳрӗ ҫыннӑн, курччӗ,
Ларать ним пулман пек кил-ҫурчӗ.

8

Ас-тӑн шайне курса мухтаҫҫӗ
Кирек ӑҫта та ҫынсене.

Аскăнчăка ялан хурлаççĕ,
Унран такам та йĕрĕнет.

9

Калать пĕри: эп ыр йăхран,
Анчах хăй çăкăрсăр ялан.
Хуçашăн ĕнтĕ лайăхрах,
Ахаль çын çеç — ĕçлет пулсан.

10

Выльăх-чĕрлĕхшĕн те çунĕ.
Ырă кăмăллă хуçа.
Тискер çын ватмасть пуçа,
Хытă уҥ чулланнă чунĕ.

11

Çĕр çинче ĕçлекенсен
Пурте пур. Вĕсем вăй-халлă.
Уявра шав сикекен
Уй-хирте пĕрмай юлхавлă.

(Вăхăтна эрех-сăрашăн
Çухатсассăн кăлăхах.
Кил-çуртна йăлт чухăнлатăн:
Пурăнаймăн ху вăрах).

12

Серепене шав çаклатасшăн
Усал вăя каварçăсем.
Анчах çакна эп палăртасшăн:
Хур курмĕç тўрĕ чунлисем.

13

Чĕлхи вăрăм пулнăран,
Пакăлти хăй шар курать.
Чăнлăха тĕпе хурсан,
Хăвăрт тухăн нушаран.

(Йăваш куçпа пăхакана
Каçарĕç, айăпа кĕрсессĕн.
Пӳлсе тăрсассăн хапхана,—
Тухакансен çулне хĕсетĕн.)

14

Кăмăл ырăпа тулать,
Ĕç-хĕлӳ пĕрмай ăнсан.
Çынра курăн вăй-хăват,
Ал-ури ун çыпăçсан.

· 15

Айван умра курать
Тӳп-тӳрĕ çул анчах.
Тепри тавран утать,
Вăл çавăнпа — ăсчах.

16

Куçне чарса пăрахĕ хăвăрт
Айванçă, çилленсе кайсан.
Ăсли, чунне пулсан та тăвăр,
Кӳренĕвне памасть уçса.

17

Хăй курнине пĕлтерекенĕн
Сăмахĕнче тĕрĕслĕх çеç.
Чее сăн-питлĕ кӳнтеленĕн[1]
Ултав кăна халапĕнче.

18

Талпас[2], хĕç каснă пек, сана
Сăмахĕпе чунна амантĕ.
Ăсчах чĕлхи ав яланах
Шав сиплĕ, вăхăтра лăплатĕ.

---

[1] Кӳнтелен — свидетель
[2] Талпас — шапăлкка, сӳтĕк, пакăлти.

19

Ултавçăсен сăмах-юмахĕ
Самантлăха кăна иккен.
Тӳркăмăллин, хăвах сисен,
Çут чăнлăхĕ ялан ахах пек.

20

Усал шухăшлă каварçă
Пултăр, тет, шав вăрçă-харçă.
Тăнăç пурнăçшăн çунать
Чунлă çын. Унра — хăват.

21

Нимле элек те çыпăçаймĕ
Таса та чунлă çын çумне.
Тӳрккес этем унран хăпаймĕ,
Унпах вăл виçĕ çул-йĕрне.

22

Турра ултала кан этем
Хăйне валли хăй тупĕ çылăх.
Чăн сăмахпа тупан илем,
Ыр чунлисем çеç Уншăн çывăх.

23

Пултаруллă шухăшлавçă
Мухтанмасть, уçса чунне.
Айванни — ялан халапçă —
Систерет ăс çуккине.

24

Тăрăшуллисен хăвачĕ
Куллен-кун вăй-хал илет.
Кахаллин пĕр сумсăр ячĕ,
Хырçă-марçă çеç тӳлет.

25

Пуссан сив тунсăх чĕрене,
Йĕри-тавра — кичемлĕх.
Ăш сăмахсем илтсессĕнех,
Вăй илĕ тин илемлĕх.

26

Тӳрĕ çын тус-юлташне
Тĕрĕс çул кăна кăтартĕ.
Сив чунли чылайăшне
Уй-хирте те ātаштарĕ.

27

Хăйĕн кайăк какайне те
Кахал çын ăшалаймасть.
Тăрăшан хуçан пур тем те —
Ырлăх-пурлăх юхăнмасть.

28

Чăнлăх çулĕ-йĕрĕнче
Пурнăç ешерет.
Вилĕме питленĕçем
Малалла чĕнет.

## XIII

1

Ывăлĕ, пит ăслăскер,
Итлĕ ашшĕн сăмахне.
Юлхавли, чарусăрскер,
Йышăнмасть питленине.

2

Хатĕрлен пулсан эс çимĕç —
Савнăç, ырлăх шав куран.
Усал çыннăн çеç çук ним те,
Унăн чунĕ те хура.

3

Тытма пӗлсессӗн сӑмаха,
Хӑв чун-чӗмне шав упрӑн.
Пӗр вӗҫсӗр пакӑлтатакан
Инкек-синкек ҫеҫ тупӗ.

4

Наян: ман ӗмӗт ҫиттӗр, тет,
Анчах та — кӑлӑхах.
Тӳркӑмӑлли тупать тивлет,
Нихҫан чакмасть ун хал.

5

Тӗрӗслӗхе хисеплекен
Суялӑха хӗрӳллӗн питлӗ.
Тӳрӗмарри — ят ҫӗртекен —
Кирек хӑҫан тӗрексӗр, пилсӗр.

6

Таса этем ҫула тухсассӑн,
Хӗвеллӗ чӑнлӑх шав унпа.
Кӗрсе ӳксессӗн айӑпа,
Пӗтен, ултавлӑхран тухмасӑр.

7

Пӗри: пуян, тет, эпӗ питӗ,
Анчах пурнать хӑй юрлӑ.
Тепри калать: ман ҫук-ҫке-ним те
Ҫавах та пур ун пурлӑх.

8

Хӑрушлӑха кӗрсе ӳксен, пуян
Хӑй пурнӑҫне те сутӑн илӗ.
Чухӑнраххи, инкек сиксе тухсан,
Хӑратнине те сисмӗ, илтмӗ.

9

Чăнлăх çунĕ-ха çап-çуттăн
Тӳрĕ кăмăллă çынсен.
Лап сӳнет тӳрккессисен,
Вĕсенчен эппин эс ютшăн.

(Усал шухăшлă чунсем
Çылăха кĕрсе аташĕç.
Тӳрĕ, ырă чунлисем
Пит хĕрхенĕç, пăшăрханĕç).

10

Мăнаçлăха пула
Тухма пултарĕ хирĕçӳ.
Туспа кам канашлать,—
Пурнăçĕнче ун килĕшӳ.

11

Ниме тăман хĕвĕшӳре
Пуянлăх иксĕлет.
Ăна пухсан хĕрӳ ĕçре,
Вăл куллен-кун ӳсет.

12

Шанчăк чакĕ те, хытах ĕшенĕ
Шух чĕрӳ, чылай эс çуннăран.
Ĕмĕтӳ тулсассăнах, кайран
Пурнăç йывăç евĕрех ешерĕ.

13

Сăмаха хакламасассăн,
Хăвна ху çеç сăтăр тăвăн.
Ӳкĕтленине туйсассăн,
Пурнăçу сан пулмĕ тăвăр.

14

Ыррине кĕтсе илеймĕн
Чее сăнлă пепкӳрен эс.
Аслă-тăнлă чурасен те
Чылай чух кунçул илемлĕ.

15

Хĕвеллĕ, тăнăç пурнăçăн çăлкуçĕ
Ăс-хакăла çивĕчлетен ăсчах.
Сив вилĕме вăл йышăнмасть пачах
Малашлăха вĕрентĕвĕ çул уçĕ.

16

Ырă, çут ăс-хакăл
Кăмăллăх пиллет.
Чунсăр çын сукмакĕ
Терт кăна сĕнет.

17

Пĕлĕве мала хурса,
Ĕçлĕ ăслă çын кал-кал.
Ассăрлăхне кăтартса,
Кăкăрне çапать кахал.

18

Ĕçĕ ăнмĕ усал элчĕн,
Шанчăк чакĕ, курăн шар.
Халăх янă çын хĕрхенчĕк,
Унпа çеç чакать нуша.

19

Намăс курăн, чухăн пурнăн
Вĕренмешкĕн ӳркенсен.
Пулĕ санăн чыс та пурлăх,
Ăс пухсассăн эс куллен.

20

Чунпа ӳт-пӳ пит ырă, евĕк,
Ĕмĕтленни пурнăçлансан.
Тарăхтарать айван тĕллевĕ,
Инкек-синкек шыранăран.

21

Ăсчахпа çеç хутшăнсан,
Пĕлĕвӳ тин ӳсĕ сан.
Айванпа эс туслашсассăн,
Ятна çĕртĕн, пулăн ascăн.

22

Çылăхлă çынна шав йĕрлĕ
Пурнăçра усал-тĕсел.
Ыр çынна хăратмĕ йĕрĕх,
Шух чĕри ун — теветкел.

23

Мăнукĕсем валли çитеççĕ
Эткерлĕх-мул ыр кăмăллин
Айăплисен те вăл тулли:
Тӳр чунлисем ăна валеçĕç.

24

Кахал уй-хирĕнче те
Тырпул çуллен ăнса пулать.
Анчах çакна пĕлетпĕр:
Çав мул унтах тăрса юлать.

25

Чĕр хуллуна шеллен пулсассăн—
Хăв ывăлна эс юратмастăн.
Ăна çын тăвасах тесен,
Унпа та усă кур куллен.

26

Ĕçчен пурнăçĕнче
Çиет тăраниччен.
Выçса пурнан этемĕн
Тӳсет ăш-чикĕ тем те.

## XIV

1

Аслă-тăнлă арăмун
Çурт-йĕрте тирпейлĕх.
Мăшăрĕ айван кӳршӳн,—
Çук вĕсен йĕркелĕх.

2

Çулу-йĕрӳ тӳп-тӳрĕ сан,
Эппин, сăвап куран кайран.
Турра ĕненменнин сукмакĕ
Кирек хăçан та кукăр-макăр.

3

Айван чĕлхи, чăпăркка евĕр,
Хăйне ытла мăнна хурать.
Асчах сăмахĕ питĕ евĕк —
Йывăрлăхра сана сыхлать.

4

Пулмасан ĕç вăкăрĕ,
Пӳлмӳсем те пушă-çке.
Усламу та хушăнмĕ,
Çитмĕ тулă çăкăрĕ.

5

Нумай пакăлтатать ултавçă:
Пин сăмахран пĕри чăн мар.

Кӳнтеленӳ — пулман хӑравҫӑ —
Ҫут чӑнлӑхшӑн пӗлет ҫунма.

6

Аскӑнчӑк шырать те чӑнлӑх,
Вӑл ӑна тупаяс ҫук.
Ҫын пулсассӑн ӑслӑ-тӑнлӑ,
Унран тармӗ ӑнӑҫу.

7

Пӑрӑнма хушаҫҫӗ.
Ухмахран ялан.
Ма тесен, хальхаҫҫӑн
Ун чӗлхи айван.

8

Утса тухас ҫулне куллен
Асчах пӗлсе тӑрать аван.
Айван иккӗленет ялан,
Е аташса ҫӳрет пӗччен.

9

Ҫылӑха кӗрсен кулаҫҫӗ
Айвансем ялан.
Тӳрӗ чунлисем шанаҫҫӗ:
Тухӑн нушаран.

10

Чӗре пит ыратать,
Синкерлӗх тӗлпулсассӑн.
Ҫитсессӗнех хаваслӑх,
Ҫын терт-хӗне манать.

11

Саккуна пӑсать пулсан,
Юхӑнать ултавҫӑн ҫурчӗ.

Заказ № 810.

Арканмасть хуралтă-пÿрчĕ
Ырă кăмăллă хуçан.

12

Тĕтрелĕх çук пек пуç çинче,
Çул-йĕр тап-такăр курăнать.
Анчах та пурнăç вĕçĕнче
Этем леш тĕнчене каять.

13

Ахăлтатса кулан пулсан та,
Хăш чух чĕрÿ хыт ыратать.
Хĕпĕртÿ хыççăнах хурланăн,—
Çут савăнăç пач çухалать.

14

Усала вĕреннĕ чупкăн
Çулне вĕçлĕ иртĕхсех.
Ырă çын утмасть-ха чуххăм:
Юп курать, пурнать пĕлсе.

15

Ан ĕнен-ха айван евĕр
Ăçтиçукăн сăмахне.
Аслă-тăнлă пул, тиркевлĕх
Питĕ кирлĕ çынсене.

16

Асчах усаллăхран хăрать,
Май килсенех унран хăпать.
Айван этем ытла та вĕчĕх,
Хăйне кăна шанать пĕр вĕçĕм.

17

Авăк çилĕллĕ этем сисмесĕр
Япăх ĕç тăвать хутран-ситрен.

Анчах çын юри сиен кӳрсен,
Курайманлăх ӳсĕ пĕр чикесĕр.

18

Тĕттĕм çын кунçулĕ паллă:
Ăна пӳрнĕ шав айванлăх.
Урăхла теприн шăпа:
Пурăнать ялан ăспа.

19

Çиллес çынсем те пурăна-киле
Ăсчах патне çитсе тăрайĕç.
Чыссăррисем те вĕсемпе пĕрле
Хапхи умне çитсе пуç тайĕç.

20

Чухăна тăванĕсем те
Юратмаççĕ çав хăш чух.
Пуян çыннăн пур хисепĕ,
Тусĕсем ун темĕн чул.

21

Тусĕнчен йĕрĕнекен
Тупĕ хăй валли çеç çылăх.
Чухăна ялан кам çывăх,
Рехет курĕ çав куллен.

22

Юри усал тăвакан —
Пурнăçра аташакан.
Ăшă кăмăл, çутă ĕмĕт
Ыр тусра çеç пулĕ ĕмĕр.

23

Кирек мĕнле ĕçрен
Услам илетĕн.

Ялан сӳпӗлтетсен,
Тӑкак тӳсетӗн.

24

Пӗлӳ — чи ҫӳллӗ пусӑм,
Ӑсчах ҫакна сисет.
Айванӑн ҫулӗ уссӑр,
Тӗттӗмлӗхре иртет.

25

Тӳрӗ чунлӑ кӳнтелен
Терт-хӗнрен хӑтарӗ.
Улталама пӗлекен
Шӑхӑртса хӑварӗ.

26

Турра хисеплекенӗн
Ҫут шанчӑкӗ пит ҫирӗп.
Вӑл хӑйӗн ачисемшӗн
Хӳтӗлӗхре каҫ-ирӗн.

27

Турӑран шав хӑрани —
Пурнӑҫа хыт ӗненни.
Вилӗмрен вара ун чух
Пит хӑрамӗ лӑпкӑ чун.

28

Ӳссех тӑрсассӑн халӑх йышӗ
Патшан мухтавӗ ҫӗкленет.
Ҫынсем чаксан, ӑна та йывӑр,
Ун чух вӑл хӑй те хӗн тӳсет.

29

Чӑтӑмлӑ этемӗн
Пысӑк ӑнланулӑх.

Час çиленекенĕн
Пулмĕ ăнăçулăх.

30

Йăваш чĕре
Ӳт-пӳшĕн — ырлăх.
Тупатăн шырлăх —
Кĕвĕçӳре.

31

Чухăна кам хĕсĕрлет,
Çав Турра çиллентерет.
Эс Ăна сума сусан,
Ырлăх-пурлăхлă пулан.

32

Усал этем тӳрккес ĕçсемшĕн
Лекет чĕр тамăка.
Тӳр кăмăлли пурнать хисепшĕн,
Упрать çут шанчăка.

33

Пĕлӳ шыраканра ăс-хакăл.
Шăп çавăнпа тĕллевлĕ унăн çул.
Ăна хăш чух айван та хапăл,
Анчах кашниййĕн чунĕнче вăл çук.

34

Çут чăнлăхшăн кăна
Çӳле çĕкленĕ халăх.
Пăсассăнах ăна,
Пĕтет ун чысĕ, халĕ.

35

Аслă-тăнлă чурана
Кăмăллать патша.

Хăйне хирĕç кам? Çавна
Кăтартать вăл шар.

## XV

1

Тарăхăва сирсе ярать
Ачаш та лăпкăрах хурав.
Темтепĕр каласа хăртсан,
Çиллеслĕхе çеç вăйлатан.

2

Айван сăмахĕ, хăсăк евĕр,
Тухать те сирпĕнет.
Ăсчах чĕлхи ытла та евĕк,
Пĕлӳ çеç парнелет.

3

Кирек хăш вырăнта та
Пур Турă куçĕсем.
Усалпала ырра та
Катаççĕ шав вĕсем.

4

Сапăр та хитре сăмахĕ
Пурнăç йывăçĕ пекех.
Пулмасан чĕлхе чаракĕ,
Чунлăху пĕтет веçех.

5

Ашшĕ вĕрентсе каланине
Ывăлĕ шута илмест.
Кам ялан тăнлать ăс панине,
Ăна хурлăх тĕкĕнмест.

(Пилленĕ вăй-хăват
Тĕрĕслĕхе.

Ултав унран тарать
Тĕттĕмлĕхе).

6

Тӳр чунлă çыннăн суртĕнче
Тем чул пуянлăх та илемлĕх.
Усал йăх-яхăн килĕнче
Юхăнчăк çеç — çук ун йĕркелĕх.

7

Ăсчах çăварĕ
Пĕлӳ сарать ир-каçăн.
Анчах айванăн
Ăс-тăн çитмест хальхаççăн.

8

Усал этем хĕн кăтартни —
Çӳлти Турра йĕрĕнтерни.
Ун майлă кĕлĕ каласан,
Тӳр чунлă çын пулса юлан.

9

Турă умĕнче пулсан та,
Ирсĕр çулĕ питĕ путсĕр.
Чăнлăхпа мала утсан çеç,
Тӳр çынна Вăл савĕ шутсăр.

10

Пăрăнсассăн тĕп çулран,
Терт куратăнах кайран.
Кĕмесессĕн ӳкĕте,
Питĕ шел — хăвах пĕтен.

11

Çӳлти Турă умĕнче
Тамăк, Аваддон[1] яр уçă.

[1] Аваддон (евр.)— тĕпсĕр тарăн шăтăк.

Çын чунне пĕлет веçех,
Унăн питĕ çивĕч куçĕ.

12

Аскăнчăк питленине
Нихăçан та юратмасть.
Хăть хăçан ăсчах патне
Тӳрĕ çул вăл тупаймасть.

13

Савăк кулă, ырă кăмăл
Илемлетĕ сан сăнна.
Янкăр кун та питĕ ăмăр,
Хурлăх иленсен чунна.

14

Ăслă-тăнлă çын вĕри,
Çут пĕлӳшĕн ăнтăлать.
Урăхла айван чĕри,
Хăйшĕн ăссăрлăх тупать.

15

Телейсĕррин кунçул салхуллă,
Пурнать асаппала хĕнре.
Теприн питре шав йăлтăр кулă,
Иртет ун пурнăçĕ хитре.

16

Сахал пулни, тен, лайăхрах,
Пит хăрасассăн Турăран.
Шав ӳснĕçем пуянлăху
Шикленĕн ир те каç та ху.

17

Юрату та чухăн пурнăç
Ылтăн-кĕмĕлрен аван.

Ма тесен, пуянлăхран
Вăй илет чылай чух хурлăх.

18

Час çилленен сынна пула
Вăй илĕ харкашу ялан.
Чăтăмли çеç, ун пур хăват,
Хирĕçĕве шав пусарать.

19

Çул-йĕр услапăн
Ытла асаплă.
Тӳркăмăллин яка,—
Лекмест хĕн-хурлăха.

20

Ăслă ывăлĕ пĕрмай
Савăнтарĕ ашшĕне.
Айванни, пурăннă май,
Ниме хумĕ амăшне.

21

Катăк çын сăлтавсăрах
Савăнмашкăн пултарать.
Ăс пухни ав яланах
Тӳрĕ çулпала утать.

22

Канаш-сĕнӳсĕр пурăнсан,
Йăлт юхăнать мĕнпур пуянлăх.
Ăсчах çын юнашар пулсан,
Тĕрекленет, ӳсет хуçалăх.

23

Çут тĕнчере ăш сăмахран
Пахи тек ним те çук.

Илтсен ăна эс вăхăтра,
Сан кăмăлу — сар çу.

24

Ăнтăлать ăсчах шав çӳлелле:
Çакăн пек ун пурнăçра тĕллев.
Пăрăнасшăн вăл хăрушлăхран,
Çĕрĕн айĕнчи чĕр тамăкран.

25

Çӳлти Турă çилленсен,
Йăлт пĕтет тӳрккесĕн ирĕк.
Тăлăх арăмăн çеç хирĕ,
Лайăхланĕ çулсерен.

26

Турă умĕнче усалăн
Шухăш-ĕмĕчĕ шав ирсĕр.
Таса çын сăмахĕ майлă,
Тăрас çук ăна Вăл хирĕç.

27

Выç куç ялан услам тăвасшăн,
Анчах çурт-йĕрĕ юхăнать.
Тӳркăмăлпа çеç пурăнсассăн,
Мĕн шутлани йăлтах пулать.

28

Явап нихçан та пулмĕ пăсăк
Шухăшлакан çынсен.
Сăмахăн вырăнне ав хăсăк
Тухать усаллисен.

(Çӳлти Турă умĕнче
Таса çыннăн ырă çулĕ.
Вăл куллен тăрăшнăçем
Тăшмансем те туслă пулĕç).

29

Инçетре пурнать-ха Турă,—
Усалран Вăл аякра.
Кĕлĕ вулакан çынра
Çутă чăнлăха йăлт курĕ.

30

Куçусем савса пăхсассăн,
Чун-чĕре хăпартланать.
Ырă шухăшсем пулсассăн,
Ӳт-пĕвӳ те юп курать.

31

Хăлхусем, чăнах та, çивĕч,
Йăлт илтесшĕн.
Ăсчах пек, пуласшăн çирĕп,
Вĕренесшĕн.

32

Тăрăшмаççĕ чун-чĕришĕн
Ӳкĕте кĕмен çынсем.
Пач çилленмĕç питленишĕн
Ăс-хала пухакансем.

33

Турăран пит хăраканăн
Аслă-тăнлă пулмалла.
Чапшăн шав ăнтăлаканăн
Чунне сапăрлатмалла.

## XVI

1

Тĕрлĕ шухăш çулĕ
Упранать çын чунĕнче.

Малашне мĕн пулĕ?
Пурте Турă аллинче.

2

Этемĕн тĕрлĕ ĕçĕсем
Ун куçĕ умĕнче йалт паллă.
Тăрать Вăл чунсене виççе,
Эй, Турă, Эс çынсемшĕн Аслă!

3

Килĕштер кирек хăçан та
Ĕç-хĕлне Турăпала.
Пулĕ санăн çирĕп шанчăк,
Ырлăх курăн эс ялан.

4

Пурне те тунă Турă,
Вăл хăйшĕн те ĕçлет.
Усал тӳссен те хурлăх,
Ăна та хӳтĕлет.

5

Турă умĕнче мăнна хурсан,
Пит киревсĕр çын пулса юлан.
Ӳснĕçемĕн йăнăш, айăп,
Пӳрнинчен ниçта тараймăн.

(Малтанах эс çул çинче
Чăнлăха тупсан хăвах,—
Хăйне парне кӳнинчен,
Турăшăн çак лайăхрах.

Шырасассăн эс Турра,
Тĕрĕслĕхпе тĕл пулан.
Çивĕчленнĕ ăс-халра
Ырлăх, тăнăçлăх тупан).

6

Ыр кăмăлпа, тĕрĕслĕхпе
Тасалĕ çылăху.
Çӳл(ти) Турăран хăранипе
Усал кӳреймĕ хур.

7

Ытах этем кунçулĕ
Пит килĕшсен Турра.
Тăшман та уншăн ӳлĕм
Тус пулĕ пурнăçра.

8

Сахал пулсан та тупăшу,
Ултавлăхпа эс ан туслаш-ха.
Пуян усламшăн çеç аташтăр,
Ăна кĕтет шав харкашу.

9

Утса тухас çул-йĕр пирки
Этем пит тĕплĕн шухăшлать.
Пулман-ха ӳсĕмрен пахи,
Тесе ăна Тур(ă) пулăшать.

10

Хавхаланулла та эрешлĕ
Кирек хăçан патша сăмахĕ.
Çынсемшĕн сумлă унăн хакĕ:
Судра та чăнлăхшăн кĕрешĕ.

11

Виçет тĕп-тĕрĕс тарасу,
Эппин, тупатăнах эс сум.
Анчах çакна ан ман нихçан:
Çак чăнлăх-ырлăх — Турăран.

12

Патшасем те курайма̧ççĕ,
Саккуна хирĕçлесен.
Чăнлăхпа вĕсем лараççĕ,
Вырăнне çирĕплетсе.

13

Илтсессĕн тĕрĕс сăмаха,
Патшан та питĕ ырă кăмăл.
Ун чух шăм-шакĕ тĕк пек çăмăл,
Саватъ-çке вăл та чăнлăха.

14

Сив вилĕм хыпарçи пек,
Патшан çилли хăш чух.
Ăсчах сăмахĕ çитĕ,—
Вара хаярлăх çук.

15

Патша тинкерлĕн пăхнинче
Иртет пек пурнăç сумлăн.
Ыр кăмăлĕ пĕлĕтсенчен
Юхтарнăн ăшă çумăр.

16

Ăс-хала çивĕчлетни
Ылтăнран та чаплăрах.
Ыр пĕлӳ пĕрмай пухни
Кĕмĕлрен те пахарах.

17

Тӳрĕ кăмăлла çынсен
Усалпа пĕрлешмĕ çулĕ.
Çут пуласлăхшăн çеç çунĕ
Чун-чĕри куллен вĕсен.

18

Вилĕм-çĕтĕм çитес умĕн
Çыннăн чунĕ питĕ аслă.
Чыссăррин çеç чакĕ сумĕ;
Уншăн ют, иккен, мăнаçлăх.

19

Пайличчен хăв тупăшна
Мăнкăмăллă çынпалан,
Лăплантар та эс чунна,
Çураçу туп, сапăрлан.

20

Тупать пурнăçĕнче тивлет
Ĕçĕ пĕлсе йĕркелекен.
Çӳлти Турра ĕненекен
Курать хальччен курман рехет.

21

Ăсчаха ялан çынсем
Пархатарлă, ăслă, теççĕ.
Ун хитре сăмахĕсем
Пĕлĕве шав ӳстереççĕ.

22

Çыннăн ăсĕ-тăнĕ —
Пурнăçăн çăлкуçĕ.
Пакăлтин çук ăнĕ,
Курмĕ ним те куçĕ.

23

Ăсчахăн чун-чĕри —
Ытла та пит вĕри.
Хăй пĕлĕвне ӳстерĕ,
Йывăрлăха çĕнтерĕ.

24

Ăшă, евĕк сăмахсем
Хурт пылĕнчен симлĕрех.
Вĕсене эс итлесен —
Вĕçĕн анлă тӳпере.

25

Туйăнаççĕ çул-йĕрсем
Кашниех ялан ыр енлĕ.
Малалла васканăçем
Тин сисен: çумрах эсрелĕ.

26

Хырăм выççи хистенĕрен,
Хресчен ялан хĕрӳ ĕçре.
Вăл хăйшĕн пĕрмаях вăй хурĕ,
Инкек-синкек вара тек курмĕ.

27

Чее этем пĕр хăйшĕн çунĕ:
Ун шухăш-кăмăлĕ усал.
Ăна эс лайăх сăнасам:
Çăварĕнчен палкать пек çулăм.

28

Элекçĕ туссене
Уйăрттарать.
Ултавçă çынсене
Харкаштарать.

29

Ырă шухăшлăмарри
Аскăнлатĕ юлташне.
Пулас çук вара ырри:
Татĕ леш ыр ĕмĕтне.

30

Усал тăвас текен этем
Куçне хĕсет те шухăшлать.
Тутисене хăй çыртнăçем,
Хура ĕçне вăл пурнăçлать.

31

Мухтавăн çӳлти пусăмĕ —
Ват çыннăн шурă çӳçĕ.
Этемĕн пурнăç утăмĕ
Тĕрĕслĕхе яр уçĕ.

32

Пурне те чăтакан
Хăюллă салтакран маттур.
Хăйне хăй тытакан,
Çĕнтерекен çынран сатур.

33

Шăпа яни, ăнлан,
Вăййа çеç пĕлтерет.
Куран-и терт, тивлет —
Йăлт килĕç Турăран.

## XVII

1

Çапăçу та тавлашу
Пурлăх йăтăнан çуртра.
Пултăрччĕ çеç килĕшӳ,—
Чухăн пурнăç лайăхрах.

2

Пуянăн ывăлĕ тăрлавсăр,
Чури ăна пăхăнтарать.

Заказ № 810.

Пиччĕшсемпе, хăй ăсларан,
Эткерлĕхе пайлать шăв-шавсăр.

3

Шăратакан çурт — çут кĕмĕлшĕн,
Хаклă сарă ылтăнĕ — вучахшăн.
Пирĕн чун-чĕре пит ĕметлĕ,
Çунĕ Турă умĕнче вăраххăн.

4

Чунилли итлет ялан
Саккуна пăсакана.
Суяна кăмăллакан
Шав тăнлать ултавçăна.

5

Чухăна кӳрентерсен,
Эс Турра çиллентерен.
Хĕн кураканран кулсан,
Асапланăн ху кайран.

(Ырă кăмăллă çынна
Вăл каçарĕ яланах).

6

Ватăсен сӳнми мухтавĕ —
Аслă мăнукĕсенче.
Ачисен те чакмĕ тавĕ
Ашшĕ-амăш умĕнче.

7

Айванккана пит килĕшмест
Мăнна хурса пакăлтатни.
Ят-сумлине те чыс кӳмест
Пĕр вăтанмасăрах суйни.

8

Çын куçĕ умĕнче парне —
Чи хаклă чул пек.
Хуçи кама парассине
Йăлтах хăй чухлĕ.

9

Тĕрĕс мар ĕçе пытаракан
Юрату шырать.
Тусĕ те кăштах вăлтса ыйтсан,
Пăрăнать унран.

10

Айван çынна çĕр хут хĕне,
Вăл ним пулман пекех пурнать.
Пĕрре кала ăс-тăнлине,
Вăрçать хăйне хăй, шухăшлать.

11

Тăрлавсăр çын ав кулленех
Усаллăха çеç пуççапать.
Хăрушă ангел çул çинчех,
Ăна часах вăл тĕл пулать.

12

Çурисĕр юлнă упапа
Тĕл пул, сана унпах аван.
Пуплес килмест-ха тăмсайпа,—
Айван кирек хăçан айван.

13

Кам, ырра манса кайса,
Усал ĕçпе тавăрать,
Лайăха ан кĕт шанса:
Хĕн çеç курăн çак çуртра.

14

Хирĕçӳ пуçламăшне пăхсам:
Татса кайнă пек шыв пĕвене.
Курма пулĕ хăвăрт инкекне,
Вăхăтра, эппин, эс чарăнсам.

15

Кăларсассăн усала тӳрре,
Айăплан-тăк ыр çынна сăлтавсăр,
Ылхану тупатăн та, тӳрех
Турă умĕнче пулан тăрлавсăр.

16

Кирлех-ши айвана пуянлăх,
Мĕн тăвĕ-ха унпа вăл?
Пухасчĕ те ăс-хакăл,
Пĕлӳ сахал. Ун çук пуласлăх.

(Камăн çурчĕ-йĕрĕ çӳллĕ,
Çав ӳксе вилме пултарĕ.
Камăн çук пуçра пĕлӳлĕх,
Хĕнлĕхĕ унран час тармĕ).

17

Çут тĕнчере туссем сахал,
Юп курнă чух кăна нумай.
Пиччӳ пек çын хуйха-суйхə
Санпа пултарĕ пайлама.

18

Пĕлӳ пухман этем те
Пĕр хăйшĕн тăрăшмасть.
Ăна эс сĕн-ха тем те,
Çавах тусне сутмасть.

19

Кам шав çылăха кĕресшĕн,
Кам ялан пит хирĕçесшĕн?
Камăн-ха хапхи пит çӳллĕ,—
Çав ӳксе вилесшĕн пулĕ.

20

Усал чĕре
Тĕл пулмĕ ырăпа.
Чее этем
Хăех лекет таппа.

21

Айван ывăл çуралсассăн,
Терт-хĕнне куран хăвах.
Ашшĕн çук ун чух хаваслăх,
Кулянать пĕччен вăрах.

22

Хăпартланнă чух чĕре —
Тухтăр кӳнĕ пек юп-ырлăх.
Тĕл пулатăн хурлăх-шырлăх,
Пĕр пĕччен кичемлĕхре.

23

Таса мар çын ялан
Улталаса парне илет.
Тӳр сăмаха кайран
Çине тăрсах вăл хӳтĕлет.

24

Ăсчахăн ĕçĕ-хĕлĕ
Кирек хăçан куç умĕнче.
Айван пăхать хăй тĕллĕн,
Çавах та тикĕс ун тĕнче.

25

Кăнттăм-канттăм ывăлне пула
Тӳсме тивĕ ашшĕн эрлĕк.
Пăшăрханĕ амăшĕ ялан,
Чакĕ.питĕнче илемлĕх.

26

Тӳр кăмăллисене айăпласассăн,
Чăн сăмахсемшĕн улпута хăртсассăн,
Влаçра ларакана нихçан чыс кӳмĕç,
Кайран çавсем хăйсен çулне çеç пӳлĕç.

27

Сăмах хакне чухлаканран
Илтеймĕн тӳрĕ мар пуплев.
Чипер ăсли те пурнăçра
Хăйне хăех тытма пĕлет.

28

Айван та, шăп ларать пулсан,
Ытла та сумлăн курăнать.
Кам çынсенчен шав ютшăнать,—
Çав ăсчах евĕр туйăнать.

## XVIII

1

Кăмăлне улăштарать кас-кас
Улшăнчăк этем куллен.
Пĕлĕве вăл хирĕçлет,
Хисепне унра ăсчах курмасть.

2

Хăйне ăслăн тыткалать
Ушкăнра чух ăçтиçук.
Пурĕпĕр кашни чухлать:
Унăн пĕлĕвĕ пач çук.

3

Этемлĕхĕн сăмахĕсем
Тулли юханшыв пек юхаççĕ.
Унта — ăсчах çăлкуçĕсем,
Унтан çынсем пĕлӳ пухаççĕ.

4

Усал, ним вырăнне хумасăр,
Пĕрмай çынна хурлать.
Чыс-сумлăха манса, сăлтавсăр
Таса ята варлать.

5

Тӳрккес çынна кăмăллани
Пит аван мар.
Çумри тусна судра сутни
Тата начар.

6

Айван сăмахĕсем
Шыраççĕ харкашу.
Каярахпа çынсем
Пуçлаççĕ çапăçу.

7

Тăмсай чĕлхи чараксăр,—
Хăй вилĕмне хăех тупать.
Сăмахĕсем ун хаксăр,
Чун-чĕмĕ лекĕ сив таппа.

8

Кахал чĕтрет хăранипе,
Кайран ятне ярать.
Алла уссан, хĕрарăм пек,
Тертленĕн выçлăхра.

9

Çимĕç евĕрлĕн сĕнет
Хăйĕн хыпарне элекçĕ.
Пăтратсан çеç ăш-чикне,
Сисĕн: вăл наркăмăш пек-çке.

10

Ӳрĕк-сӳрĕклĕх ĕçре
Ыр туман нихçан,
Туслашсан унпа, хĕнре
Пурлăх салатан.

11

Çӳллĕ çурт пек, илĕртет
Хăй патне шав Аслă Турă.
Тӳрĕ çын лексен терте,
Çăлăнăç унта çеç тупĕ.

12

Мĕнпур хуçалăхĕ пуянăн —
Ялан тĕрекленен хула.
Асри сăнарлăхне пула
Çут ĕмĕт ун виçесĕр анлă.

13

Тӳпене çĕкленĕ
Ӳкес умĕн чун.
Чап-сум ӳснĕ чух
Сапăрлăх иленĕ.

14

Çын сăмахне итленĕ чух
Ан пӳл, кайран эс хуравла.
Айван сӳпĕлтетет ялан,
Паллах, ун намăс-симĕс çук.

15

Куçать, хал çук пулсан та,
Таса çынна хăват.
Теприн ав чун аманнă,
Ăна кам пулăшать?

16

Пĕлӳсен çăлкуçĕ — Турăра,
Хăлхупа тăнла, ăна шыра.
Канăçсăр этем çут тĕнчере
Тивлетне тупать вĕренӳре.

17

Пуянсене парне парсассăн,
Умри çул-йĕр час уçăлать.
Ун чух улпут та пит хавассăн
Сана хăй аллине парать.

18

Пĕр çын каланипе кăна
Тупаймăн чăнлăха нихçан.
Ĕçе йăлтах тĕпче, сăна,
Тĕрĕслĕхе кайран уçан.

19

Тавлашу хĕрсе кайсан,
Васкасах шăпа яраççĕ.
Вăйлисем те пăхăнаççĕ
Пӳрнĕ элчеле кайран.

20

Тăван пиччӳ пит шăмарсан,
Хула хупать пек хапхине.
Пĕр вартисем вăрçса кайсан,
Çухатăн пурăнăç хакне.

21

Пĕлӳ хăй çимĕç евĕр,
Унпа чĕре пуян.
Юп курăн ĕмĕр-ĕмĕр,
Ăна ăша хывсан.

22

Ырă пурнăç, сивĕ вилĕм
Чĕлхе ирĕкĕнчен килĕ.
Сăмаха шав хаклакан,
Ун вăйне туять ялан.

23

Ырă арăм тупакан
Курĕ савнăç, пархатар.
Çак тивлетлĕх — Турăран,
Ăна уншăн ĕмĕр тав.

(Хăвалан-тăк ырă арăмна —
Уйрăлатăн çутă телейпе.
Аскăнсассăн ĕмĕр тăрпшĕпе,
Çухататăн ăстăнна, пуçна).

24

Ыйткалакан шăпи çапла:
Мĕскĕнленсе вăл йăлăнать.
Пуян чĕлхи кăнттам ялан,
Тӳрккес саспа çеç хуравлать.

25

Юлташсем пулсан — эс халлă,
Вĕсемпе çеç ут ялан.
Хăш чухне тусу çеç хаклă —
Вăл пур тăванран тăван.

## XIX

1

Чухӑнсен чун-чӗмӗ ырӑ,
Кӑмӑл-туйӑмӗ таса.
Пуян ҫын айван, усал,
Ӗмӗр суйӗ, кӳрӗ хурлӑх.

2

Пуҫунта пӗлӳ пулсассӑн —
Ҫӗкленӳллӗ кӑмӑл.
Хӑвӑрт урусем чупсассӑн,
Такӑнма та ҫӑмӑл.

3

Турӑ ҫине сӑлтавсӑрах
Айван ҫын тарӑхать.
Хӑй, пит аскӑннӑран вӑрах,
Йӗркелӗхрен тухать.

4

Пуянсен юлташ чылай,
Ылтӑн-кӗмӗле пула.
Чухӑна ав систермесӗр,
Тусӗ те пӑрахӗ шелсӗр.

5

Судра чух кӳнтелен
Улталасан.
Тухаймӗ хӗнлӗхрен
Хӑех кайран.

6

Йӑпӑлтакана мухтаҫҫӗ
Ят-сумлисем.
Ку пирӗн тус тесе, ырлаҫҫӗ
Ӑна вӗсем.

7

Кураймаҫҫӗ чухӑна
Тӑван пиччӗшсем те.
Тус-юлташӗ пӑрӑнать,
Калаҫмаҫҫӗ темшӗн.

8

Ӑстӑнна ҫивӗчлетсен —
Хӑв чунна ҫӳле ҫӗклен.
Кам пӗлӳшӗн тӑрӑшать,
Ҫав юп-ырлӑха тупать.

9

Ултавҫӑ кӳнтеленӗн
Шӑпи тулать.
Ҫынна хисеплеменшӗн
Кӑнса выртать.

10

Килӗшмест айван ҫынна
Капӑрлӑх, мӑнаҫлӑх.
Тухсан чура хуҫана,
Сивлӗ ӑна халӑх.

11

Ӑслӑ-тӑнлӑ этеме
Ҫиллентермӗн час.
Хӑйне хисеплеттерме
Пур ун сумӗ, чап.

12

Тарӑхса кайсан, патша,
Арӑслан пекех, усал.
Пилӗ ун, иртсен нуша,
Сывлӑм евӗрех, таса.

13

Айван ывăл кулянтарĕ
Хăйĕн ашшĕне.
Асилтерĕ чăркăш арăм
Мăшкăлтăк шывне.

14

Çурт-йĕрпе мĕнпур хуралтă
Несĕлне кăна юлать.
Ăслă арăм çеç — ку паллă —
Турă çырнипе пулать.

15

Кахаллансан —
Ыйха путан.
Тăрăшмасан —
Выçса пурнан.

16

Халалпа пурăнакан
Чун-чĕмне упрать ялан.
Тăрăшулăх пулмасан,
Çул çинчех вилсе выртан.

17

Çŷлти Турă шута илĕ,
Пулăшсассăн чухăна.
Çав çынна ун çитĕ пилĕ —
Манмĕ ыр тăвакана.

18

Хирĕçленине пăхмасăр,
Лăпкăн, виçерен тухмасăр
Хытă тыт хăв ывăлна,
Çын тăвас тесен ăна.

19

Çиллес этем вăхăтĕнче
Пĕр хĕрхенӳсĕр айăплантăр.
Хытармасассăн çиййĕнчех,
Кайран хăех вăл асапланĕ.

20

Енчен те ăсчах пулас тесессĕн,
Тăнла питленине.
Çын канашне пĕрмай ăша илсессĕн
Чăн тăвăн ĕмĕтне.

21

Мĕн чухлĕ шухăш упранать
Этем чун-чĕринче.
Анчах куллен пурнăçланать
Турă çырниййĕ çеç.

22

Этем пулăшура
Тĕл пулмĕ терт, хĕн-хур.
Юмарт çын пурнăçра
Ултавçăран маттур.

23

Турăран хăран пулсан,
Санăн пурнăç ырă, лайăх.
Кăмăл тулĕ, тумăн айăп,
Пӳлмĕ çул-йĕрне усал.

24

Ӳркенчĕкĕн алли măран:
Хăйне хăй пăхаймасть.
Сĕнсен тултарнă алтăра,
Ăна та тытаймасть.

25

Мăшкăллакансене хур кăтартсан,
Ахаль çынсен ӳсет ăс-хакăл.
Тӳр кăмăлли хăй айăпне туйсан,
Çакна вăл ăнланать алхапăл.

26

Ашшĕне çука хăвараканăн,
Амăшне килтен хăвалаканăн,
Çакăн пек ача пит çăмăлттай,
Намăс курăн унпала пĕрмай.

27

Пысăк шухăшлă пуплев
Саншăн, ывăлăм, пит кирлĕ.
Вăл çеç витĕмлĕ те вирлĕ,
Эс ăна пĕрмай итле.

28

Ытла чее-çке кӳнтелен:
Мăшкăлласа кулать судран.
Çут чăнлăха пĕрмай питлет,
Шап-шур тĕсрен тăвать хура.

29

Ялан патак çиет айван:
Ӳт-пĕвĕ пĕрмаях суранлă.
Кĕтместь вăл ыррине судран,
Мĕн ма тесен, унта çук танлăх.

XX

1

Эрехе пит иленсессĕн,
Çын чăрсăрланать.
Мăкатать вăл хĕрхенмесĕр
Çивĕч ăстăна.

2

Аслатиллĕ сас патшан,
Арăслан пекех вăл паттăр.
Эс ăна тарăхтарсан,
Ĕмĕр çылăхра пулатăн.

3

Айван çын тавлашура
Хăйне май хĕрӳленсен те,
Пăрăнма харкашуран
Чыслă-сумлăх кирлĕрех-тĕр.

4

Хĕлле кахаллансан,
Алла усса ларсан,
Çу кунĕнче хурланăн,
Пуш ĕмĕтӳ путланĕ.

5

Тĕпсĕр кӳлĕре пытаннăн
Тарăн шухăшĕ ăсчахăн.
Витĕр куракан кăна
Ăнланать йăлтах ăна.

6

Хĕрхенме пĕлнишĕнех
Çав çынна мухтаççĕ.
Чăнлăхшăн ĕçлекене
Кам курать хальхаççăн?

7

Кăлтăксăр çӳрет
Тӳрĕ çын ялан.
Кураççех рехет
Ачисем кайран.

8

Вырӑнӗ патшан пит ҫӳлл
Хӑрататть пурне те.
Усала хӑвалӗ, пӳлӗ,
Вичкӗн куҫӗпе те.

9

Кам пӗлтерӗ уҫҫӑн:
«Чун-чӗрем таса,
Кӑмӑл пулмӗ хуҫӑк,
Хӑратмасть усал?»

10

Тарасу пит улталать,
Тӗрӗс мар виҫен.
Ҫылӑха ҫапла кӗретӗн
Турӑ умӗнче.

11

Мӗнпе кӑсӑкланать
Ача шкулта чухне.
Вӑл кам пуласси не
Асчах йӑлтах чухлать.

12

Ҫивӗч хӑлхана та,
Сӑнакан куҫа та —
Ҫаксене йӑлт тунӑ
Тӗрӗс-тӗкӗл Турӑ.

13

Чухӑн пулас мар тесен,
Ӗҫлемешкӗн ан ӳркен.
Тулӑх пурнӑҫа куран,
Эс ыйха манса кайсан.

14

«Япали пит япăх»,— тет,
Тавара туянакан.
Урамрах, çынна курсан,
Урăхла сӳпĕлтетет.

15

Пур сан ылтăн-кĕмĕл,
Пур тем-тĕрлĕ пурлăх.
Анчах юп эс курăн
Ăсупа çеç ĕмĕр.

16

Ил кĕпине эс палламан çынран,
Ун майлă çын пулсассăн.
Саклат сĕнекенни кăна пулсан,
Çав çăкçăна[1] шанатăн.

17

Улталаса туяннă çăкăр
Малтанлăха пит тутлă пек.
Каярахпа сисетĕн хăвăрт:
Çăвар йăлт тулнăн чулсемпе.

18

Хуçалăх йĕркеленĕ
Канаш паракансем пулсан.
Татах вăл çирĕпленĕ,
Пакăлтакансене чарсан.

19

Чĕлхин чаракĕ çук çынпа
Ан хутшăн-ха шухăшламасăр.
Малтан мухтанĕ вăл санпа,
Кайран сутать пĕр вăтанмасăр.

[1] Çăкçă — хăй çине илекен.

20

Ашшĕ-амăшне ялан
Шелсĕр хурлакан ачан,
Чун çути сӳнет тӳрех,
Сивĕ, сĕм тĕттĕмлĕхре.

21

Васкаса туртса илсессĕн
Çыннăн пурлăх-эткерне,
Тем пекех кĕтсен те, эсĕ
Илтес çук пил сăмахне.

22

Ан кала-ха: «Эп тӳлетĕп
Кӳрентернĕшĕн ăна».
Шан Турра, Вăл çеç, сисетĕн,
Упрĕ санăн кунçулна.

23

Тĕрĕс мар виçсессĕн тарасу,
Çиллентерĕн эс Турра, асту!
Суйнăшăн çынна кире пуканĕ —
Пурăна киле ларса хурланăн.

24

Турăран пырать тĕллевлĕх
Чун-чĕресене ялан.
Умри çул начар е евĕк,
Кам çакна чухлать аван?

25

Пĕрмай тупа тăвать
Этем танатана лексен.
Каярахпа, хĕн-хур иртсен,
Темтепĕр шухăшлать.

26

Тăрă шыв çине кăларĕ
Тасамарлăха патша:
Çутă чăнлăха кăтартĕ,
Кӳрĕ усала типшар.

27

Çӳлти Туррăн хĕм çути
Ĕмĕр çыннăн чунĕнче...
Унпала этем утти
Тĕрĕсленĕ çул çинче.

28

Çутă чăнлăх, ырă кăмăл
Сыхлĕ патшана ялан.
Малаш кунĕ пулмĕ ăмăр
Халăхпа пĕрле утсан.

29

Чап-мухтавĕ çамрăксен —
Вĕрекен вăй-хал.
Кĕмĕл çӳçлĕ ватăсен —
Иксĕлми ăс-хал.

30

Ăш-чиккӳне сиенлетет суран,
Çапаканни хĕнет-тĕк вирлĕ.
Çак асапа тăнишĕн хирĕç,
Эс вăйлă яланах усал çынран.

XXI

1

Патшан чĕри шыв юххи евĕр,
Шав пăхăнать Çӳлти Турра.
Çул-йĕр хăрушă е пит евĕк —
Çаксем килеççĕ шав Уҫран.

2

Çул этемшĕн туйăнать
Куçĕ умĕнче тӳп-тӳррĕн.
Турă урăхла хаклать:
Чунсене курать вăл тӳррĕн.

3

Саккунлăха хисеплени,
Çут чăнлăха мала хуни,
Асап шав тӳсекен çынран та,
Пит кирлĕ ытларах Турра та.

4

Чыссăр çын нихçан тӳрленмĕ,
Мăнна хурĕ шав хăйне.
Ĕçĕ-хĕлĕ ун пĕр енлĕ,
Курмĕ çылăх сăлтавне.

5

Пуçаруллă çын ялан
Юп курасшăн тăрăшать.
Васкама юратакан
Юрлăхра çеç пурăнать.

6

Мул-пурлăха ултав чĕлхипеле
Пуçтаракан малтан йăпанĕ.
Кайран вăл вилĕм варкăщĕпеле
Кĕтмен çĕртен ӳксе йăванĕ.

7

Чыссăр çын хĕсĕрлени
Пырса çапĕ-ха хăйнех.
Чăнлăха хирĕçлени
Сиен кӳрĕ путсĕрех.

8

Улшăнчăк этемĕн çулĕ
Ясара çеç вĕрентет.
Кам çут чăнлăхшăн шав çунĕ —
Çав çын тупатех тивлет.

9

Чăркăш арăмпа ялан
Хӳхĕм пӳртре пуличчен,
Çуртăн тăрринче пĕччен
Пурăнсассăн та аван.

10

Чыссăр çын усал тăвасшăн
Таврари мĕнпур çынна.
Тусĕ, шел, унпа пуласшăн,
Пурпĕр вăл сутать ăна.

11

Усала айăпласассăн
Ахаль çын та ăнланать:
Кирлĕ вĕренӳ ăсчахшăн,
Вăл та çĕн пĕлӳ пухать.

12

Тӳрĕ çын сăнать, тĕпчет
Пӳтсĕрĕн çуртне пĕччен.
Еплерех унта куллен
Çухалать тивлет хуллен.

13

Чухăн нушине туйсассăн,
Курмăш-илтмĕше персен,
Хăв та, хĕн-хура лексен,
Пулăшу ниçта тупаймăн.

14

Вăрттăн панă парнепе
Вĕчĕлĕхе лăплатан.
Пĕрмай шăл хăйранипе
Тăшманна хаярлатан.

15

Чăнлăх çиеле тухсан,
Тӳрĕ çын пит савăнать.
Ĕмĕчĕ йăлт путлансан,
Усалли чунтан хăрать.

16

Пăрăнсассăн тĕп çултан,
Ăс-хална йăлтах çухатăн.
Вилнĕ çынсемпе пĕр тан
Манăç çырминче пулатăн.

17

Кам савăнма юратать,—
Çавă чухăна юлать.
Эрехе кам кăмăллать,—
Вăл та юрлăха путать.

18

Тӳрĕ çын лексен хĕне,
Улăштар-ха пӳтсĕрпе.
Уççăн калаканнине
Хăтарсамччĕ чейипе.

19

Çиллес те чăркăш арăмпа
Пĕрле пурăниччен,
Килен эс уçă сывлăшпа,
Пул пушхирте пĕччен.

20

Ĕмĕтленнĕ, кĕтнĕ пурлăх
Упранать килте ăсчахăн.
Айван çын çакна йăлт куртăр,—
Салатать ăна васкавлăн.

21

Ыр кăмăлпа чăнлăха
Упракан этем
Шырĕ пурнăçра вăй-хал,
Тупĕ чап, илем.

22

Хулана кĕрсен ăсчах
Аркатать мăн крепоçа,
Вăйлисем те хăш чухне
Чухлас çук пĕлӳ хакне.

23

Вырăнлă калаçакан,
Чыс-сумне шав сыхлакан.
Ӳкмĕ пурнăç авăрне,
Упрĕ хăйĕн чун-чĕмне.

24

Мăнкăмăллă вăрă-хурах,
Çынран пĕрмай кулать.
Каппайланса кайсан, вăрах
Виçесĕр мухтанать.

25

Ытла та сăхă пулнăран,
Хăй вилĕмне тупать наян.
Мĕн ма тесен, ун нихăçан
Алли ĕçе пит çыпăçман.

26

Выç куç çăткăнланать куллен,
Асап курать, хĕне лексен.
Тӳр чунлă çын мул парнелет,
Ачи-пăчи курать рехет.

27

Таса мар çын чӳклени
Пит киревсĕр япала:
Уйрăмах чееленни,
Усал шухăшлă пӳлни.

28

Ултавçă кӳнтелен пĕтет,
Хăй суйнине пула.
Тĕрĕслĕхпе пурнан этем
Чысне упрать ялан.

29

Пуçтах сăн-питĕнче
Чарусăрлăх куратăн.
Таса çын çулĕнче
Çут чăнлăх çеç тупатăн

30

Пĕлӳ, ăс-хакăл çулĕ,
Ват çыннăн ыр пехилĕ,
Турра ан тăр çеç хирĕç,
Вара çаксем йăлт пулĕç.

31

Хатĕрле урхамахна
Çапăçу пуçланиччен.
Çĕнтерӳ, чухла çакна,
Пулĕ Турă çырниче.

## XXII

1

Ырă ят кирек хăçан
Лайăх теççĕ нухратран.
Ылтăн-кĕмĕл нихăçан
Чап-сумпа танлашайман.

2

Пуян çын пурнаймĕ уйрăм,
Тĕл пулать вăл кĕлмĕçе те.
Ма тесессĕн, иккĕшне те
Çутă кун кăтартнă Турă.

3

Аслă-тăнлă çын курать те
Пытанать-ха инкекрен.
Айванни çула тухать те
Тертленет нуша-хĕнре.

4

Турăран эс хăрасассăн,
Пурнăçра йăваш пулсан,
Ырлăх-сумлăха тупатăн,
Кунçулу тĕллевлĕ сан.

5

Хĕн-хурлă, серепеллĕ çул
Каварлă та усал çынсен.
Таса чунна упрас тесен,
Пĕрмай эс пăрăн вĕсенчен.

6

Тĕрĕс çул çине тăрат
Яш çынна эс çамрăклах.
Пăрăнмасть вара кайран
Ватăлсан та вăл унран.

7

Пуян çын пăхăнтарать
Хăть хăçан та чухăна.
Кĕтмелле илекене
Кăларать вăл чурана.

8

Тĕрĕсмарлăха аксан,
Инкекне хăвах выран.
Çилленсе пурăнакан
Çиларманĕ лартайман.
(Ыр сунса паракана
Çӳлти Турă юрататать.
Кăлтăкне те курсанах,
Вăхăтра Вăл пулăшать).

9

Ырă кăмăллă çынсен
Яланах кунçулĕ пиллĕ.
Чухăнсемшĕн, кур, вĕсен
Çăкăрĕ пур ытлă-çитлĕ.

(Ырлăх-пурлăх паракан
Çĕнтерӳ те чыс тупать.
Чунсене пăхăнтарать,
Хăйне майлă çавăрать).

10

Тӳрккес çынна ялан
Сирсем эс хăв çумран.
Санран вăл пăрăнсан,
Юлмасть харкашакан.

11

Камăн чунĕ тап-таса,
Ун чĕлхи те çепĕç питĕ.
Патшана вăл кӳрĕ витĕм,
Пурнĕ хаклă тус пулса.

12

Турă куçĕсем пит çивĕч,
Шав пĕлӳлĕхе сыхлаççĕ.
Саккуна кам тăрĕ хирĕç?
Çав çынсем инкек кураççĕ.

13

Урама тухмасăрах
Сăмахпа вылять услап:
«Площадьре пур арăслан,
Вăл мана тытса çурать!»

14

Аскăн çын чĕлхи-çăварĕ,
Авăр евĕр, питĕ тарăн.
Кам Турра çиллентерет,
Çав унта ӳксе вилет.

15

Айванлăх çӳресессĕн,
Яш çамрăк çумĕпе,
Ăна час хӳтереççĕ
Чĕр хулă вăйĕпе.

16

Кам чухăна хур тăвать,
Çавă пурлăх пуçтарать.
Кам пуяншăн вăй хурать,
Çавă юрлăхра пурнать.

17

Пуçна пĕксе тăнла пĕрмай,
Итле ăсчахăн сăмахне.
Ăша хывсан вĕрентнине,
Чуну лăпланĕ хăйне май.

18

Пĕлӳ кăна сана йăпатĕ,
Енчен те эс ăна упран пулсан.
Халтан кайсан та, ун хăвачĕ,
Çулпуçĕ евĕр, пулĕ-ха ялан.

19

Асра тытсам вĕрентнине,
Паян татах, ак, ăс парасшăн.
Ăсчах пĕрмай çут ĕмĕтне
Çӳл(ти) Турăпа çыхăнтарасшăн.

20, 21

Сана виç хут çырса пĕлтертĕм,
Ӳкĕтлесе, канаш парса.
Куллен-кун тăрăшса вĕрентрĕм:
Пурăнмалла Турра савса.

Ăна кăна шанас пулать,
Ăс-хакăл çивĕч мар-ха Унсăр.
Пĕчченлĕхре сахал хăват,
Тĕрĕслĕхӳ ан юлтăр сумсăр.

22, 23

Чухăн çын ахаль те мĕскĕн,
Пур-çук пурлăхне ан тĕкĕн.
Хапхаран кĕрес чухне
Ан вăрла ун укçине.

Ма тесессĕн, Аслă Турă
Хӳтĕлет ăна пĕрмай.
Чунĕ-чĕмĕ çаратуçăн
Курас çук нихçан çăтмах.

24, 25

Ан туслаш çиллес çынпа,
Харкашма тупать сăлтав,

Е час тарăхаканпа
Калаçаймăн-ха чунтан.

Вĕсем пек эс пурăнсан,
Тĕлейне йăлт çухатан:
Инкекне хăвах тупан,
Чунна хăвăрт йăлмаклан.

26, 27

Çын парăмне пĕлмесĕрех,
Çăка кĕме хушмаççĕ.
Çăмăлттайсем кăна ирех
Васкавлăн ал параççĕ.

Курнасшăн теветкеллĕ,
Анчах укçу сан пач та çук.
Пурнас тесен йĕркеллĕ,
Вак-тĕвексемшĕн çеç ан çун.

28

Авалхи аçун çĕрне
Эс упра.
Ан пăссам ун чиккине
Пурнăçра.

29

Ĕçре вăр-вар çынна курсассăн,
Тӳрех эс ан мухта, тархасшăн.
Вăл пуççапать шав патшана,
Асăрхамасть ахаль çынна.

## XXIII

1, 2

Хуçапа пĕрле ларсассăн
Мăн сĕтелĕн хушшине,
Лайăх, тĕплĕн сăнамасăр
Ан тутан ун çимĕçне.

Кирлĕ-ха апачĕ, унсăр
Вăй-халу хавшать выççан.
Çăткăн çын çавах та усă
Кураймасть, пит сăхлансан.

3

Сурчăкна та юхтарать
Питĕ илĕртӳллĕ çимĕç.
Асăрхан, çук унăн симлĕх,—
Илемпе çеç улталать.

4, 5

Пуш ĕмĕтпе ан хăпартлан,
Пуятăп эп часах тесе.
Пит илĕртсен те шухăшсем,
Вăл кăлăх пулнине туян.

Ав, ăмăрткайăк та умрах
Вĕçет-ха — пур вăй-хал.
Анчах та çухалать часах —
Мул шыракан та çавнашкал.

6, 7

Кĕвĕç чунлă çын калать-ха:
«Çи ăна та çи çакна».
Сăмаххи ун çапларах-ха,
Юратмасть хăй пач сана.

Ан тутан ун çимĕçне,
Ан ăмсан пуянлăхне.
Сăхă çыншăн, ма тесессĕн,
Пулăн ĕмĕр ют çын эсĕ.

8

Хăнара-ха сăйланатăн,
Хуçана хĕрсех мухтан.
Апатне, ак, тутанан та,
Урама тухсан... хăсан.

9

Хăвăн ăслă шухăшна
Ан пĕлтер çав айвана.
Вăл ăна пач хакламасть,
Ăнланма пултараймасть.

10, 11

Тăлăх-туратсен çĕрне,
Авалхи чикĕсене,
Улăштарăн та, кайран
Ĕнсӳне хăвах хыçан.

Ма тесессĕн, вĕсене
Хӳтĕлет пĕрмай Тӳре.
Санăн йăнăшусене
Тӳрлетет кĕрешӳре.

12

Тăнла пĕрмай
Ыр сăмаха:
Пĕлӳ пухма
Хăвра туп хал.

13, 14

Айăпа кĕрсен ача,
Ним пулман пекех ан пурăн.
Хулăпа ăна кăшт çап,
Иртĕхмест вара вăл урăх.

Патакна тутаннипех
Несĕлӳ вилмест тӳрех.
Йăнăшне кăна туйтарĕ,
Тамăкран ăна хăтарĕ.

15, 16

Ывăлăм! Эп савăнатăп,
Эс пĕлӳшĕн тăрăшсан.

Куллен-кун вăй хунăран,
Ăс-хална анлăлататăн.

Тĕрĕс çул шыранăран,
Кăмăл-туйăм ĕнтĕ евĕк.
Ут, эппин, мала тĕллевлĕн,
Туп телей çут чăнлăхра!

17, 18

Çылăха кĕрекене
Ан ăмсантăрччĕ чĕрӳ.
Çӳлти Турă кулленех
Шиклентертĕр çынсене.

Ма тесессĕн, пурнăçра
Шанчăк упранать ялан.
Ырлăх-çăтмаха кайран
Тĕл пулан пуласлăхра.

19

Ывăлăм, мана тăнла:
Мала хур ăс-хакăла.
Хăв чĕрӳн сӳнми вăйне
Антăлтар тӳр çул енне.

20, 21

Эрехпе киленекен,
Аш-какай шав çиекен
Саншăн ют çынсем пек пулччăр,
Аташса вĕсем шав супчăр.

Яланах çăткăнлансан,
Кĕленче ăшне путсан,
Çĕтĕк-çатăка тухатăн,
Ят-сумна йăлт çухататăн

22

Аçуна сума сусассăн,
Курăн ĕмĕр пархатар.

Аннӳне — вăл ватăлсан та —
Çынлăхран эс ан кăлар.

23

Ăс-хална, вĕрентĕвне
Нихăçан ан сут.
Шав ӳстер те пĕлĕвне
Чăнлăхпа çеç ут.

24

Тӳрĕ ывăлĕпе ашшĕ
Мухтанать пур кăмăлтан.
Ма тесессĕн, вăл ашшĕ
Ăслă пулнăран ялан.

25

Савăнать аçу чунтан
Эс маттур пулнишĕн.
Хĕпĕртет аннӳ те сан
Ĕмĕчĕ тулнишĕн.

26, 27, 28

Ывăлăм! Ирĕкĕмрен,
Ырă енлĕ йĕркерен
Эс хăв тĕллĕнех ан тух,
Ман çине пăхса, ăс пух.

Ма тесессĕн, çул çинче,
Е таса çăл юппинче
Тĕл пулатăн аскăна —
Хурлăх кăтартакана.

Илĕртет вăл, куç пăвать,
Çынсене аташтарать,
Хурах евĕр, вĕскĕртсе
Саккуна шав пăстарать.

29, 30

Каман килĕнче йĕреççĕ,
Пĕр сăлтавсăр аманаççĕ,
Чашăк-тирĕк çĕмĕреççĕ,
Йынăшаççĕ, харкашаççĕ?

Каман куçĕсем хĕп-хĕрлĕ?
Каман ĕмĕр питĕ хĕнлĕ?
Паллă ĕнтĕ, ху чухлатăн:
Эрехе юратаканăн.

31, 32, 33, 34, 35

Илĕртӳллĕ-çке эрехĕ,
Хĕмленет те чашкăрать.
Ĕçсенех сăнна хĕретĕ,
Е аспид пекех сăхать.

Куçусем ясаррăн пăхĕç
Ют хĕрарăмсем çине.
Чун-чĕмӳ те пулĕ сăхă,
Манăн сапăрлăх мĕнне.

Хăвна туйăн тинĕсри пек,
Карапу хум ăшĕнче.
Мачта тăрринче, ав, типĕ,
Çывăран ун вĕçĕнче.

Хăв пуплен: «Хытах хĕнерĕç,
Пурпĕр ним те ыратмасть.
Патак çирĕн, теç, ĕнер эс,
Ман ӳт-пӳ çакна туймасть.

Вăрансан, ун-кун пăхатăп,
Мĕн кĕтет мана каллех?
Паллă ĕнтĕ, йалт чухлатăп:
Илĕртет татах эрех».

## XXIV

1, 2

Эс ан тăрăш кĕвĕçмешкĕн
Хаяр чунлă çынсене.
Сивлесе вĕсен çулне,
Вăй-хал пух хĕнрен иртмешкĕн.

Пусахлас, ирĕксĕрлес —
Çавăн пек усал тĕллевĕ.
Унпа çеç утсан пĕрле,
Пурăнаймăн эс пит евĕк.

3, 4

Хуралтă-çурт йĕркеленет,
Хуçи ĕçчен пулсан.
Куллен-кун вăл çирĕплен,
Аса мала хурсан.

Килĕшӳре, тăнăçлăхра
Ӳссех пырать тупра.
Хушăнакан·пуянлăхра
Çемье телей курать.

5, 6

Çирĕп кăмăллă этем
Вăйлă хăйĕн ăсĕпе.
Вăл ăна çирĕплетет
Куллен-кун ĕç-хĕлĕпе.

Хисеплет те пĕрлĕхе,
Пит сивлет пĕчченлĕхе.
Çынсемпе вăл канашлать,
Анăçу вара тупать.

7

Ас-хакăл шайĕ
Ытла та пĕчĕк-çке айванăн.

Пĕлӳ пухасшăн ăнтăлсан та,
Çук унăн шанчăк.

8

Усал çыннăн шухăшĕ
Палăрать куллен.
Халăх терчĕ пухăнĕ,
Чакĕ ун тивлет.

9

Çылăха кĕрекенсен
Ӗмĕт-шухăшĕ тискерлĕ.
Вĕсене пула çынсен
Пурнăçĕ пĕрмай синкерлĕ.

10

Ахăрсамана çитсен,
Чун-чĕмӳ хавшаклансан,
Чухăн пулнăран сисен:
Чăн та, вăй сахал çав сан.

11, 12

Çăл-ха сивĕ вилĕмрен
Тĕрмене лекнисене.
Пĕтме пӳрнĕ çынсенчен
Пăрăнма шутлатăн, тен?

Калăн-шим: «Илтмен. Курман».
Çынсем пĕлмĕç тетĕн-им?
Çӳлти Турă, эс ăнлан,
Хаклĕ сан ĕçне кайран.

13, 14

Уйăрса сар карасран,
Ывăлăм, пылна тутан.
Хаклă апата ялан
Кирек кам савса мухтать.

Пыл пекех çынри ăс-хал,
Эс унпа-тăк — чакмĕ хал.
Шанчăку та хăвăнпах,
Малашу — хавасларах.

15, 16

Чыссăр чун, санран ыйтатăп,
Усал шухăшлă пулса,
Таса çын çуртне ан ват-ха,
Юп ан кур, хĕн кăтартса.

Çичĕ хут типшар чăтсан та,
Тӳрĕ çын вăй пуçтарать.
Иртĕхнишĕн çул-йĕр санăн
Вĕçленет кĕç тамăкра.

17, 18

Санăн тăшману ӳксен те,
Ăнсăртран вăл такăнсан,
Эс ан савăн-ха, пĕр енлĕн
Çĕнтернишĕн ан мухтан.

Ма тесен, пурне те Турă
Йăлт курса, пĕлсе тăрать.
Тăшману тӳссен те хурлăх,
Вăл ăна та каçарать.

19, 20

Ан тарăхтар усаллăха,
Пит ан ăмсан чыссăрлăха,—
Вĕсен çул-йĕрĕ илĕртӳсĕр,
Вĕсем нихçан курмаççĕ ӳсĕм.

Усалшăн ют пĕрмай малашлăх,
Тискерлĕхпе туслашнăран.
Чыссăррисен те çук пуласлăх,
Ултавлăха пуççапнăран.

21, 22

Ывăлăм, эс Турăран та,
Патшаран та шав чĕтре.
Пăлханакансем пулсан та,
Пăрăн вĕсенчен тӳрех.
Ăнкараймăн, вĕсенчен
Тухĕ те хĕн-хур сасартăк,
Хăтăлаймăн вилĕмрен,
Кăнса выртăн эс ниммаршăн.

23, 24, 25

Ăсчахсем çапла каланă:
Икĕ енлĕ эс ан пул.
Тӳресем вăлтса ыйтсан та,
Хăвăн шухăшупа юл.

«Айăпланакан суймасăр
Кăтарту парать»,— тесен,
Тĕрĕс çул шыракансем
Чăтаймаççĕ ылханмасăр.

Ултава питлекенсен
Халăхра туссем йышланĕç.
Чăнлăха хисеплесен,
Хура вăй ялан путланĕ.

26

Чунне сутман çынна,
Сăмах тытакана
Ĕçре пит юратаççĕ
Юлташĕсем хальхаççăн.

27

Пурнăçăн йĕрки çапла-ха:
Уй-хирте, картишĕнче
Эс малтан вĕçле ĕçе,
Çурт çĕкле кайран вăраххăн.

28, 29

Çывăх пĕлĕшне судра
Кирлĕ-шим, юлташ, сутма?
Пĕр сăлтавсăр хурласан,
Юлăн-ши хăв тап-таса?

«Хăй мĕнле те, эп çапла,
Пĕлтĕр хаклама мана,» —
Ан аташ-ха айванла,
Хисепле малтан хăвна.

30, 31, 32, 33, 34

Иçĕм сачĕ витĕрех тухатăп,
Çу кунне йăлт ас туса:
Ак кунта лўппер этем тăратчĕ,
Пакăлтин ĕçне пăхса.

Пăх та кур! Ытла кичем тавралăх,
Юхăннă хўми кашнин.
Ашкăрать вĕлтрен çын пытанмалăх,
Шухăшларăм эпĕ тин.

Чунăм-чĕремпе йăлтах ăнлантăм,
Юлхавсем вĕрентрĕç çав.
Пит хăпартланатчĕç,кăшт вăлтсан та:
«Ўркенместпĕр-ха пачах.

Кăшт кăна-ха çывăратпăр,— тетчĕç.—
Тĕлĕрсе илни аван.
Каннă хыççăнах, тăрсан, ĕçлетпĕр,
Çакна курăн ак хăвах...»

Чăн та, чухăнлăх килет васкавлăн,
Вăл кĕтсе тăмасть нихçан.
Кахалсен çуртне уçать те алăк,
Тĕпелрех ларать ялан.

## XXV

1

Соломон хайлавĕсен
Çук вĕçĕ-хĕрри — пит илĕртеççĕ.
Езекин ăсчахĕсем
Çак каларăшсем те унăн, теççĕ.

2

Туррăн чапĕпе мухтавĕ
Упранать-ха вăрттăнлăхсенче.
Пĕрмаях ăна тĕпченĕçем
Патшасен чур сумлă тавĕ.

3

Аслă çĕр ытамĕнче
Тӳпен çӳллĕшĕ пит анлă.
Тĕпчесессĕн те, ăнланмăн
Патшасен чунне веçех.

4

Кĕмĕлне йăлт уйăрсассăн
Тĕрлĕ тĕслĕ хутăшран,
Пухăн эсĕ мул пĕр савăт,
Чухăн пулмăн нухратран.

5

Суя чунлă усала
Уйăрсассăн патшаран,
Çирĕплетĕн престола,
Юп тупатăн чăнлăхра.

6, 7

Патша çывăхĕнче нихçан
Хăмпăланса ан мăнаçлан.
Ят-сумлă çынсемпе тăрса,
Кĕме пултарăн намăса.

«Кил кунтарах,» — тесе чӗнсен,
Пуянсемпе тăр юнашар.
Хăй тӗллӗнех килмест хисеп,
Кирек ăçта та кирлӗ шай.

8

Тавлашăва кӗмешкӗн ан васка
Сăлтавсăр, кăлăхах.
Тухсассăн çиеле тупăшакан,
Мӗскер эс калăн-ха?

9, 10

Сутлашура хӗрсе кайсан,
Вăрттăнлăхна йалт ан пӗлтер.
Санпа пӗрмай тупăшакан
Çакна чухласшăн çунтăр тек.

Енчен те урăхла пулсан,
Намăсланан та терт куран.
Суя сăмах сарăличчен,
Хăвна тытма вӗрен куллен.

(Çирӗп туслăх, юрату:
Пурăн теççӗ эс тату,
Хăв ятна упрас тесен,
Ан тухсамччӗ виçерен).

11

Çутă кӗмӗл савăтра
Ылтăн панулми тупатпăр.
Килӗшӳллӗ сăмахра
Чун тасалăхне куратпăр.

12

Килӗшет ăсчах сăмахӗ
Итлекенсене,
Ылтăн ункă пек, ахах пек,
Сапалать хӗмне.

13

Тырă вырнă чух юр çунă евĕр,
Ултава мала хуран сăмах,
Хуçипе ыр чунлă элчĕ евĕк,
Пултарать ăна савăнтарма.

14

Çил вĕрсессĕн, ăмăр пĕлĕт
Çумăр çутарман пекех.
Чухăн мухтанать хăй тĕллĕн:
Пуйăп эп, тесе, кĕçех.

15

Улпут та çупăрлать
Хăйне итлекене.
Йăваш чĕлхе татать
Чуралăх сăнчăрне.

16

Тупрăм, тетĕн, пыл, тутан,
Çи ăна тăраниччен.
Анчах ан ĕмĕтсĕрлен,
Виçерен иртсен — хăсан.

17

Тусун килне кĕрсе ялан
Сăлтавсăрах чăрмантарсан,
Калаçуран йăлăхнăран,
Вăл пăрăнма пуçлать санран.

18

Мăлатукăн, хĕçĕн, çивĕч уххăн
Ултава чармашкăн çук хăват.
Тус текен тусне сутать те туххăм,
Ним пулман пек пурăнма хăять.

19

Катăк шăлупа куран-и усă,
Халсăр урупа утайăн-ши?
Пĕлĕшӳпеле пурнатăн туслăн,
Терт-хĕнре ăна шанайăн-ши?

20

Сурана уксус сапакана,
Тунсăхланă чух юрлакана
Танлаштарăн, сивĕ кун çитсессĕн,
Тумтирне хывса перекенпе эс.

(Шĕкĕ çиййĕ йывăçа,
Кĕве — çĕнĕ тумтире.
Хурлăхĕ пуссан пуçа,
Аманать-çке чун-чĕре).

21, 22

Тăшману апат ыйтсассăн,
Ан хыткукарлан — çитер.
Е вăл шывшăн антăхсассăн,
Хĕрхенмесĕрех ĕçтер.

Чунĕ ун вутпа çунать
Кулленхи ыр ĕçӳсемшĕн.
Çӳлти Турă та хисеплĕн
Тав тăвать сана, хаклать.

23

Çурçĕр пĕлĕчĕ пĕрмай
Илсе килĕ сивĕ çумăр.
Пач кĕтсе тăман сăмах
Тӳрĕ çыншăн пулĕ сумсăр.

24

Чăкăлтăш арăмупа
Пысăк пӳртре пурниччен,

Ĕмĕр ĕмĕрле пĕччен
Кĕтесре, мачча çинче.

25

Сивĕ шыв, чăнах та, симлĕ,
Ăш хыпсан, чун ĕшенсен.
Ыр хыпар та питĕ кирлĕ,
Эс ăна темччен кĕтсен.

26

Аркатнă çут çăлкуçăн
Пăтраннă пек тăп-тăрă шывĕ.
Тӳр чунлă çын, ӳксен те, шырĕ
Тĕрĕслĕхе хăюллăн.

27

Пылшăн çăткăнланăн питĕ
Çиейместĕн-ха нумай.
Сĕмсĕррĕн хуçаланни те
Хăв шутланă чап-сум мар.

28

Ишĕлсен йăлтах хула,
Çирĕп стенисем те çук-çке.
Халсăр çын имшер ялан,
Ăнтăлусăр унăн чунĕ.

XXVI

1

Тăмсай чыс-чапшăн ăнтăлни,
Ĕренкерен йăлтах тухни —
Çулла шур юр вĕлтĕртетни пек,
Вырма тухсассăн пăр çуни пек.

2

Çерçисем пăрр! вĕçсе кайнăн,
Вирхĕннĕн чĕкеç çӳле,
Кăлтăк-айăп пулмасассăн,
Çын ылханĕ сирĕлет.

3

Чăпăркки — лашашăн,
Сар йĕвен — ашакшăн,
Патакки те кирлĕ
Чылай чух айваншăн.

4

Ăссăр çыннăн ыйтăвне
Кирлĕ мар хуравлама.
Пуçлăн, хăв сисмен чухнех,
Унăн евĕр курăнма.

5

Айван çын пĕлменнине
Кирлĕ мар уçса пама.
Пуçлĕ, хăй сисмен чухнех,
Ăсчах евĕр курăнма.

6

Тăмсай хутне кĕрсессĕн,
Сисмесĕрех типшар куран.
Ун чух кунçул илемсĕр,
Нуши те вăйлăрах санран.

7

Катăккин ăслав-хайлавĕ
Хăйне евĕр ĕренкесĕр.
Шăп çапла уксах-чăлахăн
Урисем утмаççĕ танлăн.

8

Усă пур-и чулравра
Ылтăн, кĕмĕл упрасассăн?
Тăрри шăтăкрах çынра
Кирлĕ-ши чап шырамашкăн?

9

Ӳсĕр çын пит йĕплĕ кӳкене,
Чечек пухнă пек, татасшăн.
Шăп çапла тăмсай чылай чухне,
Аслă хайлавсем каласшăн.

10

Ырă çыннăн ĕçĕ-хĕлĕ
Пурнăçланĕ-ха хăй тĕллĕн:
Пулăшĕ вăл айвана,
Парне парĕ чухăна.

11

Малтан хăснă выраннех
Таврăнать-ха йытă.
Ассăр çын та хыттăн
Пĕлтерет кив шухăшнех.

12

Хăйне ăслă теекен те
Пурнăçлаймĕ сăмахне.
Айвана эс ĕненмен те,
Чăн тăвать сан ĕмĕтне.

13

Наян этем, пӳртре ларсах,
Çине-çинех пит хăратать:
«Енчен те урама тухсан,
Мăн арăслан тытса çурать!»

14

Алăк, çекĕле пула,
Хупăнать те уçăлать.
Вырăнĕ çинче услап
Ир те каç йăваланать.

15

Мĕшĕлти иккен услап,
Тĕлĕнтерĕ çынсене,
Куркине тытсан алла,
Шыв ĕçме те ӳркене'

16

Чĕнменнине пула кахал
Ытла та ăслăн курăнать.
Хирĕçлеймест вăл ăсчаха,
Шăп çавăнпа çеç шăп тăрать.

17

Кирлех-ши тĕк тăран йытта
Туртмашкăн хăлхинчен сăлтавсăр.
Ют çын хирĕçĕвне курсассăн
Кирлех-ши-ха кĕме хута?

18, 19

Асран тайăлнă пекех
Курнăçланĕ юлташу.
Çулăм, вилĕм витĕрех
Вĕççĕр шырăн пулăшу.

Пит улталĕ вăл сана,
Куртăрччĕ тесе типшар.
Ĕмĕчĕ путлансанах,
Эп шӳтлерĕм, тет, каçар.

20

Вучĕ пулмасассăн,
Çулăмĕ сӳнет.
Элек сармасассăн,
Хирĕçӳ пĕтет.

21

Кăмрăкĕ — вĕришĕн,
Вучĕ — вучаххишĕн,
Çатăркка этем шав
Хирĕçӳ чĕртесшĕн.

22

Элекçĕсен сăмахĕ
Пĕришĕн пыл пекех.
Чунне кĕрсе, чăрмавсăр
Сăхлантарать иккен.

23

Тултарсассăн кĕмĕле эс
Таса мар тăм чашăка.
Вĕчĕлĕх хупланă пек-çке
Чи хĕрӳллĕ сăмаха.

24

Сар çу пек чĕлхипе
Курнăçланать тăшман.
Анчах та ĕçĕпе
Сиен тăвать ялан.

25

Ытла та çепĕç ун чĕлхи,
Анчах ăна ан шан.
Сăмахĕнчен пулать хуйхи,
Çич хут куратăн шар.

9. Заказ № 810.

26

Курайманлăх пит пытанчăк
Тĕл пулсан та куçа-куçăн.
Халăх умĕнче сасартăк
Ун çилли тухать яр-уççăн.

27

Çыншăн шăтăк кам алтать,
Çав унта кĕрсе выртать.
Кам чулпа пеме хăять,
Çав хăех инкек тупать.

28

Суеç чĕлхе кирек хăçан,
Сăлтав тупса, çынна йĕплет.
Йăпăлтатма юратакан
Влаç тытăмне йăлт пĕтерет.

## XXVII

1

Ĕмĕтленни пулать ыран,
Тесе сăлтавсăр ан мухтан.
Мĕн сиксе тухĕ-ха кайран,
Çавна пĕлмесĕрех юлан.

2

Ĕçне кура чыслаччăр
Ялан çынсем сана.
Чĕлхӳ пулсан вылянчăк,
Çухатăн ят-сумна.

3

Йывăр мăн чула йăтма,
Йывăр хăйăр пуçтарма.
Вĕсенчен те йывăр питĕ,
Усала памашкăн витĕм.

4

Тарăхун та пур-ха вĕçĕ,
Чарăнать-ха çилĕ-вĕчĕ.
Кĕвĕçекене кăна
Хăть такам та парăнать.

5

Уççăн суяна питлен-тĕк,
Хăваншăн аван.
Вăрттăн юратнин илемĕ
Çывăх ултава.

6

Таса туйăмлă çынсен
Килĕшӳллĕ-ха ӳпкевĕ.
Шав суйма хăнăхнисен
Чуптуни те... сăхнă евĕр.

7

Тутă çыншăн пыл карасĕ,
Эрĕм евĕр, йӳçĕ, теççĕ.
Хытнă çăкăр, выçăхсассăн,
Кулачран та ирттерет-çке.

8

Кайăк ăшă йăвинчен
Уйрăлнă пекех сасартăк,
Çыннăн, ют çĕре лексен,
Шухăш-туйăмĕ арканчăк.

9

Тĕрлĕ тĕс, пылак пирус
Савăнтарĕ чĕрене.
Вăхăтра пĕртен-пĕр тус
Парĕ ырă канашне.

10

Тусна та, унӑн аншӗне те
Йывӑрлӑхра эс ан пӑрах.
Вӗсемпеле хӗне ҫӗнетӗн,
Юлмастӑн нихӑҫан хӑрах.

Пулӑшӑвна вӗсем манмаҫҫӗ,
Енчен пулсан хӑв хурлӑхра.
Сана вӗсем те ал параҫҫӗ
Тӑвансенчен те маларах.

11

Ывӑлӑм! Сан ӑсупа
Савӑнтӑр чӗремҫӗм ман.
Усал ят саракампа
Пӗлӗп вирлӗн ҫапӑҫма.

12

Ӑслӑ-тӑнлӑ ҫын сисет те
Пытанать терт-нушаран.
Айванни сӗмсӗрленет те
Тухаймасть-ха хурлӑхран.

13

Саклат сӗнекенни ҫумра тӑрсан,
Ун кӗпине илсем эс сутӑҫран.
Вӑл саншӑн ют пулсан та,
Ҫав ҫӑкҫӑна шанатӑн.

14

Куҫне уҫнӑ-уҫманах
Хӑй тусне мухтакана
Танлаштарӗҫ усалпа,
Ыр ята варлакампа.

15, 16

Çумăр çунă чух тумла
Вĕçĕмсĕр пăт-пат тумлать.
Чăркăш арăм шăп çапла
Чарăнмасăр вăрçăшать.

Çынсенчен çак кăлтăка
Пытарни те кăлăхах.
Çакăн евĕр чылай чух
Çил çулне пӳлме май çук.

Çакăн евĕр аллуна
Пытарсан та хăв хыçна.
Асилтерĕ тăтăшах
Хăй пурри çинчен сана.

17

Тимĕр тимĕре хăйрать те
Çивĕчлĕх татах ӳсет.
Çын çынпа шав сăмахлать те
Туйăмне вичкĕнлетет.

18

Смоква йывăççине хураллакан
Вăхăт çитсен çырлаллă пулĕ.
Хăй хуçине куллен-кун упракан,
Кирек хăçан та пурнĕ сумлă.

19

Ӳкерĕнет пĕр улшăнмасăр
Сăн-пит шыв тĕкĕрĕ çине.
Этем чĕри те çавăн майлă,
Шав туртăнать çынсем патнех

20

Аваддон тата чĕр тамăк
Тăранма пĕлмест нихçан.

Выçă куç çухатĕ намăс,
Мулшăн ĕмĕр çуннăран.

(Сĕмсĕр çын, чăнах та, пуçсăр,
Куçĕ ирсĕррĕн пăхать.
Турă умĕнче чарусăр,
Çавăншăн хăй терт курать).

21

Шăратакан çурт — çут кĕмĕлшĕн,
Хаклă, сарă ылтăнĕ — вучахшăн.
Шăп çапла çынсем те ĕмĕтлĕ:
Ыр сăмах вĕсемшĕн халь ахах пек.

(Саккуна хирĕçлекенĕн
Усал шухăш чĕринче-мĕн.
Чăнлăхшăн кĕрешекен
Çут пĕлӳ шырать куллен).

22

Кашни килĕ яланах
Хăйĕн кисĕпне шырать.
Ăс парсан та айвана
Вăл шутланинех тăвать.

23, 24, 25, 26, 27

Выльăх-чĕрлĕх ан чирлетĕр,
Лайăх пăх эс вĕсене.
Кĕтӳре ялан çӳреччĕр,
Ӳстерсе хăйсен йышне.

Ылтăн-кĕмĕл ĕмĕр пулмĕ,
Мĕн пурри пĕтет часах.
Влаç ламран лама шав куçмĕ,
Пурнăç тăрĕ улшăнсах.

Шăннă çĕрĕ ăшăнсассăн,
Симĕс курăкĕ шăтать.
Çĕр çынни кайран хавассăн
Утă, улăм пуçтарать.

Пулĕ унăн ытлăх-çитлĕх:
Кĕрĕк — сурăх тирĕнчен,
Аш-какай сутса çĕр илĕн,
Пухăн тырпула çуллен.

Ялан кирлĕ перекетлĕх,
Ӳстĕрччĕ тесен нухрат.
Сĕчĕ качакан çитет-ха,
Хатĕрлес тесен апат...

## XXVIII

1

Усал хăй мĕлкинчен хăрать,
Унран вăл шикленсе тарать.
Тӳр чунлă çын хăюллă, çирĕп,
Кĕрешĕ, арăслан пек, вирлĕ.

2

Çĕршыв саккунлăхне пăссан,
Пуçсăррисен эшкерĕ ӳсĕ.
Ас-хакăла мала хурсан,
Тертленмĕ халăх, пулĕ ӳсĕм.

3

Чухăн çын ларса влаçра
Хĕсĕрленĕн вăйсăра,
Шалкăм çумăрĕ çапла
Юхтарать çĕн тыр-пула.

4

Саккунран пăрăнакан
Таса мар çынна мухтать.
Чăнлăха юратакан
Вĕсене пит тарăхать.

5

Çынна усал сунакансем
Тĕрĕслĕхе пач ăнланмаççĕ.
Турра чунтан шанакансем
Пурне те лайăх ăнкараççĕ.

6

Чухăнсен чун-чĕмĕ ырă,
Кăлтăксăр пурăннăран.
Виçерен тухать пуян,
Кăтартать çынна хĕн-хурлăх.

7

Ывăлу, пĕлӳ пухсан,
Пăхăнать саккунсене.
Пурлăха салатакан
Намăс кӳрĕ ашшĕне.

8

Хуçалăха сарса пырсассăн,
Пуянлăху ӳсет.
Çукçынсене те пулăшмашкăн
Укçу-тенкӳ çитет.

9

Турă саккунне пач пăхăнмасăр
Пурăнать пулсан этем,
Кĕлĕ сăмаххи çав çыншăн майсăр,
Çук ун чунĕнче илем.

10

Тӳр çынна кам астарать,
Çав суялăха путать.
Камăн кăлтăк-сăлтăк çук,
Çав этемĕн ырă чун.

11

Ăсчах пек курăнма пĕлет
Пуян пур халăх умĕнче.
Анчах ăна хайлавĕнче
Çук çын ялан питлет.

12

Çутă чăнлăх çĕнтерсессĕн,
Уявра ĕçчен ташлать.
Хĕнлĕ пурăнăç çитсессĕн,
Хăраса вăл пытанать.

13

Ăнăçу та канăç тупмĕ
Айăпне пытаракан.
Хăйĕн çылăхне кам туйĕ,
Çав çеç çăлăнĕ кайран.

14

Юратушăн çунакан чĕре
Киленỹ, рехет тупать.
Кам сăлтавсăр тарăхать,
Çав тухаймĕ терт-хĕнрен.

15

Чухăн халăхăн нуши
Иксĕлмест. Çапла патши:
Арăслан пек, ахăрать,
Выç упа пек, хăратать.

16

Ăссăр пуçлăхăн пĕр ĕмĕт:
Укçа-мулшăн хĕсĕрлес.
Кам укçашăн хирĕлмест,
Çавăн çеç-çке вăрăм ĕмĕр.

17

Юхтарнăшăн çынсен юнне,
Этем мĕн виличчен тертленĕ.
Хăйне çеç йĕрлекенсене
Тĕлĕкĕнче курса тĕлленĕ.

18

Тӳп-тӳрĕ çулпала утсан,
Телей те юп куран ялан.
Ултав сукмакĕпе кайсан,
Инкек курса, ӳксе юлан.

19

Çĕр çинче шав ĕçлекенĕн,
Апат-çимĕç ытлă-çитлĕ.
Уявра шав сикекенĕн
Çăкăрĕ çиме те çитмĕ.

20

Турра парăннă çынсен
Пурнăçĕ тĕллевлĕ, пиллĕ.
Кам çунать-ха мулшăн питĕ,
Çав хăпаймĕ сехметрен.

21

Кăмăллани тӳрккес çынна
Чылай чух аван мар.
Пĕр татăк çăкăршăн сана
Пултарĕ вăл сутма.

22

Ăмсанакан çын яланах
Пуясшăн пит ăшталанать.
Çука юлассине нихçан
Чухласшăн мар айван.

23

Ултава шав питлекен
Тус-юлташ кайран тупать.
Йăпăлтатма пĕлекен
Пĕр-пĕччен тăрса юлать.

24

Ашшĕ-амăшне çаратакан
Калаçать-ха: «Манăн çылăх çук».
Чунĕ усалпа туслашнăран,
Вăл хăрушă вăрă-хурахран.

25

Мăнкăмăллăх ялан
Шав хирĕçӳ чĕртет.
Турра çеç шанакан
Пĕрмай курать тивлет.

26

Хăйне-хăй çеç шанакан
Хĕн-хурпа тĕлпулĕ.
Турăпа пурăнакан
Тĕрĕс-тĕкел юлĕ.

27

Чухăна пулăшакан
Кĕлмĕçе тухмасть нихçан.
Иртĕхсе пурăнакан
Пăрăнаймĕ ылханран.

28

Тĕрĕсмарлăх çĕклесен пуçне,
Пытанаççĕ-ха çынсем.
Çухатсассăнах вĕсем вăйне,
Йышланаççĕ паттăрсем.

## XXIX

1

Ăс панине, питленине
Шута хумасăр вăрçăшсассăн
Ун чух çав çын пуласлăхне
Ан шан, пĕтет вăл сывалмасăр.

2

Йышлансассăн тӳрĕ чунлисем,
Ĕçчен çын хăпартланать.
Пуç пулсассăнах чыссăррисем,
Мĕнпур халăх йынăшать.

3

Ăслă ывăл ашшĕне
Савĕ, савăнтарĕ.
Каскăнни пуянлăхне
Салатса çеç ярĕ.

4

Тĕрĕслĕхе мала хурса,
Патша çĕршывшăн кар тăрать.
Парне илме пит юратсан,
Пуянлăхĕ ун саланать.

5

Сăна-ха эс йăпăлтине:
Епле вăл илĕртет тусне.
Ун сăмахне çеç тăнласан,
Танатана лекме ансат.

6

Серепи те хăйшĕн çеç
Пит усал этемĕн.
Тӳрĕ çын пурнăçĕнче
Савăнать илемшĕн.

7

Чухăнсен тавлашăвне
Тӳрĕ çын тĕпчет йăлтах.
Чыссăрри хăй тивĕçне
Пурнăçласшăн мар пачах.

8

Аскăн-тĕскĕне курсассăн,
Мĕнпур халăх тарăхать.
Пăлхава чарса лартмашкăн
Ват ăсчах çеç пултарать.

9

Ăслă çын пит тарăхать-и,
Айванпа сутлашнă чух.
Е каçса кайса кулать-и,
Унăн пурпĕр канăç çук.

10

Çылăхсăр çынна пит юратмаççĕ
Хыт кăмăллисем.
Унăн пурнăçне çавах упраççĕ
Тӳрĕ чунлисем.

11

Айван хăй çиллине
Йăлт палăртать.
Ăсчах чылай чухне
Ăна чарать.

12

Патша суя сăмахсене
Тăнлать пулсан пĕрмай,
Ăна пăхăнакансене
Пăрахĕç чыслама.

13

Ултавçă чухăнпа тĕл пулĕ
Ятарласа е ăнсăртран.
Çапах та Турă чĕртнĕ çулăм
Çутатĕ иккĕшне ялан.

14

Енчен те чухăн çынсене
Патша пĕлсе айăпласан,
Яланлăхах хăй престолне
Ун чух хăварĕ сыхласа.

15

Хулăпа кăштах çапсан,
Пăсăлмасть ача нихçан.
Амăшĕ, ăс памасан,
Намăсне курать кайран.

16

Йышлансассăн чыссăрсем
Саккуна пĕрмай пăсаççĕ.
Кăнса выртнине вĕсем
Тӳрĕ чунлисем кураççĕ.

17

Ывăлна асра тытсан çеç,
Эс туйма пултарăн канăç.
Ун чухне çеç курăн савнăç,
Чун-чĕрӳ те хăпартланĕ.

18

Çӳлтисем çĕн çул сĕнсен çеç,
Халăха пăхăнтаран.
Саккуна хисеплесессĕн,
Ырлăхне вăл тин курать.

19

Сăмах каланипе кăна
Вĕрентейместĕн чурана.
Ăна вăл лайăх ăнкарсан та,
Ун чунĕ хупă пулĕ саншăн.

20

Курнă-и эс, пĕртте шутламасăр,
Сăмахпа выляканпа.
Айвана хăш-чух пулать шанмашкăн,
Çав çынна ĕненмĕн пач.

21

Мĕн ачаран рехет курма
Хăв чуруна эс вĕрентсессĕн,
Мехел çитсессĕн, çитĕнсессĕн,
Вăл хатĕр ывăлу пулма.

22

Тарăхма юратакан
Хирĕçӳ чĕртет.
Авăк çилĕлли ялан
Çылăха кĕрет.

23

Хăйне мăнă тытакан —
Мĕскĕн çын иккен.
Чун-чĕмне пусаракан
Чыс курать куллен.

24

Вăрăпа хутшăнакан çын
Шав сутать чунне.
Халăх ылханне туйсан та,
Пытарать ĕçне.

25

Шиклёх хăй серепине
Хăвалать-ха çынсене.
Çӳлти Турă çеç куллен
Хăтарать çав сехметрен.

26

Чылайăшĕ шырать тивлет
Патшан сăн-питĕнче.
Анчах та иксĕлми телей
Пĕр Турă аллинче.

27

Чăнлăха савакана
Тӳрĕмарлăх йĕрĕнтерĕ.
Ултавпа пурнакана
Çут пуласлăх шиклентерĕ.

XXX

Иакейĕн ывăлĕ Агур
Хăй тĕпкĕчне каланине халь итлĕр.
(Çакна тăнланă теççĕ Ифиил та,
Асилӳре Укалăн ячĕ пур):

Ку тĕрĕсех, эп хăшпĕр çынсенчен
Пĕлӳ пухманшăн палăрса тăратăп.
Этемлĕхĕн ăс-халĕ, хам туятăп,
Ытла та аякра ыттисенчен.

Тата вĕренесси манран пулмарĕ,
Хам шăпамран хăпмарăм аякка.
Сăваплисен хĕрӳ пĕлӳ-кăварĕ
Çунатчĕ инçетре. Мĕн тăвăн-ха?

Çапах ыйтасшăн эпĕ сиртенех,
Çӳл тӳпене хăй тĕллĕн кам хăпарнă,

Унтаҥ ыр-сыввăн çĕр çине кам аннă,
Пуçтарнă ывăçа çил хăватне?

Пин-пин юханшывпа тинĕссене,
Кӳлĕсене, çут океансене
Кам вырнаçтарнă питĕ килĕшӳллĕн?
Кам вăйĕ-халĕ ĕмĕртен пит çӳллĕ?

Тӳремлĕ, ырлăх кӳрекен çĕре,
Пушхирсене, кăлкан çеçенхире,
Мăнаçлă тусене кам ăсталанă,
Ăна епле сăмахпала чысласçĕ?

Ун ячĕ çывăх-и, пĕлсен, кала:
Тен, ывăлне аван паллатăн эсĕ?
Анчах та ун шалти чунне пĕлесшĕн,
Сана систерĕп эп: ан ăссăрлан.

Тăнла эс, Туррăн тĕрлĕрен сăмахĕ
Çут çăлкуçран та, шур юртан таса,
Енчен те тĕл пулсан темле йăх-ях та,
Сан шанчăкна Вăл упрĕ тăрăшсах.

Анчах та Унăн сăмаххи çумне
Эс хăвăнтан ан хуш-ха пĕр пуплев те.
Кăларĕ Вăл сана тăр шыв çине:
Ултавçă çулĕ пит кĕске, тĕллевсĕр.

Хам виличчен тата çакна ыйтасшăн,
Кăмăлăма ан хуç-ха, çырлахтар:
Суялăха манран сирсем, тархасшăн,
Ниме тăман ĕçрен ялан хăтар.

Пурнăçăмра çĕрме пуян ан ту,
Тата ман пулас марччĕ питĕ мĕскĕн:
Кĕлмĕçленни хăех вăл хытă хĕскĕч,
Пулсассăн çăкăр — чакĕ ырату.

Эхер те, эпĕ пит çăткăнлансан та,
Ман кулас марччĕ Аслă Турăран.
Чухăнлансан, çынна çаратасран та,
Шав пăрăнасчĕ шавлă пурнăçра.

Енчен чура ылханĕ сан патна
Ан çиттĕрччĕ тесессĕн, пĕл çакна:
Ăна нихçан çын умĕнче вăрçмаççĕ,
Умра хуçи пулсан та — хурламаççĕ.

Анчах хăявлă йăх та пур-ха, пур:
Хаяррăн тавăрать вăл ашшĕне те,
Ун намăс-симĕс çук, чăнах та, мур,
Тав сăмахне каламĕ амăшне те.

Ӳт-пӳ таса, ман çылăх-кăлтăк çук,
Тесе калакан йăх та пур ку чух.
Анчах ламран лама куçать чăрмавсăр.
Хăйсем курман-туйман чăн тасамарлăх.

Пур харсăр йăх, кашнийĕн куçĕ чăрсăр,
Мăнкăмăллăн пăхать çынсем çине.
Нимле чăрмав чараймĕ вĕсене,
Кирек кампа вĕсем хăюллăн вăрçĕç.

Пур çăткăн йăх, кашнийĕн шăлĕ хĕç пек,
Кашнин янах шăммийĕ — çивĕч çĕçĕ.
Тухсассăн вăрçăн виртлĕ çулĕсем,
Пĕтеççĕ чи малтан чухăннисем.

Ĕмĕтсĕрсен пулсан та ытлăх-çитлĕх,
Хĕнрен тухсан та, каламаççĕ: «Çитĕ!»
Ак, пурте пур вĕсен, çавах та: «Пар!—
Ыйтаççĕ.— Эс пуйма ан чăрмантар!»

Мĕн чул виле каять чĕр тамăка,
Çĕр-шывшăн, çулăм вутшăн ăнтăхать.

Е йăхăн йыш ӳсет. Тулсан та ĕмĕт,
Вĕсем: «Çитет!»,— тесе каламĕç ĕмĕр.

Пĕртен-пĕр ашшĕнчен ţăрăхлаканăн
Е амăшне çынран кăлараканăн
Шăпи илемсĕр. Ун куçне çăхан
Сăхать те, вăл асапланать кайран.

Пĕччен вăл çӳрĕ ту çинче темччен,
Аташĕ вилĕмпе тĕл пуличчен.
Çак çын çут тĕнчерен çапла çеç кайĕ:
Ӳтне йăлт çисе ярĕ ăмăрткайăк.

Тăвата япалан чăн тупсăмне,
Чухлас тесессĕн те, ăнланаймастăп.
Çырса кăтартăп-ха кĕç вĕсене,
Пит шел, кашниййĕшне эп ăнкармастăп:

Хăюллă ăмăрткайăк вĕçевне,
Тусем çинчи хаяр çĕлен çулне,
Карап ишет, ăçта çитет ыран вăл,
Арçын хĕре епле-ха çавăрасшăн?

Ясар хĕрарăма хĕн ăнланма —
Упăшкине хăять улталама.
Ак ĕçрĕ-çирĕ те унтан каларĕ:
«Усал ĕçпе пĕрре те çыхланмарăм».

Пĕлсен виç енлĕ пулăмăн хакне,
Хăш чух, ав, чĕтренет-ха Çĕр-анне.
Тăваттăмĕш пирки те эп каласшăн,
Вăл пур, пурнать. Мĕн тăвăн? Çĕр çăтасшĕ:

Чура патша пулни пит килĕшӳсĕр,
Айван тăраничен çини начар.
Çакна ыр кăмăлли епле-ха тӳсĕ,
Вăл тарăхать вара кирек хăçан.

Ятне-чысне çухатнă та хĕрарăм
Качча тухать, ку ĕнтĕ аван мар.
Пуянăн килĕнчеччĕ-ха хĕр-тарçă,
Паян хуçаланать вăл, ку начар.

Тăвата чĕрчуна сăна вăрах,
Çынсемшĕн пурнăçĕ пит килĕшӳллĕ.
Кашнишĕн ют усаллăх, хирĕçӳллĕх,
Хăйсем, кур: ăсчахран та ăсчахрах.

Кĕшĕлтетеççĕ кăткăсем ялан,
Пысăках мар хăйсем, çавах ĕçлеççĕ.
Кахалланманшăнах вĕсем çулла
Апат хĕлкунĕсемшĕн хатĕрлеççĕ.

Чул хысакне иленнĕ шăшисем,
Хăйсем пит вăйсăр — çурт-йĕр çавăраççĕ.
Вĕсемшĕн хăруш мар çил-тăмансем,
Унтах килĕштерсе кĕç хĕл каçаççĕ.

Саранчасем пирки çӳрет сăмах,
Хăш чух çынсемпеле танлаштараççĕ.
Вĕсен патшийĕ çук иккен, анчах
Хăрушлăха пĕрле сирсе яраççĕ.

Тăваттăмĕш чĕрчунĕ — эрешмен,
Ăна хальччен никам çĕнтереймен.
Ун картине патша керменĕнче те
Курма пулать — ăна эс ту хăть тем те.

Е виçĕ пысăкрах чĕрчун пирки те
Сăмахăма эп тапратасшăн, итлĕр.
Анчах та çыннăн ĕçĕ вĕсенчен,
Ăс-халĕпе те урăхрах иккен.

Пурне те паллă арăслан хăвачĕ,
Лаша чăтăмлăран — ун ырă ячĕ,

Ту качакийĕ кĕтĕвне упрать,
Тăваттăмĕш — патша — йĕрке тăвать.

Мăнна хурсассăн, пит вĕçкĕнленсессĕн,
Пултарăн йăнăшмашкăн хăвăрт эсĕ.
Усал шухăшсенчен тарас тесен,
Хăв çăварна та хуплама вĕрен.

Мĕн-ма тесессĕн, пухнă хăймаран
Уçланă хыççăн çеç çу пуçтараççĕ.
Хирĕçӳре те, сăмсаран çапсан,
Çынсем çĕре таса юн юхтараççĕ.

Шăп çавăнпа, çиленнине пула,
Вăй илĕ вĕчĕ-харкашу ялан.
Чăтăмлисен хăвачĕ, тарăн ăсĕ
Тавлашакан çынсен ĕçне шав пăсĕ.

## XXXI

Мехелĕ çитрĕ, Лемуил патшан
Вĕрентĕвне чунтан пĕрле тăнлар-ха.
(Ăна юратнă амăш савнăран
Хыт ӳкĕтленĕ). Акă ун хайлавĕ:

Ман варăмра ӳтленнĕ, хаклă ывăл,
Хама эп сăмах панă тахçанах:
Мĕскер хумхантарать сана, мĕн çывăх,
Çавсем кăсăклантарĕç шав мана.

Ыйтатăп эп: кашни хĕрарăма
Хăв çывăхна ан яр-ха эс, тархасшăн,
Вĕсем кашнийĕш вăй-хална туясшăн,
Кайран хăвнах пултарĕç тĕп тума.

Пил сăмахне тăнлаччĕ, Лемуил,
Эрех ĕçесшĕн те ытла ан çун-ха.

Патша та князь кайран тертленӗ уншăн,
Çакна кирек хăçан та ăша ил.

Князьсем сикерăна чылай ĕçсен,
Саккунлăха йăлтах манма пултарĕç.
Вара айăпсăрсен, ĕçлекенсен
Тӳр килĕ тертленме кашнин пĕр харăс.

Часах вилме пултаракан çын çеç
Сикера ĕçтĕр — хăй чунне çемçеттĕр.
Кӳреннисем — мĕн тăвăн — пулаççех,
Вĕсем эрех ĕçсе кăшт хĕпĕртеччĕр.

Пĕри, чухăнлăха манса кайса,
Ёмĕтĕнче юп-ырлăхра çӳретĕр.
Тепри, кĕç вилĕм çитессе шанса,
Чун-чĕрине ытла ан тискерлеттĕр.

Йăваш та чĕмсĕр çынсене чунтан
Анлан та хӳтĕле вара ялан.
Тăлăх-туратăн чунĕ ан ыраттăр,
Вĕсем сан сассуна савса тăнлаччăр.

Саккунлăха та кулленех сыхла,
Çут чăнлăха пурнăçунта хакла.
Сан сăмахна шав чухăнсем илтесшĕн,
Вĕсем тĕрĕслĕхе çеç ĕненесшĕн.

Ыр чунлă арăма тупма пулать-и,
Ун çутă кăмăлĕ мĕнпе танлашĕ?
Ку паллă ĕнтĕ: хаклă ахахран,
Унпа пĕрле терт курмăн нихăçан.

Унпа пурнатăн ним иккĕленӳсĕр,
Çут шанчăкпа кăна чĕрӳ тапать.
Кунçул пайталлă, ӳсĕм хыççăн ӳсĕм
Тăватăн эс, чунра тупса хăват.

Унпа кăна çеç савнăç, ырлăх тупăн,
Усалăн мĕн ĕç пур — хăпать санран.
Инкек кӳресшĕн кăлăхах вăл суптăр,
Кунçул тĕллевлĕ пулĕ ĕмĕр сан.

Юратнă арăму ытла ĕçчен-çке:
Е çăм, е йĕтĕн пирĕ хатĕрлет.
Кун каçипе таçта та ĕлкĕрет-çке,
Алла усса килте лармасть куллен.

Купец карапĕсем инçе каяççĕ,
Илсе килеççĕ тĕрлĕ япала.
Шăп çавăн пек вăл курăнать хальхаççăн,
Ĕçме-çиме тупма пĕлет ялан.

Вăл шуçăмпах тăрать те тĕрлĕ çимĕç
Тутанччăр килтисем тесе ĕçлет.
Пулăшаканĕсем ан юлччăр нимсĕр,
Вĕсем патне те çул тупма пĕлет.

Хуçалăх аталантăр, тет те харсăр,
Çĕр туянать, çĕн тыррине акать.
Ачи-пăчи ан лартăрччĕ пылаксăр,
Çак тĕллевпе ӳстерĕ виноград.

Пиçиххипе вăл йăрăс пилĕкне,
Ыратнине пăхмасăрах, çыхать те,
Туйса ал-уринчи мускул вăйне,
Пĕр найкăшмасăр ĕçлемешкĕн хатĕр.

Туять вăл, унăн ĕçĕ кирлĕ питĕ,
Шăп çавăнпа шеллемĕ вăй-халне.
Йывăрлăха çĕнтерĕ — тухĕ витĕр,—
Пурнăçласа çап-çутă ĕмĕтне.

Ак вăл кĕнчелеççи умне ларать те,
Пуçлаççĕ пӳрнисем çип арлама.

Йёке ун аллинче тек вылянать, ав,
Кăлтăртатать пĕр вĕçĕм урапа.

Алли кирек хăçан та унăн çăмăл,
Кам тертленет, ăна шав пулăшать.
Чухăнраххин те кĕç çĕкленĕ кăмăл,
Вăл çак килте-çке çăлăнăç тупать.

Ĕçчен хĕрарăм сивĕрен хăрамĕ,
Кашнин килте пур халĕ ăшă тум.
Хĕл кунĕнче те лăпланса вăл лармĕ,
Пĕр тенкĕрен пуçтарăнĕ ун сум.

Кавир тĕртет те, çутçанталăк сăнĕ
Вăраххăн ун çинче ӳкерĕнет.
Çипуçĕ селĕм — питĕ килĕшет,
Ытла хитре пурпурĕ те виссонĕ.

Ун упăшки хулашăн паллă ят,
Мухтавлă çынсемпе лармашкăн тивĕç.
Мăшăрĕпе нихçан каласмĕ сиввĕн,
Вăл мĕн шутланă — çав пурнăçланать.

Тем тĕрлĕ виткĕчĕ ак хатĕрлет те
Вĕсемпеле суту-илӳ тăвать.
Услам пухать пиçиххипеле те:
Финики купцисем илме хавас.

Хĕрарăмăн таварĕсем чипер,
Ырлать туянакан — пулнишĕн çирĕп.
Эппин, малашлăхĕ ун çутă, ирĕк,
Çакна вăл тивĕç, хăй пултарнипе.

Калаçăвĕ ăсчах пуплевĕ евĕр,
Вĕрентĕвĕ хăйне кура пит евĕк.
Пустуй пакăлтатма юратманран,
Лăпкăлăха кăна сават чунтан.

Килти хуçаläха сăнать ир-каçăн,
Кирек ăçта та кирлĕ перекет.
Ахаль çимест-ха çăкăрне хальхаççăн.
Вăл унăн чăн хакне аван пĕлет.

Вăранчĕç ачисем, кашни хаваслă,
Тав сăмахне илтет вăл вĕсенчен.
Юратнă упăшкин сăмахĕ хаклă,
Чун çĕкленет ăна итленĕçем:

«Çут тĕнчере ыр кăмăллă хĕрарăм,
Чăнах та, сахал мар-ха. Пур вĕсем.
Санпа пĕри те танлашма пултармĕç,
Эс пуринчен маттур, çакна сиссем».

Пĕри сăнĕпеле чипер пулсан та,
Чун-чĕмĕ ун ултавçăнни пекех.
Тепри, ав, Турăра шырать те шанчăк,
Унпа эс мухтанан çине-çинех.

Эппин, ăна, таса ĕçне пула,
Çитĕнӳсемшĕн яланах ырла.
Хĕрарăмра кăна çынсен хăвачĕ,
Шăп çавăнпа сумра ун ырă ячĕ!

# ЕККЛЕСИАСТ
# КЁНЕКИ

## 1

Давидăн ывăлĕ — Екклесиаст
Пире калать: нихçан тивлет пулмасть.
Иртет хĕвĕшӳре этем кунçулĕ,
Çĕр чăмăрĕ çеç ĕмĕр-ĕмĕр юлĕ.

Тĕркĕшӳре сӳнми телей кĕтсе,
Килеççĕ те каяççĕ ăрусем.
Пĕр ункăрах куçать кашниййĕн çулĕ,—
Çавах çĕр чăмăрĕ çеç ĕмĕр пулĕ.

Хĕвел тухсан хăй выраннехваскать,
Пĕр евĕрлĕх ăна йăлăхтарать-тĕр.
Куллен вăл пĕр çула çеç пăхăнать,—
Çут ăшшине сапалама шав хатĕр.

Курсам-ха, çил те канăççăр çаплах,
Ăна кĕтет пуль Кăнтăр, Çурçĕр енĕ.
Таçти çĕре çитес тесех çĕкленĕ,
Çапах та таврăнать вăл каяллах.

Юхаççĕ тинĕсе юханшывсем,
Çавах ăна нихçан тултараймаççĕ.
Мала шав ăнтăлсассăн та, вĕсем
Çав вырăна каллех ав таврăнаççĕ.

Япаласен пĕлтерĕшĕ ĕçре.
Сăмах хăш чух калаçура пит чухăн.
Курни те тивĕçтерейместь пире,
Хăлха илтни те лăплантармĕ туххăм.

Тахçан мĕн пулнă — çав пулать каллех,
Çакна этем пурнăçĕнче мансан та.
Мĕн ма тесессĕн çуралмасть нихçан та
Хĕвелĕн айĕнче çĕнни текех.

Хăш чух айван этем каппайланать:
«Эп тупрăм çĕнĕлĕх!» — тесе васкавлăн.
Анчах та çакă пулнă тахçанах:
Кив ĕмĕрсемшĕн çав «çĕнни» йăлт паллă.

Аваллăха этем пĕлет сахал,
Эппин, вăл тӳснине те хăвăрт манĕç.
Паян мĕн пулчĕ-ха? Çук çирĕп шанăç,
Çак сăнарсем кунтах пĕтеç, тен, халь?

Екклесиаст — эп. Израилĕмре
Патша чух тĕрлĕ пулăма тĕпчерĕм.
Ăстăнăма пĕрре те шеллемерĕм:
Мĕскер пулса иртет çак тĕнчере?

Мĕскершĕн Турă хăй ачисене
Кĕрештерет куллен-кун çут тивлетшĕн?

Ку пите те асаплă ĕç вĕсемшĕн,
Шанма май çук телей килессине.

Хĕвелĕн айĕнче пĕр черетре
Иртет хĕн, юп е çуклăхпа пуянлăх.
Хĕвĕшӳре пĕтĕмлетӳ пĕрре:
Малтан, кайран-и — чун чăтать асаплăх.

Пирвай армак-чармак ешернĕ йывăç,
Каярахпа тӳп-тӳррĕн ӳсеймест.
Шăпушăн хăть эс çапăç, хирĕл, ывăн,—
Мĕн çуккине никам та çĕклеймест.

Алла чĕрем çине хурса каларăм:
Эс аслă-ха ытти патшасенчен.
Хăвна шеллеменрен, ӳркенменрен
Ăс-хакăлна васкавлăн пуянлатрăн.

Мĕскер вăл ăссăрлăх е пуш айванлăх?
Çавна пĕлесчĕ, теттĕн, тĕнчере.
Каярахпа çакна эс туйрăн лайăх:
Чун тертленет ниме тăман ĕçре.

Мĕн ма тесессĕн вĕренӳ куллен
Мала ăнтăлнă май, çуратĕ тертлĕх.
Ун никĕсĕ-пуçламăшĕ, сисен:
Ăса пула ӳстерĕ шав синкерлĕх!

## II

Пурăннă май чун-чĕреме эп хушрăм:
Хăвна эс тĕрĕсле-ха савнăçра.
Хĕвĕшӳре каллех ăнлантăм, туйрăм:
Шанма май çук çав яланах ырра.

Пĕр шухăшсăр çӳрекене сивлерĕм,
Вăл маншăн пулнăран чăн-чăн айван.

Шăп çавăнпа унран ыйтса тĕпчерĕм:
Эс вăйă-куллупа çеç мĕн тăван?

Чун тĕрĕсленчĕ ман эрех ĕçсе те,
Çавах ăс-хакăла эп çухатман.
Çын шухăш-кăмăлне пĕлесчĕ, теттĕм:
Епле хăйне туять симпыл сыпсан.

Хĕвелĕн айĕнче кĕске ун ĕмĕр,
Хăй телейне курать, тен, эрехре?
Каллех ак кăлăх пулчĕ манăн ĕмĕт,
Тĕллевĕ урăх ун. Анчах мĕнре?

Каярахпа хуралтă, çурт çĕклерĕм,
Садра ӳстертĕм иçĕм çырлине.
Тем-тĕрлĕ йывăç лартрăм, ӳркенмерĕм,
Кӳлри шывпа шăвартăм вĕсене.

Çурт-йĕрĕмре ĕçлерĕ тарçă-тĕрçĕ,
Килйышăм, ырлăх ӳсрĕ çулсерен.
Чылайччĕ манăн тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕх,
Пуянччĕ эп Иерусалимре.

Хам çĕршыври вуникĕ тăрăхран
Пуçтартăм хаклă мул та ылтăн-кĕмĕл.
Нумайччĕ тĕрлĕ юрăçсем çумра,
Киленĕçре иртинччĕ, теттĕм, ĕмĕр.

Эс Иерусалимшăн пултăн, терĕм,
Пуян та чаплă, аслă çын. Унччен
Çак тӳпене никам çитмен иккен,
Çавах ăс-тăн пĕрре те иксĕлмерĕ.

Куç мĕн курать — çавна эп сивлемерĕм,
Чĕре хушсассăн савăнтăм чунтан.
Çынсен ĕçне те питĕ хисеплерĕм,
Мĕн ма тесен, ман пай та пур унта.

Анчах тĕпчевлĕрех сăнанă майăн
Тĕрĕслĕхе, айван ăссăрлăха,
Шутларăм: юрлă çын çӳлте пулаймĕ,
Патша пек ырлăх кӳмĕ халăха.

Йăлт куртăм: ăслăлăх ухмахлăхран
Çӳлте тăрать иккен кирек хăçан та.
Пач урăхла çут кун хура каçран,
Черетленçе хăйсем шав улшăнсан та.

Ăсчахăн ĕçĕ-хĕлĕ ĕмĕр çутă,
Айванăн куçĕ уçăлмасть нихçан.
Кунçулăн вĕçĕнче кашниййĕн утăм
Пĕрпек. Çук уйрăмлăх кунтан кайсан.

Эппин, айван шăпи мана та тивĕ,
Мĕн-ма ăсхалшăн çунтăм пурнăçра?
Телей пĕрмай çиçмест пулсан умра
Çак тĕркешӳ те çĕнĕ мар-çке, кивĕ.

Айван çынна та, ватă ăсчаха та
Асра тытмаççĕ тĕнчере ялан.
Çак тĕрĕсмарлăхшăн хыт тарăхатăп,
Тăмсай шăпи манпа танлашнăран.

Çавна пула йăлăхтарма пуçларĕ
Шăв-шавлă пурнăç, хĕвĕшӳ кунçул,
Хĕвелĕн айĕнче пуçтарнă мул,
Чун-чĕм асапланса пĕрмай вăркарĕ.

Куллен-кун ӳсрĕ кураййманлăх-вĕчĕ,
Мĕскершĕн тăкрăм тар çут тĕнчере?
Кам хуçаланĕ-ха ман хыççăн? Ĕçĕм,
Тен, кăлăх пулĕ эп кайсан лере.

Вăл ăслă-и, пĕлет-и пурăнма,
Тирпей те перекет çитет-и унăн,

Пуянлăхăм каймасть-и харама,
Тен, эп ниме тăман ĕçсемшĕн çуннă?

Шăп çавăнпа чун-чĕреме хытартăм,
Пăрахăçларăм иртнĕ çул-йĕре,
Хĕвелĕн айĕнче телей курмарăм,
Эппин, хама ӳпкелес çук сĕре.

Мĕн ма тесессĕн, хăшпĕр çыннăн мулĕ
Ăс-хакăла пула çеç хушăнать.
Анчах пуянлăхĕ кайран йăлт юлĕ
Тар юхтарса курман айванккана.

Вăл тивĕç мар-çке ырлăх-пурлăха,
Чун йышăнмасть çак тĕрĕсмарлăха,—
Хуçа пулнишĕн шав ниметăманлăх.
Кунтан усал ĕç çĕр çинче пулман-тăр.

Хĕвелĕн айĕнче шав тар тăкнишĕн,
Хавшак чĕрипеле ялан çуннишĕн,
Этем çут тĕнчерен пач çухалсан,
Ăна мĕскер кĕтсе тăрать кайран?

Ир-каç вăл тупаймасть-çке хӳтлĕх-канăç,
Лайăхлатасчĕ, тет, çак пурнăçа.
Шанчăкпала кĕтсен те савнăça
Шав пулĕ хĕвĕшӳ, ниметăманлăх.

Этемĕн ирĕк çук шав ыр курмашкăн,
Ĕçме, çиме, ялан чунне уçмашкăн.
Çакна ăнлантăм пĕтĕмпех пĕччен,—
Вĕсем юлаççĕ Турă аллинчех.

Мĕн ма тесессĕн, Вăл хута кĕрсен çеç
Ыр çын юп курĕ, курĕ пархатар.
Ун умĕнче кам çылăхлă, çавсен çеç
Мĕн виличчен тăкас пулать сив тар.

Çавна пула чылайăшĕн тĕллевĕ
Ниме тăман хĕвĕшӳре сӳнет.
Сăваплăхшăн кам кĕрешет пит евĕк,
Ăна пĕлӳ те савнăç Вăл пиллет.

## III

Кашниййĕн вăхăт пур çут тĕнчере,
Чĕрчунăн пур пуçламăшĕ, вĕçлевĕ.
Мехел çитсессĕн, çĕр çинче çӳрет
Илĕртнĕрен куллен-кун çут тĕллевĕ.

Мехел çитсессĕн, çыннăн вилмелле,
Ăна пит илĕртет пулсан та пурнăç
Тен, вăл хĕн-хур е ырлăх, савнăç курнă,
Çавах яланлăхах ун пĕтмелле.

Мехел çитсессĕн, тырă акмалла,
Ăна пуçтармалла — тулса çитсессĕн.
Мехел çитсессĕн, йывăç лартмалла,
Кăкламалла хăрсассăн — ӳсмесессĕн.

Мехел çитсессĕн, тĕрлĕ чир-чĕртен
Сывалмалла. Нуша тени çухалтăр!
Мехел çитсессĕн, савăн, хĕпĕрте:
Çут тĕнчере пĕрре кăна пурнатпăр!

Мехел çитсессĕн, çурт çĕклемелле.
Кивви унпа пĕрле татах ан лартăр.
Юлташ юлташшăн хĕпĕртемелле,
Эппин, вăл çĕн пӳртре сиксе ташлатăр!

Мехел çитсессĕн, чул пуçтармалла,
Кайран ăна салатмалла шеллевсĕр.
Мехел çитсессĕн, мăшăр тупмалла,
Хусахăн унсăр пурнăçĕ илемсĕр.

Мехел çитсессĕн, тус шырамалла,
Пĕрле кĕрешмелле кирек хăçан та.
Чунра сӳнсессĕн ырă ĕмĕт шанчăк,
Мехел çитсен, ăна çухатмалла.

Мехел çитсессĕн, пурлăх пухмалла,
Пулас кунсемшĕн кирлĕ перекетлĕх.
Мехел çитсен, пурне те манмалла,
Çулсем-йĕрсем шунишĕнех черетлĕн.

Мехел çитсессĕн, шăппăн лармалла:
Чĕлхӳ сисмесĕрех кунна кĕскетĕ.
Мехел çитсессĕн, сан калаçмалла,
Шанса тăрса пуласлăха тивлетлĕн.

Юратмалла, кулянмалла куллен,
Сăх тăшманпа пĕрмай кĕрешмелле,
Çапăçмалла — тухсассăн вăрçă-харçă,
Çут миршĕн тămалла кашнийĕн харăс.

Ĕç-хĕлĕнчен этем курать-и усă,
Кĕтет-и пархатар çитĕнӳрен?
Ăна Тӳре ав тĕрĕслет куллен,
Эппин, камра пытаръннă çав тупсăм?

Чăнах та, Турă этеме кун панă,
Пилленĕ ăс пурне те тавçăрма.
Çак пурнăçа тĕпрен йăлт ăнланма,
Унра, пит шел, çут шанчăк хăварман çав.

Уçмастăп эпĕ çĕнĕлĕх кунта,
Çакна чылайăшĕ пĕлеççĕ лайăх,
Халалĕ Туррăн чаплă — уншăн тав:
Ĕçле те çи, чунра упра сăпайлăх!

Анлантăм эпĕ: Унăн ĕçĕсем
Çут тĕнчере пурнаççĕ ĕмĕр-ĕмĕр.

Эппин, чунра упрантăр çутă ĕмĕт,
Ăна мухтамалла ялан çынсен.

Малтан мĕн тӳснĕ — вăл çаплах паян,
Унччен мĕн курнă, çав ыран та пулĕ.
Вилсессĕн, Турă йăлт татса парсан,
Тин палăрать этемĕн кунĕ-çулĕ.

Ялан тĕл пултăм тĕрĕсмарлăха.
Çут чăнлăх вырăнне кунтаултавлăх.
Вара эп лăплантартăм хама хам:
Леш тĕнчере кăна тупан пĕртанлăх.

Чи çӳллĕ Тӳрене: тĕпче-ха, терĕм,
Выльăхсемпе этем пĕлтерĕшне.
Çук уйрăмлăх тени. Çакна ĕнентĕм.
Туяççĕ-ши пĕр пек пурăннине?

Кунçул-шăпа, вĕсен, чăнах, пĕр пек:
Кураççĕ те сывлаççĕ — пурăнаççĕ.
Çут тĕнчере ниммаршăн вăрçăшаççĕ,
Çулне-йĕрне улăштармаççĕ тек.

Пурне те Турă тусанран çĕкленĕ,
Хăть тĕрĕсле — ӳтрен пулать тусан.
Çын чунĕ çӳллĕ тӳпене иленĕ.
Юлаççĕ выльăхсем çĕртех, кăнсан.

Эппин, çӳре, вăй хур хастаррăн, савăн
Ялан куллен кунхи ĕçӳпеле.
Пулас ăрусенче кунсем епле,
Пĕлме май çук ăна пурăнаканăн.

IV

Сăнарăм та йăлт куртăм таврара:
Мĕн чухлĕ çĕр çинче асап та хурлăх,

Юп куракан ялан пăвать ырра,
Куççуль юхтараканăн йўçĕ пурнăç.

Шăп çавăнпа эп ытларах хĕрхентĕм
Хĕн-хур çеç тўснĕ, вилнĕ çынсене.
Çуралманни рехетлĕ-çке. Ĕнентĕм.
Вăл курас çук нихçан сехмет мĕнне.

Çакна та пĕлтĕм: çын ыр ĕç тусан,
Çуралĕ кĕвĕçў те курайманлăх.
Пускилĕ пускилне хурлать пулсан,
Кирек хăçан çўлте ниметăманлăх.

Кахал ларать ав аллине усса,
Ăна çак пурнăç питĕ килĕшет-тĕр.
Хам çăкăра кăна шав тутансан,
Услап çынран телейлĕрех эп, тетĕн.

Тĕпчевлĕрех сăнарăм та, каллех
Çакна нихçанхинчен те лайăх туйрăм,
Хусах, тăрса юлсан та, ĕмĕр уйрăм,
Çемйеллинчен пурнать телейлĕрех.

Шутлать вăл: тар тăкатăп ирĕн-каçăн,
Тăван-пĕтенĕм çук çут тĕнчере.
Пуянлăхăм пĕтет хĕвĕшўре,
Эппин, тăрăшмалла-им ман такамшăн?

Кам арлă-арăмлă пурнать, ĕçлет,
Çав ачинче тупать сипет, артаклăх.
Кам тĕнчере хăй тĕллевне пĕлет,
Ăна хăратмĕ тăр пĕчченлĕх, ватлăх.

Енчен те тусупа çула тухсассăн,
Ăна хăвна çеç шаннă пек шанан,
Сана ал парĕ вăл халтан кайсассăн,
Пĕтме пултарăн эс пĕччен юлсан.

Шăнсассăн — иккĕн ăшăнма аван,
Çапăçура тусу кар тăрĕ саншăн.
Çиппе ак пĕтĕрсен виç хут, чухлан,
Ăна васкавлăн, çийĕнчех татаймăн...

Пĕр чухăн каччă пурăннă тахçан
Укçасăр-мулсăр. Хăй çавах ăс пухнă.
Патши ун никампа канашламан,
Çавна пула çут кĕмĕл, шыв пек, юхнă.

Каярахпа вăл хăй тронне çухатнă,
Ун вырăнне çак йĕкĕте кĕç лартнă.
Тин çăмăлланнă чухăнсен кунçул,
Патшалăх та вăйланнă, пухнă мул.

Шăпи пит улшăнчăк, иккен, çынсен,
Çĕн патшапа чылайăш ыр курсан та,
Ăна кайран манаççĕ çамрăксем,—
Малта çав хĕвĕшӳ, ниметăманлăх.

Эппин, эс чиркĕве çӳрен пулсассăн,
Чӳке манса, итле Çӳлти Турра.
Кам урăхла шутлать, ăна, тархасшăн,
Ан вăрç, вăл пăрăннишĕн тĕп çулран.

V

Сĕнесшĕн эпĕ: кĕлĕре чухне
Кĕскен кала чунра мĕн пуррине.
Ăнлан: эс çĕр çинче тăратăн. Турă
Кирек хăçан çӳлтен пурне те курĕ.

Хăрушă тĕлĕк евĕрех иленĕ
Сана тем тĕрлĕ курăну кунта.
Шăп çавăн пек-çке ăссăр çыннăн енĕ,
Ним уямасăр шав пакăлтатать.

Е Турă умĕнче тупа тусассăн
Каю ан шăттăр — хăвăрт пурнăçла.
Ăна улăштарсан, кĕлле пăссассăн,
Каçрашкана вăл айăплать ялан.

Эппин, шухăшламасăр, çăмăлттайлăн
Сипетлĕх йĕркинчен нихçан ан тух.
Çитменлĕхрен хăпма хăвра вăй туп,
Чуну ыхлаç пулсассăн тӳсмĕн айăп.

Е Ангел умĕнче: «Ку — манăн йăнăш»
Тесе пуплен-тĕк — икĕпитленен.
Турра çилентерсессĕн, курăн тăтăш
Пурнăçунта инкек-синкек куллен.

Мĕн ма тесессĕн, тĕрлĕ тĕлĕкре те,
Е вĕççĕр сăмахсен вылявĕнче
Ниметăманлăх çеç, тĕркĕшӳре те
Турра итле: эс унăн аллинче.

Ан тĕлĕн: тĕл пулсассăн тĕрĕсмарлăх,
Пуян шар кăтартнишĕн чухăна.
Вăл пăханать пĕрмай сатрапана.
Хăй, сис, инспектор умĕнче явапл<br>ă.

Çак çыхăну пĕр евĕр, картлашкаллă.
Патша пуриншĕн те ялан тӳре,
Чечеклетесшĕн-çке пĕрмай çĕре,
Çӳлти вăйсем аялтисемшĕн аслă.

Кам ылтăн-кĕмĕлре шырать тивлет
Çав çыннăн пурнăçĕ пĕрмай сехметлĕ.
Хĕвĕшӳре пуянлăх та ӳсет,
Анчах ăмсанаканĕсем ĕрчевлĕ.

Эппин, хуçи унран курать-и усă,
Мула хапсăнаканĕсем пулсан,

Çумри тӑван-пӗтенӗ йышлансан?
Кур, кусӗсем кашнин çунаççӗ, юс пек.

Сахал, нумай çиет-и ӗçлекен,
Канма выртсассӑн ыйӑхӗ ун тутлӑ.
Пуянӑн канӑçӗ пач çук иккен,
Çывӑраймасть, пулсан та пурнӑç тутлӑ.

Хӗвелӗн айӗнче тем тӗрлӗ чир те
Пурнать те вӑй илет-çке каçӑн-ирӗн.
Çакна та кирлӗ мар нихçан манма:
Мул пухакан мулрах курать амак.

Чунра хуçалансассӑн та артаклӑх,
Инкек-синкек килсе çапсан сасартӑк,
Пуянлӑх самантрах йӑлт çухалать,
Ун ывӑлӗ те нимсӗрех юлать.

Çын амӑш варӗнчен çара паккан
Тухать те çухӑрса тӗнче илтмелӗх,
Калла каять вӑл пӗчченех кайран,
Пуянлӑхне пӗр чӗптӗм те илмесӗр.

Ку хӑйнеевӗрлӗ инкекӗн-тертӗн
Пуçламӑшӗ-вӗçлевӗ те пӗр пек:
Вӗçесшӗн ав арман çуначӗпе,
Анчах та вӑл çӳле епле çӗклентӗр?

Çын тӗттӗмрен килет те çӗр çине:
Йӗрет, пӑшӑрханать е ӳкӗнет.
Пурӑннӑ май шутлать: кӗç ӗмӗт тулӗ,
Çапла сисмесӗрех иртет кунçулӗ.

Хӗвелӗн айӗнче çакна та туйрӑм:
Çынна пилленӗ Турӑ ӑраскал.
Ӗçлен пулсассӑн — кун иртмест ахаль,
Эппин, юп кур, нихçан ан пурӑн уйрӑм.

Пуянлăх ытларах хăшпĕрисен,
Тепри вăйпа хăйне çеç пăхăнтарĕ,
Виççĕмĕшсем хĕрӳ ĕçре пултарĕç:
Çаксем килеççĕ Турă çырнинчен.

Пит вăрăм мар пулсан та çыннăн ĕмĕр,
Çавах та Вăл манмасть кашни сăна.
Чуна пĕрмай вăй парĕ Унăн хĕмĕ,
Шăп çавăнпа савас пулать Ана!

## VI

Çакна та эп сăнарăм: час-часах
Çынпа çын хушшинче мĕн чул усаллăх.
Кирек кама хĕвел савать çавах,
Вĕсемшĕн ют пулсассăн та пĕртанлăх.

Чун-чĕм валли харкамăн пур пуянлăх,
Пур ытлăх-çитлĕх. Чап та иксĕлмест.
Анчах та хăшпĕрне вăл пач лекмест,
Намăссăрри унпа ыр курĕ анлăн.

Енчен хăв хыççăн çĕр ача юлсан та,
Енчен эс вăрăм ĕмĕр пурăнсан та,
Çут ĕмĕтпе тапман пулсан чĕре,
Кун курман çын санран телейлĕрех.

Мĕн ма тесессĕн, сĕмлĕхрен тухмасăр,
Çав çын тăрса юлать-çке тĕттĕмрех.
Ана чысла, хурла — темле те асăн.
Терт, мул-и пур-ха — уншăн пурпĕрех.

Хĕвелĕ сарă-и, ун вутлă хĕмĕ
Чĕртет-и пурнăç çутă тĕнчере,
Иртсе пырать-и ĕмĕр хыççăн ĕмĕр,
Çак пулăм-юхăм—уншăн пурпĕрех.

Хăть икĕ пин çул пурăнтăр этем,
Хакли — ан ютшăнтăр унран илем.
Куллен-кун ун çакна чухламалла-тăр:
Çĕртен тухатпăр та çĕртех юлатпăр.

Çавах этемĕн кусĕ выçă, суккăр,
Çăтмах пек пурăнăç кĕтет, шырать.
Мĕн пуррипе ун çырлахасчĕ. Çук çав!
Пуянлăхшăн, чап-сумшăн ăнтăлать.

Мĕнпе-ха уйрăлса тăрать ăсчах,
Мул пухакан, тен, унпала танлашĕ?
Пĕри — ав халăх хушшинче анчах,
Тепри — пĕччен, пуянлăхшăн туллашĕ.

Эппин, мĕн пуррипе куллен çырлах,
Çут ĕмĕтӳ пулсан та ирĕк, анлă.
Хăй тĕллĕн çĕр çине анмасть юмах,
Ытти — хĕвĕшӳпе ниметăманлăх.

Çуралсанах çынна параççĕ ят,
Ăна нихçан та вăл улăштараймĕ.
Ĕмĕртенпех саккун пулса юлать:
Вăйли халсăрккапа, пĕл, танлашаймĕ.

Çак çĕр çинчи хĕвĕшӳре куллен
Татса паман ыйту мĕн чул этемĕн?
Пуçра çав шухăшсем капланнăçемĕн
Пĕлесшĕн вăл: пурăнмалла епле?

Ăна кам калĕ-ха: мĕн лайăх, япăх?
Мĕн пулĕ, вăл кайсассăн çĕр çинчен?
Мĕн ма хуçаланать ниметăманлăх?
Явапĕ пур е çук пĕлес тесен?

## VII

Ыр ят юлать такам та ăмсанмалăх,
Танлашаймасть унпа пуянлăх, хак.
Ыйтсан: çуралнă кун-и саншăн паллă?
Яваплăп: çук! Чун тухнă кун паха.

Çултан пăрăннисем ĕçке пит савĕç,
Вăл киленӳ парать ӳте, чуна.
Анчах та чĕррисем аван ăнланĕç
Çак пурнăçа — пытарнă чух çынна.

Вĕри куççуль чун-чĕрене тасатĕ,
Вăл савăк кулăран та кирлĕрех.
Салхуллă çын кирек хăçан та хатĕр
Терт-нушана туйса илме тӳрех.

Ăçта йĕреççĕ — çавăнта ăсчах,
Чи йывăр вăхăтра çемçен калаçĕ.
Ăçта ĕçеççĕ — çавăнта ухмах,
Ăсла персессĕн те, унран кулаççĕ.

Чунтан каланă тӳрĕ сăмахсем,
Мĕн тăвăн-ха? Хăш чух, чăнах та, вирлĕ.
Эппин, пуриншĕн те эмел пек кирлĕ,
Айванăн юрринчен паха вĕсем.

Кӳкен çаппи хуран айне лексен,
Шатăртатса çунать, çынпа калаçнăн.
Тăмсай кулли те шăп çапла иккен:
Ахăлтатать пĕрмай ниме тăманшăн.

Анчах ăсчах та тухĕ айвана,
Çумри тусĕсене хĕсĕрлесессĕн.
Енчен те пуç тайсассăн укçана,
Чĕри чулланĕ хăвăрт, хăй сисмесĕр.

Ĕçе хаклаççĕ вĕçлесен кăна.
Эппин, малтан ан пул пушпараппанçă,
Сивлеççĕ шав мăна хуракана,
Тӳсĕмлипе утма пултарăн тачă.

Ăсу-тăну ан йышăнтăр çилле,
Тусна çухатăн шăмарса кайсассăн.
Çав — вĕчĕ — айванра йăва тупсан та,
Ăна пурнăçунта ялан сивле.

«Этемлĕх пурăннă авал аван,
Хальхи кунсем мĕскершĕн-ха пит япăх?»
Ăсчах калаçмĕ çакăн пек нихçан,
Ун чунĕнче сӳнсе çухалмĕ шанчăк.

Тĕтреллĕ кунсенче те вăл пултарĕ
Курса тăмашкăн çутă хĕвеле.
Мал ĕмĕтлĕ пулсассăн, хурлăх тарĕ,—
Анчах ăс-хал та, пурлăх та кирлех.

Чăнах та, кĕмĕл хӳттинче кăна
Иртсе каять пурин те пирĕн пурнăç.
Чыслатăп пурпĕр ăс пухакана,
Пĕлӳ пулсассăн — вăл асаплăх курмĕ.

Сăна, тĕпче-ха Турă ĕç-хĕлне,
Ăна улăштараймăн нихăçан та.
Армак-чармак ӳсен йывăççене
Тӳп-тӳрĕ тăваймастăн, тăрăшсан та.

Тивлетлĕ кунсенче ялан кур ырлăх,
Пут тарăн шухăша, çитсессĕн хурлăх.
Çаксем килеççĕ Турă çырнинчен,
Этем иртмен-ха Ун ирĕкĕнчен.

Хĕвĕшӳре эп мĕн кăна курмарăм:
Кĕрешӳре чăн-чăн этем пĕтет,

Тасамарри куллен-кун иртĕхет,
Кунçулĕ те пит вăрăм хăяматăн.

Май çук пулсан, хĕрӳ ĕçе ан пуçăн,
Ан чăкăлташ, тӳсĕмлĕхне упра.
Вĕрен хăвна ху сыхлама, ан хуçăл,
Пит кирлĕ-и тухмашкăн паттăра?

Самантлăх йăпанушăн ăссăрла
Пуç çухатса, ан кĕр-ха çылăха.
Ун пек тусан, санра пĕтет кĕç хал,
Эппин, çут тĕнчене ялан хакла.

Тус-юлташра тупсассăнах тĕрек,
Пĕрле нихçан та тухмăр хисепрен.
Турра шанни сире ялан вăй парĕ,
Усал-тĕсел инкек кӳреймĕ, тарĕ.

Ăсчах тӳр сăмахпа, шухăшĕпе
Влаçри хуçасене те тĕлĕнтерĕ.
Вăл вăйлă вун çынран та ăсĕпе,
Тупăшсанах кашнийĕшне çĕнтерĕ.

Анчах тӳр чунлисем те ăнсăртран
Кĕреççĕ айăпа, тупаççĕ çылăх.
Чун-чĕрере пулсан та чунлăх, çынлăх,
Вĕсем те пăрăнаççĕ тĕп çулран.

Илтетĕн-и хăш чух эс сив сăмах
(Чуру сан пакăлтатĕ уямасăр).
Çавах ним пулман пек, асăрхамасăр
Унран васкавлăн тăрăш пăрăнма.

Çакна хăвах аван чухлатăн мар-и,
Тахçан пулсаччĕ эс те çавнашкал?
Çынна хурлаттăн айăпсăр, ниммаршăн,.
Эппин, хирĕçлеме халь çук сан хал.

Ăс-халăмпа хĕрӳленсе тĕпчерĕм,
Вара шутларăм: «Пулăп эп ăсчах».
Ăс çивĕч-и е катăк — тĕрĕслерĕм,
Кайран ăнлантăм: çуннă кăлăхах.

Мĕн ма тесен, пĕлӳ çĕршывĕ маншăн,
Çут çăлтăр евĕр, çиçĕ аякра.
Е тинĕс пек виçесĕр аслă, тарăн,
Ăна йăлт ăнкараймăн пурнăçра.

Çавах тĕпчерĕм, ăнланасшăн пултăм,
Пĕлӳ, ăс-хакăл вăйĕсем мĕнре?
Этепсĕрлĕх, айванлăх та эп куртăм,
Вĕсем те пурăнаççĕ тĕнчере.

Хавшаккисен ав çылăхсен пуçламăш
Нумай чухне — ясар хĕрарăмра.
Чун-чĕмĕ сăлă çав, суя йăпатмăш,
Арçынсене тытать шав тăлăра.

Таса чунли хĕрарăм тетĕлне
Нихçан та лекмĕ — лешĕ илĕртсен те,
Çакна, Екклесиаст — эп, пĕчченех
Тĕпченĕçем куллен кунах ĕнентĕм.

Шыранăçем çакна аван ăнлантăм:
Арçын — тӳркăмăлли, пинре — пĕрре.
Таса хĕрарăма, шел, тупаймарăм,
Пурах-ши вăл çак çутă тĕнчере?

Çакна та пĕлтĕм: Турă этеме
Хăй тĕслĕ, хăйĕн евĕрлех пултарнă.
Каярахпа Ăна çын итлемен,
Хăй ĕмĕт-шухăшне вăл улăштарнă.

## VIII

Япаласен пĕлтерĕшне пĕрмай
Кам ăслă-тăнлă, çав куллен туйтарĕ.
Тем тĕрлĕ пулăма пулать курма,
Е тепĕр чух унра çын терчĕ-тарĕ.

Эс Турă умĕнче тупа тусассăн,
Патша хушнисене те пурнăçла.
Пăлхавçăпа ан хутшăн, май пулсассăн,
Ун ĕç-хĕлне, çулне сивле, хурла.

Ан пăрăн хуçунтан, çапах туйсам:
Ырăпала пĕрле çӳрет усал.
Çапла пулсассăн та патша вăй-халĕ
Çĕнтерĕ такама. Ку саншăн паллă.

Тӳре вăл пур çĕрте те, ун сăмахĕ
Хăш чух хаяр, кăра, хăш чух ахах пек.
Ăна куллен кунах пăхăнакан
Ыйтаймĕ уççăн: «Эс мĕн хăтланан?»

Ун халалне куллен кам йышăнать —
Çав çыннăн шăкăл-шăкăл пурнăç иртĕ.
Мехел çитсен, ăсчах йăлт ăнланать,
Эппин, ĕмĕтленни кайран ун çитĕ.

Анчах васкавлă, улшăнуллă пулăм
Пĕр хăйне çеç пăхăнтарма пĕлет.
Ăна уямасассăн — сӳнĕ кулă,
Ăна уямасан — çын тертленет.

Мĕн пулĕ малашне? Патша саккунĕ
Пуласлăхра сехмет е савнăç сунĕ'
Вăл улшăнать-и е çаплах юлать,
Çĕр тĕрлĕ ыйтăва кам хуравлать?

Этем хуçаланаймĕ чунĕпе,
Çитет те вăхăт — çĕнтерет эсрелĕ.
Тапаçлансан та пур вăй-халĕпе,
Пӳрни пулать. Лап сӳнĕ ун хĕвелĕ.

Çакна çут тĕнчере пĕрмай сăнарăм,
Улшăнакан ĕç-пуç пирки шутларăм:
Пĕри ав çынсемпе хуçаланать,
Кайран терт кӳнĕшĕн хăй хур курать.

Ăна пурăннă чух сума сăватчĕç,
Сăлтавĕ пур-и, çук-и, пуç çапатчĕç...
Вилсен, кайса чиксессĕн çăвана,
Кăшт тăрсанах манаççĕ хуçана.

Вăл пурнăçра мĕн чухлĕ тунă сăтăр,
Çавах ăна никам айăпламасть.
Усал ĕçпе çын çыхлансан та тăтăш,
Тӳре хăйне кĕç питлессе шанмасть.

Çылăхлисем çĕр хут айăпланаççĕ,
Нихçан пĕлмеççĕ намăс-симĕсе.
Анчах та Турă умĕнче, сисен:
Сăваплисем кăна телей кураççĕ.

Хăйсемшĕн яланах тăрăшнăран,
Усаллисен мĕлке пек иртĕ пурнăç.
Чун-чĕререн хисеплесен Турра,
Шăпу нихçан та санăн пулмĕ хурлă.

Шăв-шавлă пурнăçра тата епле
Хутшăнусем çынсен пит хирĕçӳллĕ:
Кам тивĕç мар — çав шав курать тивлет,
Ăна кам тивĕç — вăл тупаймĕ хӳтлĕх.

Шăп çавăнпа эп савнăçа мухтарăм,
Ĕç, çи, юп кур хĕвелĕн айĕнче.

Пурӑннӑ чух ҫакна аван ӑнлантӑм,
Хакли вӑл — Турӑ панӑ кунсенче.

Ӑс-халӑн пур-и-ха пуҫламӑш, вӗҫӗ?
Ҫакна пӗлес килетчӗ ман йӑлтах.
Пит пархатарлӑ-ши этемӗн ӗҫӗ,
Ыйха манса, ҫунмасть-и кӑлӑхах?

Кайран чухларӑм: тем пек тӑрӑшсан та,
Этем иртеймӗ Турӑ ҫырнинчен.
«Пӗлӳ ман аслӑ»,— теекен ӑсчах та
Пурне те тӗшмӗртеймӗ ҫӗр ҫинче.

IX

Тӳркӑмӑлли, ӑсчах ӑнлантараймӗ:
Ҫынра хӑҫан пуҫланнӑ юрату?
Ӑна усал мӗскершӗн хур тӑваймӗ?
Ӑнах терт мӗншӗн кӳрӗ ырату?

Кашнийӗнех кунҫулӗ пӗрешкел:
Ыр кӑмӑллин те е усал чунлин те,
Пуянӑн та, айванӑн та, ӑслин те
Тухать пурин те чун — ҫитсен мехел.

Ҫак инкеке этем, пӗлсе тӑруҫӑн,
Чунпа сисет хӑй вӑйсӑр иккенне.
Сӑлтавӗ пур е ҫук — вӗчӗрхенет,
Пуласлӑх унӑшӑн, чӑн та, пит хӑрушӑ.

Ӗнер ҫеҫ хӑрататчӗ арӑслан,
Вӑл кӑнчӗ те — унран халь вӑйлӑ анчӑк.
Ҫавах эс ҫӗр ҫинче ҫӳрен пулсан,
Санра пӗтмен-ха пуҫӗпех ҫут шанчӑк.

Пурнакансем пӗлеҫҫӗ вилессе,
Тупӑкрисем кӑна ним чухламаҫҫӗ.

Тинех ан кӗт — йӑл кулмӗҫ тек вӗсем,
Кашниййӗ манӑҫ тӗнчине каяҫҫӗ.

Вӗсемшӗн ют халь юрату та вӗчӗ,
Сив кӗвӗҫӳ те пач тарӑхтармасть.
Йӑл-йӑл ҫиҫен хӗвел ҫупӑрламасть,
Ҫак ҫӗр ҫинче кашнин вӗҫленнӗ ӗҫӗ.

Эппин, пурӑннӑ чух ҫӳре те савӑн,
Ҫи хӑвӑн ҫӑкӑрна, эрех тутан.
Кирек хӑҫан та кӑмӑл пултӑр авӑк,
Ик ӗмӗр пулмӗ сан кунта нихҫан.

Кӗлеткӳне кирек хӑш вӑхӑтра
Тирпейлӗ те таса тумтир хуплатӑр.
Пӳртре латан шӑрши нихҫан ан чактӑр,
Ҫурта чипер сӑнна ҫутаттӑрах.

Ҫак хӗвӗшӳллӗ пурнӑҫра ялан
Пӗртен пӗр арӑмна юрат чунтан.
Унпа киленӗҫ, ырлӑх-пурлӑх тупӑн,
Мӗн ма тесен, ҫакна пултарнӑ Турӑ.

Вӑй пур чухне нихҫан та ан ӳркен,
Тӑнӑҫлӑхра ыр курӗ ӗҫлекен.
Леш тӗнчене яланлӑхах кайсассӑн,
Ҫӗр ҫинчи пек нихҫан ӑс пухаймастӑн.

Ҫакна та эп сӑнарӑм питӗ лайӑх:
Кам правур мар — ҫав чупаймасть вӑр-вар
Астӑн, вӑй-хал ҫуккин кунҫулӗ япӑх,
Шӑпи кашниййӗн пӗрешкел, начар.

Пулӑсене тытаҫҫӗ тетелпе,
Кайӑксене хӑратӗ серепе.
Анчах синкер танатинчен ҫынсем те
Тухаймӗҫ ыррӑн-сыввӑн, тем сӗнсен те.

Хĕвелĕн айĕнче çакна та куртăм,
Ăс-хал пĕлтерĕшне аван эп туйрăм:
Пĕррехинче, пĕр пĕчĕк хулара
Патша ларасшăн пулнă хуçара.

Ăна вăл пур енчен те хупăрланă,
Куллен-кун хăратса тăма пуçланă.
Хӳтĕлекенĕсен сахал вăй-хал —
Çапах вĕсен ĕç-пуç каять кал-кал.

Пулăшаканĕ чухăн çын — ăсчах —
Вĕрентнĕрен тăшман тарать часах.
Анчах каярахпа, нуша иртсессĕн,
Ертӳçĕне манаççĕ. Ма тесессĕн,

Вăл юрлă çын-çке, тин сĕнӳ-канашĕ
Пач кирлĕ мар. Пуян унпа калаçмĕ.
Çак тĕрĕсмарлăх упранать ялан,
Мĕскĕнсене çул парас çук нихçан.

Çавах ăсчахăн лăпкă сăмахне
Итлеççĕ те чĕре патне илеççĕ.
Çынсем усал хуçа вĕрентнине,
Вăл суйнине туйсассăн, ĕненмеççĕ.

Тĕрĕслĕхе çĕнеймĕн вăйпала,
Ун çул-йĕрне пӳлме ан хăй нихçан та.
Хăш чух, чи пĕчĕк йăнăша пула,
Пит лайăх ĕç те самантрах путланĕ

## X

Мирă савăтĕнчи вил шăнасем
Ун ырă шăршине йывăрлатаççĕ.
Кăшт йăнăшсассăнах, ват ăсчахсем
Упраннă чыс-сумне йăлт çухатаççĕ.

Ăс-хакăл çулĕ шав ик еннелле,
Хăшне ырлан, çавна кăна суйлатăн:

Сылтăмалла кайсан-тупан телей,
Сулахайра — асап кăна куратăн.

Айван, кирек мĕнле çулпа кайсан та,
Нихçан та тупаймасть хăй пайтине.
Тĕллевĕ паллă: пурăнасшăн янтă,
Сисеççĕ пурте ун çăткăнлăхне.

Енчен те пуçлăху пит çиленсессĕн,
Унпа пул сапăр, пĕртте ан тавлаш.
Хăв айăпна йăлтах туйсассăн эсĕ,
Йăвашлăха хуçа хаклать ялан.

Анчах хĕвелĕн айĕнче сăнарăм:
Пĕр пуçлăхран тухать мĕн чул инкек.
Пĕлмен çынна хур кӳрĕ тикенек:
Хитре пулсассăн та, чир-чĕр вăл сарĕ.

Пĕлӳсĕрлĕх, тӳрккеслĕх яланах,
Май пур-и, çук-и — тӳпене кармашĕ.
Ятли вара виç пуслă сумшăнах
Ниме тăман ĕç-пуçшăнах аташмĕ.

Эп курнă пурнăçра чурасене:
Вĕсем лаша çинче ларса пыратчĕç.
Унтах тĕл пулнăччĕ улпутсене:
Тусан çăтса, мĕскĕнленсе утатчĕç.

Енчен те çыншăн шăтăк эс алтсассăн,
Кĕрсе ӳкетĕн лакăма хăвах.
Çĕленĕн йăвине те пăтратсассăн,
Ним шутламасăр сăхĕ вăл санах.

Е мăн чула куçарнă чух, сасартăк
Ăшчиккӳне сисмесĕр хускататăн.
Е вут çурмашкăн картишне тухсан,
Пуленккепе хăвна ху амантан.

Енчен те аллунти пуртту мăка,
Çавна пула тар тăкăн та тертленĕн.

Анчах ăна куллен-кун хăйракан
Ĕçлет халтан каймасăрах, тĕллевлĕн.

Çиллентерсен çĕлен çынна сăхать,
Вĕрӳ-суру сăмахĕ хăтараймĕ.
Усал чĕлхе те çавнашкал уямĕ;
Сана кĕтмен çĕртен шар кăтартать.

Ăсчах тути-çăварĕнчи сăмах
Чирлишĕн—сиплĕ, ĕçлекеншĕн—пиллĕ.
Анчах айванăн урăхла пачах:
Пит кулăшла хăш чух, пуклак е çиллĕ.

Е ăнланаймăн эс ăна ялан,
Мĕн ма тесен, пуçламăшĕ илемлĕ.
Вĕçлет хăй шухăшне пит ăссăрла,
Тĕп тупсăмĕ пăтранчăк та тĕтреллĕ.

Чарсан та пакăлтатĕ-ха пит шавлăн,
Чăнах та, уншăн шурă тĕс хура.
Мĕн пулĕ малашне? Епле яваплăн?
Анчах та «вĕрентет» вăл, «ăс» парать.

Йăлт чăмласа парсассăн та, юлташĕ
Пĕлмест япаласен пĕлтерĕшне.
Лексен хулан шăв-шавлă урамне,
Тăр-кăнтăрлах вăрманти пек аташĕ.

Эй, аслă Çĕр! Шăпу чăнах та хурлă,
Айван патшун ăс-тăн ачанни пек.
Феодалсем пухмаççĕ ĕнтĕ пурлăх,
Тĕлĕнтереççĕ тимсĕрлĕхĕпе.

Эй, аслă Çĕр! Шăпу пач урăхла,
Пĕрре те иксĕлмест патшун ăс-халĕ.
Ун ĕмĕчĕ çапла, вăл шухăшлать:
Тивлетлĕ пултăр хальхи пек ман халăх.

Алла усса ларсан, ним тумасан,
Вĕр çĕнĕ çурт та юхăнать сисмесĕр.
Эппин, ăна хутран-ситрен юса,
Вара ун ĕмĕрне тăсатăн эсĕ.

Ĕçке хурланассишĕн ирттермеççĕ:
Симпыл сыпсан ташлаççĕ, хĕпĕртеççĕ.
Укçу-тенкӳ çителĕклĕ пулсан.
Сăну-питӳ нихçан хĕрелмĕ сан.

Анчах та ушкăнра е ăнсăртран
Хăв патшуна усал ан сун нихçан.
Йĕрлевçисем ун сыхă — çывăрмаççĕ,
Сан вăрттăн шухăшна та йăлт чухлаççĕ.

XI

Суту-илӳсĕр мул пуçтарăнмасть,
Кирек ăçта та кирлĕ пуçарулăх.
Пĕрне-пĕри куллен кам пулăшмасть,
Нихçан çав çыннăн пухăнаймĕ пурлăх.

Услам илес тесен хĕрӳ ĕçре,
Эртел ялан пĕр çăвартан çеç суртăр.
Куллен çулăхакан терт-инкекре
Сыхланĕ те арканмĕ сирĕн çуртăр.

Пăсланнă шыв, пĕлĕтсене куçса,
Çав вырăнтах хура çĕре шăварĕ.
Енчен те йывăçа касса ярсан,
Пĕр еннелле вăл ахлатса йăванĕ.

Хирти çил майлă мар тесе ларсассăн,
Ыраш пусси юлать акмасăрах.
Хура пĕлĕтсенчен шав хăрасассăн,
Тырпул пĕтме пултарĕ вырмара.

Çил ачисем, чупса çӳренĕçемĕн,
Ăçта çитеççĕ-ши? Çын чухлаймасть.
Шăп çавăн пек, варта выртан этемĕн
Пуласлăхне никам та калаймасть.

Тырпулĕ ăнĕ-ши е пулĕ япăх?
Ирпе, каçпа эс çакăншăн пăлхан.
Кĕр кунĕсем татса параççĕ лайăх:
Ĕçчен-и эсĕ е пушпараппан?

Хĕвел çути пуриншĕн те пит хаклă,
Асамлă хĕмĕ илĕртет куçа.
Ун иксĕлми ăшши этемшĕн чакмĕ,
Вăл чĕрчунсемшĕн те юмарт хуçа.

Пулсан та çыннăн ăраскаллă ĕмĕр,
Ан мантăр нихăçан та вăл çакна:
Çут хĕвеле йăлт улăштарĕ сĕмлĕх,—
Этемĕн пăхăнмах тивет ăна.

Яш çыннăм, юн чунра вылянă чух,
Куçу мĕне савать — çавна çеç туп эс.
Юп курăн-и е пулăн питĕ шух,
Сан кунçулна кайран йăлт хаклĕ Турă.

Хуйха-суйха ан тыт хăв чĕрӳнте,
Кунта хуçаланать ниметăманлăх.
Ачалăх, яшлăх васкаса иртет,
Ан çыпçăнтăр сана усаллăх.

XII

Кун панă çынсене ан ман яш чух,
Хура элчел кĕттермĕ, çитĕ хăвăрт.
Сăмахлăн эс, чунра пулсассăн тăвăр:
«Çак пурнăçра телей те савнăç çук».

Хĕвелĕ, уйăхĕ сӳнмен-ха саншăн,
Çунаççĕ тӳпере çут çăлтăрсем.
Çавах çывхарĕç ăмăр пĕлĕтсем,
Тавралăха вĕсем йăлт хупăрласшăн.

Ун чух çурт сыхлаканăн вăйĕ хавшĕ,
Вăл ишĕлме пултарнăран тĕпрен.

Çумри арманĕ ларĕ пĕр шăв-шавсăр,
Çут кантăкĕ йăл çиçмĕ пит хитрен.

Арманĕ ĕçлеме пăрахнăран
Çурт алăкĕ пулма пултарĕ хупă.
Автан хутран-ситрен сасне парсан,
Хуçи урамалла тухма май тупĕ

Тек илĕртмĕç ăна çĕн сăнарсем,
Вăй-халĕ чакнăран пĕтет тĕллевĕ.
Ыр шăрш сарсан та хӳхĕм миндальсем,
Хутланĕ унăн пĕвĕ, шăрчăк евĕр.

Çын ĕмĕрхи килне каймашкăн хатĕр,
Ăна тин пулăшаймĕ кипарис.
Иртет ун пурнăçра хурри-шурри,
Инçе çула куççуль тăкса ăсатĕç.

Çут кĕмĕл вăчăри йăлт татăлман-ха,
Чашкипе кăкшăмĕ ун — арканман.
Шыв кустăрми шалтăртатса ванман-ха,
Çăл тараси яланлăхах путман...

Этемĕн ӳчĕ таврăнать Çĕре,
Чунне яланлăхах илет кĕç Турă.
Екклесиаст калать: «Хĕвĕшӳре,
Ниметăманлăхра иртет мĕнпурĕ...»

Екклесиаст пĕр хăйшĕн тăрăшман,
Вăл халăха ăс панă та вĕрентнĕ.
Чылай тар тăкнă, тӳснĕ, шав тĕпченĕ,
Ун хыççăн юлнă хайлавсем нумай.

Вăл тăрăшнă çут тĕнчере куллен,
Пĕлесшĕн пулнă: пур-и çут тивлет?
Калатăп эп: Екклесиаст сăмахĕ
Чи тĕрĕсси, ӳссех тăрать ун хакĕ.

Ăсхаллисен пуплевĕсем пит çивĕч,
Йĕп пек, пăта пекех, тăрăнтараççĕ.
Вĕсем (сана хăш чух, тен, йывăр тивĕ)
Пĕр Вĕрентӳçĕрен çеç ăс пухаççĕ.

Ытти хайлав, ĕненччĕ эсĕ, ывлăм,
Куллен-кунхи ĕçре пит кирлех мар.
Кĕнекесем те ан вула нумай,
Унпа шав паллашсассăн, чакĕ сывлăх.

Эппин пĕтĕмлетер мĕн пуррине:
Йĕркесĕр хăтлану нихçан ан пултăр,
Пĕрмай итле эс Турă хушнине,
Вара тăнăçлăхра çеç иртĕ пурнăç.

Мĕн ма тесен, кунти ĕçе тӳрех
Курса-пĕлсе тăрать-çке аслă Турă.
Этемшĕн вăл — кирек хăçан тӳре,
Унран вăйли, ăсли пулман-ха урăх.

Мĕскер пулса иртет — эс пытараймăн,
Чухлать пурне те Вăл çеç яланах.
Усалăн е ыр çын сăнне йăлтах
Уçса парать. Унтан ниçта тараймăн!

# СОЛОМОНĂН «ЮРĂСЕН ЮРРИ»

1

Тăван çĕре хĕвелĕ çупăрланăн
Мана эс ачашла, хĕрӳн чупту.
Симпылран тутлăрах пылак туту,
Пĕр сан пата ир-каç эп ăнтăлатăп.

Тавралăха яту ав мирă[1] евĕр
Ыр шăршă вĕççĕр-хĕрсĕр сапалать.
Сар çу пек кăмăлу епле пит евĕк,
Сана чылай хĕр вăрттăн пуççапать.

Чĕн хăвăнпа! Вара пĕрле кĕретпĕр
Юмаххăн курăнан çут кермене
(Патша мана чĕнсеччĕ хăй патне).
Кунта çӳле çĕкленĕ чун тивлетлĕн.

Иерусалим[2] хĕрĕсем! Чăнах та
Хура сăн-питлĕ. Çав-çавах чипер.

Умра Кидарăн[3] чатăрне куратăн,
Вăл селĕм, Соломон[1] чаршавĕ пек.

Хĕвелĕ хĕртнĕрен сăн-питĕм пăхăр,
Ку хĕр ытла кĕре тесе ан пăхăр.
Пĕрре çилленнĕччĕ те куккасем,
Ĕç хушнăччĕ вара мана вĕсем.

Каларĕç: эс сыхла-ха иçĕме,
Ун çимĕçĕ сĕтеклĕ, тулăх пултăр.
Эп итлемерĕм темшĕн, алă султăм —
Хам çырлана çухатасса пĕлмен.

Чун савнă çыннăм, эсĕ пĕлтерсемччĕ:
Ăçта кĕтӳ кĕтен? Канан ăçта?
Сана шырарăм тĕрлĕ тапăрта,
Ăçта çӳретĕн? Вăрттăн систерсемччĕ.

Çапла калассине те эп чухлатăп:
Енчен те, хӳхĕм хĕр, хăв пĕлмесен,
Кĕтӳçĕ чатăрне умра куран-тăк,
Пĕрмай çӳре вĕсемпеле куллен.

Илтеп: эс Фараонăн[5] çилçуначĕ,
Санпа танлашĕ вăл, ман чун савни.
Ниме пăхмасăр шиксĕр вирхĕнни
Чĕремшĕн çывăх. Çакăн пек юлсамччĕ.

Хăлха çакки те мăй çыххи питне
Ытла та хӳхĕмлĕх пиллет ытарлăн.
Каçса кайса пăхатăп, ăшçунтармăш,
Тӳлек хусканăвна, кĕлеткӳне.

Алкусене тăватпăр ылтăнран,
Ун çумĕнчех шав йăлтăртаттăр кĕмĕл.
Ăçта çитсессĕн те асамлă хĕмĕ
Вут-кăварла çуталтăр таврара.

Пĕл: нард[6] шăрши ытла та симлĕ, тутлă
Ыр шухăшсем чунра вăл çуратать.
Кунтах патшамăр. Вăхăчĕ ун шутлă,
Çавах сĕтелĕн хушшинче ларать.

## II

Хавхаланса калатăп эп хавассăн:
Шап-шур нарцисс чечекĕ пек пулам!
Саронăн[9] айлăмĕ пуян хальхаççăн,
Хĕп-хĕрлĕ лили те унта чылай.

Анчах епле, епле-ха танлаштарăн
Çав лилие эс йĕплĕ кӳкенпе?
Савнийĕмçĕм, эс ман пĕртен-пĕр ар-çке,
Ах, çӳреместĕн-ши сар хĕрсемпе?

Сип-симĕс улмуççи сĕм вăрманта,
Ют йывăç хӳттинче çеç ӳснĕ евĕр,
Яш каччăсем те пухăнсан кунта,
Эс курăнатăн такамран та евĕк.

Эп йывăç сулхăнне пит кăмăллатăп,
Пĕччен ларатăп çил лăпканă май.
Çапах улмуççине çеç юрататăп,
Ун çимĕçĕ уçать кăмăлăма.

Ялав çар çыннине хавхалантарнăн,
Юратăву та санăн çавнашкал.
Куратăп-ха, мана сĕнетĕн ал,
Кĕретпĕр кермене. Тин йăлăнтармăп.

Шалта чуна яри уçан хаваслăх,
Кунта пулатăп санпала тинех.
Савăшура йăлт ывăнтăм, хăналăр,
Çитерĕр панулми, ĕçем эрех.

Кăшт хĕрлĕ тĕслĕ мирă çупкăмне эп
Çупăрлăттăм, сана хыт савнă пек.
Хавхаланса вăратăп сисĕмне те,
Илĕртнĕ май чун-чĕм илемĕпе.

Ен Геди пахчинче пур тĕрлĕ çимĕç,
Анчах та вĕсенчен чи лайăххи
Киперăн[8] сар чечекĕ, вăл та симлĕ,
Сана асилтерет ун пĕр çыххи.

Ман кăвакарчăнăм, эс, чăн та, хӳхĕм,
Кирек хăçан тăратăн ман умра.
Пĕр сана çеç чунтан эп савăп ӳлĕм,
Мĕн ма тесен, каймастăн асăмран.

Тавралăха сăна-ха, вăл сип-симĕс,
Сан кăмăлу пекех тӳлек, ачаш.
Хĕвел те çавнашкал, çитсессĕн çимĕк
Пит ăшă, сивĕ мар, çапах йăваш.

Çурт çийĕ пирĕн кедр хăминчен,
Паха ен пур-ха ун, çĕрмест вăл хăвăрт.
Маччи — кипарисран, туятăр хăвăр,
Ыр шăршă сапалать пӳрте куллен.

Савнийĕм манпала ачаш та çепĕç,
Ун сулахай алли пуç тĕлĕнче,
Сылтăммипе вăл ыталать те, эпĕ
Пуплетĕп-ха: «Тек пулмăн эс пĕччен».

Иерусалимăн хĕрĕсем! Пăлан,
Ту качаки ячĕпеле тархаслăп:
Ман савнине ан илĕртĕр ялан,
Шухăшăрпа пулсамăр ăслă, аслă.

Кĕç ун янравлă сассине илтетĕп,
Çӳрет вăл сĕм çĕрле те тăр пĕччен.

Ăна шиклентереймӗ тӗмеске те,
Юланутне чуптарӗ ту çинче.

Ту качаки, пăлан пекех хăюллăн
Савнийĕм манăн çурт патне çитет.
Чӳрече витĕр сăнĕ вĕлтлетет.
Эппин... хĕл кунĕсем хыçа кĕç юлĕç.

Пуçлать вăл калаçмашкăн пит тӳлеккĕн:
Вăран, савнийĕмçĕм, тăрсам часрах.
Ытла та ан кĕттер-ха, тусăм, тек эс,
Тухсамччĕ ман пата халь хăвăртрах...

Кăра та сив кунсем килмеççĕ урăх,
Хаваслăн çутçанталăк чĕрĕлет.
Чуна уçса тин ăшă çумăр çурĕ,
Лĕп çил, хĕвел çĕре час типĕтет.

Çарансене вут чечексем иленчĕç,
Хаваслă юрă-кĕвĕ янăрать.
Улатăпа та сассине парать,
Чăнах, хитре çĕршывăм, пирĕн енĕм.

Смоква йывăçĕсем кăларчĕç кăчкă,
Иçĕм пахчи ыр шăршă сапалать.
Савнийĕмçĕм, эс ан кĕттер-ха кăшт та,
Тух урама, сана çеç куç савать.

Ман кăвакарчăнăм, йăву сан халĕ
Чул тăвăн хӳттинче-çке, айлăмра.
Хавхаланса чипер сăнна курам,
Хитре сассупала çĕкленĕ халăм.

Сыхлаттăн эсĕ иçĕм пахчине,
Вăл чечекре ларать, хитре хальхаççăн.
Сада сиен кӳнишĕнех тытаççĕ
Чее тилле е ун çурисене.

Юратнă çыннăм, эс манпа пулсассăн,
Сана çеç савăп эпĕ ĕмĕрех.
Çӳрен пуль лили хушшинче ирех,
Хутран-ситрен сывлатăн ĕнтĕ ассăн.

Тавралăха сив сулхăн çапиччен,
Хĕвеллĕ, янкăр кун пуçланиччен,
Ту качаки, пăлан пек чупнăн сассăр,
Ыйтатăп, тух-ха айлăма хавассăн.

III

Каç пулчĕ те, эп канăçа çухатрăм,
Чун пӳрнине шырарăм тăрăшса.
Тӳшек çинче выртать-ши? Тупаймарăм.
Тен, ман пекех çӳрет вăл кулянса.

Эп тăтăм та вара пĕччен васкарăм
Хулан сĕм çапнă лăпкă урамне.
Площадьсенче ăна темччен шырарăм,
Анчах та тĕл пулмарăм савнине.

Хуралçăсем кĕç курăнчĕç, утатчĕç
Вĕсем ушкăнпала хула тавра.
Ыйтма пуçларăм-ха хăра-хăра:
«Ăçта варли? Ăна эп юрататăп.»

Сых çыннисем манран кăшт пăрăнсассăн,
Тĕл пултăм савнă çыннăма часах.
Калаçрăм унпала хавасланса,
Мĕн тăвăн-ха? Сывларăм темшĕн ассăн.

Ăна хам ытамран ярас темерĕм,
Пĕрле васкарăмăр анне килне.
Эп Çĕр пулсан, Эс ман Хĕвелĕм, терĕм,
Кĕç кĕтĕмĕр пĕр пӳлĕм хăтлăхне.

Иерусалимăн хĕрĕсем! Пăлан,
Ту качаки ячĕпеле тархаслăп:
Ман савнине ан илĕртĕр ялан,
Шухăшăрпа пулсамăр ăслă, аслă!

Юпа пек тĕтĕм пушхирте. Вăл кам-ши?
Пур фимиамăн[10], мирăн ыр шăрши.
Пит анлă çӳллĕ хурантан тухать-ши,
Пĕлесчĕ: кам-ха унăн чăн хуçи?

Ав Соломонăн вырăнĕ умра:
Йĕри-тавра хуралçăсем тăраççĕ,
Пĕр утмăл çын пуль çакă ушкăнра,
Вăйлăскерсем патшамăра сыхлаççĕ.

Кашнийĕн çумĕнче пур хĕçпăшал,
Кирек хăш самантра кашниййĕ харсăр.
Ан куртăр тенĕн ыр хуçа нуша,
Каçпа та уншăн çапăçмашкăн хатĕр.

Патшамăр Соломон хăй вырăнне
Ливан йывăççинчен туса çитернĕ.
Çумри, çывăхĕнчи юпасене
Çут кĕмĕлпе кăна йăлт илемлетнĕ.

Трон тыткăчне ылтăнпала сăрланă,
Çут ларкăчĕ хĕвеллĕн ялтăрать.
Ăна вăл хĕрлĕ пуставпа хуплана,
Çак хӳтĕре патшамăр хăй ларать.

Иерусалимăн пикисем хĕрсех
Куллен-кун тăрăшса кунта ĕçлеççĕ.
Ытла та хăтлă-çке пӳлĕмĕсем:
Çут тĕссемпе, тасалăхпа çиçеççĕ.

Сионăн[11] хĕрĕсем! Кашниййĕваскăр,
Патшамăр Соломонăн халь уяв.

Вăл венчетре тăрать. Унтан туя
Кĕрлеттерме пуçлаççĕ пит хавассăн!

IV

Патшам калать: эс пит илемлĕ, хӳхĕм,
Ман кăвакарчăнăм, çӳçӳ кăтра,
Галаад[12] тăвĕ пек ялан хура,
Сана эп савăп-ха паян та ӳлĕм.

Качака кĕтĕвĕ çӳл ту çинчен
Çаранлă айлăма васкана евĕр,
Сан çӳçӳсем те шăп çапла, иккен,
Куçу та йăлтăрать епле тĕллевлĕн.

Е сурăхсен çăра çăмне илсессĕн,
Кашнийĕшне шывра тасатнă пек,
Çиçеççĕ шăлусем шап-шур тĕспе,
Тĕкел çурасене аса илтернĕн.

Тăп-тăпăл тутусем хăю пек хĕрлĕ,
Вăл каснă гранат мар-ши? Çавăн тĕслĕ.
Кăтра çӳçӳ ик питçăмартине
Çил вĕрнĕ май ачашшăн сĕртĕнет.

Мăю Давид[13] башни пек йăрăс, çӳллĕ,
(Калассине калам, мана ан пӳлĕр.
Унта, пуплеç, пур тĕрлĕ хĕçпăшал,
Пин тĕрлĕ щит — çавсем параççĕ хал).

Ик панулми пек кăкăру, вĕсен
Тӳр килнĕ пытанмашкăн лилирен.
Йĕри-тавра, чăнах, илемлĕх, хăтлăх,
Йĕри-тавра, чăнах, тасалăх, шăплăх.

Эппин, хĕвеллĕ кун вĕçлениччен,
Тусен çулне сив сулхăн çапиччен

Эп мирă шăршипе темччен киленĕп,
Çав Фимиамлă çăрт патне çитетĕп.

Савнийĕмçĕм, санра тупаймăп кăлтăк.
Мĕн ма тесен, эс пуринчен хитре.
Шыра хăть хура пăнчă — пулĕ кăлăх,
Сăнна курсан, вăй-халлă ман чĕре.

Амон, Сенир, Ермон[14] тăвĕсенчен,
Барспа арăслансен йăвисенчен,
Ливан çĕршывĕнчен килсем, савниçĕм,
Санпа пĕрле хам утăма эп виçĕп.

Çураçнă хĕрĕм, эсĕ ырă йăмăк,
Пĕрре пăхсах вутланĕ шух чĕре.
Эрешлĕ мăй çыххи ытла та йăмăх,
Тен, çавă тыткăнлать мана сĕре!

Ах, ырă йăмăкăм, çураçнă хĕрĕм,
Çăвар-туту сан тутлă эрехрен.
Ыр шăршă сарăлать сăн-питӳнтен,
Чиперлĕхӳ, куратăп-ха, тем тĕрлĕ.

Чĕлхӳ айне караслă пыл-ши хунă,
Сĕт çулĕ те унтах-ши упранать?
Çураçнă хĕрĕм, эс Ливан пек курнăн,
Тумтирӳнтен ыр шăрш кăна çапать.

Ачашăм, йăмăкăм, çураçнă хĕрĕм,
Карталлă, хӳхĕм сад пекех, хăвах.
Пусри çăлкуçĕ те, туяп аван,
Йăлт хуптĕрленнĕ, курăнмасть ун йĕрĕ.

Гранат улмийĕсемлĕ пахчунта
Пур тутлăран та тутлă, техĕм çимĕç.
Кипера, мирăпа шафранĕ[15] симлĕ,
Алоэпе корица[16] пур унта.

Е нард шăршийĕ калама çук симлĕ,
Садри çăлкуç, чĕр кĕмĕл пек, таса.
Ливан енчен выртнишĕнех юхса,
Хĕвел хĕртсессĕн те, нихçан вăл типмĕ.

Çил ачисем! Халь ман пата çеç васкăр
Сив Çурçĕртен те ăшă Кăнтăртан.
Çитсессĕнех эп пăхакан сада,
Ун ыр шăршне тавралăха шав сарăр.

Сирĕнпеле савнийĕм те кĕç çитĕ,
Вăл кĕрĕ юмахри пек пахчана.
Унта тутанĕ тĕрлĕ тутлă çимĕç,
Шанатăп: килĕшĕ кунта ăна.

V

Çураçнă хĕрĕм, йăмăкăм, эп çитрĕм
Ытарайми чечен сада пĕччен.
Унта пуçтартăм мирăна темччен,
Сипет шăрши ӳт-пĕвĕме йалт витрĕ.

Унта караслă хам пыла астиврĕм,
Сĕт ĕçрĕм те тутантăм эрехе.
Юратакан туссем! Сире те тивĕ
Пурна киле, ман пек, курма рехет.

Çывратăп-ха. Çавах ман чунăм савăк,
Илтетĕп ак варлин ăш сăмахне.
Шаккать вăл алăка, тухма чĕнет,
Ӳт-пĕвĕме лăпкать эп кĕтнĕ сасă:

«Ыр кăвакарчăнăм, савнийĕм, йăмăк,
Çут сывлăмпа йĕпенчĕ манăн пуç,
Тумтирĕм нӳрĕк-çке, тархасшăн, уç,
Таса ӳтне курсассăн пулĕ çăмăл».

«Хитре халатăма хывса персессĕн,
Ăна тепре епле тăхăнмалла?
Тин çурăм урана пĕр ўркенмесĕр,
Ăна мĕскершĕн вараламалла?»

Юратнă çыннăм ансăр çурăкран
Мана хăй аллине кĕç тăсса пачĕ.
Çавна пула ăш-чик пăлханчĕ ман,
Çавна пула чун, кайăк пек, шуйханчĕ.

Эп, алăка уçас тесе, кĕç тăтăм.
Савни чĕнсен, епле-ха çиттĕр чăтăм?
Тумларĕ мирă манăн аллăмран,
Пўрнем йĕпетрĕ халăпа кайран.

Варлийĕме кĕç кĕртрĕм пўлĕме,
Анчах та вăл пĕрле юлмарĕ.
Çакна пит йывăр, кансĕр ĕненме,
Çавах ăна чармашкăн хал пулмарĕ.

Ăçта вăл халь? Тен, пушхирте çўрет-тĕр,
Анчах унта самум[17] хуçаланать.
Ăна епле шанса, çунса кĕтеттĕм,
Чĕрем тухса тарас пекех тапать.

Нихçанхинчен те çепĕçчĕ савниçĕм,
Çавна пула ăна чĕнетĕп: «Кил!
Пĕлетĕп: сансăр сивĕ манăн кил,
Самантлăха хăть пул эс йăлтăр çиçĕм».

Хĕвел тухман-ха. Пурĕпĕр васкарăм
Хулан сĕм çапнă, тĕксĕм урамне.
Ăна халтан кайса чылай шырарăм,
Çавах та тупаймарăм варлине.

Хуралçăсем тĕл пулчĕç-ха, утатчĕç
Пĕр пĕчĕк ушкăнпа хула тавра.

Мана вĕсем чарса хĕнерĕç, тапрĕç,
Тумтирĕме йăл касрĕç çурмаран.

«Иерусалимăн хĕрĕсем! Ыйтап:
Курсассăн савнине, тархасшăн, калăр,
Чун-чĕремре юлмарĕ манăн халăм,
Ăна анчах эп хытă юратап».

Вĕсем тĕпчеççĕ: «Эс, чăнах, чипер,
Çавах пире пĕлтер-ха пытармасăр,
Варли çунать-и-ха шăп хăвăн пек,
Тен, вăл юратăвна та тивĕç мар-тăр?»

«Çук, çук! савниййĕн сăнĕ шурă, ырă,
Вăл уйрăлса тăрать пин-пин çынран.
Ун пек чапли çут тĕнчере çук урăх,
Варлийĕм çеç пит хаклă пурнăçра.

Юратнă çыннăн сăнĕ ăшă, çутă,
Пуçне шăратнă тейĕн ылтăнран.
Ун çӳçĕ йăм хура, ытла кăтра,
Вăл юнашар чухне тĕллевлĕ утăм.

Юратнă çыннăн куçĕсем ачаш,
Кăвак к(ă)вакарчăна асилтереççĕ.
Куç шăрçисем сĕт юххинче ишеççĕ,
Тӳлеккĕн пăхнăран, вĕсем йăваш.

Питçăмарти — илĕртекен чечек,
Ик йăранта вырнаçнă, пит чечен.
Тути — хĕм лили, юхтарать каç-ирĕн
Тавралăха ыр шăршлă, сиплĕ мирă.

Алли чăп-чăмăр, сарă ылтăнран,
Вĕсем топаз çине вырнаçнă лайăх.
Вар-хырăмне слон шăмминчен ăсланă,
Аякĕсем — чи хаклă сапфиртан.[19]

Ура тунийĕ — мрамор юпаран,
Ун никĕсне те ылтăнран шăратнă.
Ливан пекех, вăл курăнать умра,
Е кедр йывăçĕ пек, вăл ыр ятлă.

Савнин тути — пылак çырла, сиссемĕр,
Иерусалимăн хĕрĕсем, çакна.
Пит çывăх ун ачашлăхĕ, илемĕ.
Шăп çакăншăн вăл килĕшет мана».

VI

«Савнийӳ сан ăçта-ха, чиперккеçĕм,
Тен, тинĕс хĕрринче халь вăл çӳрет?
Енчен те хирĕç мар пулсан, чĕкеçĕм,
Ăна пĕрле тупатпăр пурпĕрех».

«Юратнă çыннăм, эп çакна чухлатăп,
Çӳрет ытарайми садра пĕччен.
Хăйне туять вăл, лили татнăçем,
Нихçанхинчен хăюллă, ырă, паттăр.

Варлийĕм-кăйкăрăм, вăл йăлт халь манăн,
Ялан эп пăхăнатăп пĕр ăна.
Садра çӳретĕр, хирĕçлемĕп, кантăр,
Уç сывлăшпа килентĕр пĕр кана».

Ун сассине илтетĕп: эс, ачашăм,
Илемлĕ Фирца[20] хули пек тӳлек.
Санпа çеç Иерусалим танлашĕ,
Ялан маттур, вăрçа кĕрен полк пек.

Татах ыйтать: ан пăх çапла тĕпчевлĕн,
Вут-хĕм кăларнăн, чунăм пăлханать.
Уяр чухне çапла сап-сар хĕвелĕн
Çут пайăрки куçа йăмăхтарать.

Асилтерет, пуплет: эс питӗ хӳхӗм,
Ман кӑвакарчӑнӑм, ҫӳҫӳ кӑтра,
Галаад тӑвӗ пек чӑнах, хура,
Сана ҫаплах курасчӗ ыррӑн ӳлӗм.

Качака кӗтӗвӗ ҫӳл ту енчен
Ҫаранлӑ айлӑма васканӑ евӗр,
Сан ҫӳҫӳсем, чӑнах, ҫапла иккен.
Куҫу та йӑлтӑрать епле тӗллевлӗн.

Е сурӑхсен ҫӑра ҫӑмне илсессӗн,
Кашнийӗшне шывра тасатнӑ пек,
Ҫиҫеҫҫӗ шӑлусем акшар тӗспе,
Тӗкел ҫурасене аса илтернӗн.

Тӑп-тӑпӑл тутусем, хӑю пек, хӗрлӗ,
Вӑл каснӑ гранат мар-ши? Ҫавӑн тӗслӗ.
Кӑтра ҫӳҫӳ ик питҫӑмартине
Ҫил вӗрнӗ май ачашшӑн ҫӗртӗнет.

Ман пур халь утмӑл арӑм, еркӗн йышӗ
Пӗр сакӑр теҫетке таран ҫитет.
Чылай хӗрсен шутне те кам пӗлет?
Мӗн пуррине йӑлт чухламашкӑн йывӑр.

Анчах та, кӑвакарчӑнӑм, пикеҫӗм,
Эс вӗсенчен пин хут таса, чечен.
Аннӳн пӗртен-пӗр хӗрӗ, хӑв сисен:
Хӗрарӑмсем сана пит кӗвӗҫеҫҫӗ.

Ман арӑмсем те, йышлӑ еркӗнсем,
Вӗсен ҫывӑхӗнчи мӗнпур хӗрсем
Сана курсассӑн пурте ах! тееҫҫӗ,
Епле хитре тесе, хыт тӗлӗнеҫҫӗ:

«Ку кам-ха? Уйӑх евӗр пит мӑнаҫлӑ.
Сӑн-пуҫӗ шуҫӑм пуль, чӑнах, хитре.

Хӗвел ҫути те пур-ҫке ҫак питре,
Е вӑл, ялавлӑ полк пекех, юнавлӑ».

Часах эп ҫитрӗм шӗшкӗлӗх ҫадне,
Сип-симӗс айлӑма пӑхса килентӗм.
Граначӗ, иҫӗмӗ ҫеҫкисене
Йӑлт сарнӑ-ши? Ҫакна пӗлесчӗ терӗм.

Чи кирлине ҫавах йӑлт ӑнланмарӑм,
Мӗн илӗртрӗ, мана куҫ пӑврӗ-ха?
Пуянлӑха савса пулас-им арӑм,
Мӗскершӗн эп кунта тӑратӑп-ха?..

VII

«Пӑхсамччӗ, Суламита, ут кал-кал,
Сана тӗсесшӗн пур енчен эпир те».
«Эп вӑйӑ картинче тӑмастӑп халь,
Манаимра[21] ҫапла сӑнаҫҫӗ вирлӗ».

«Ҫавах та, эс чипер хӑвна кура:
Уру йӗке пек пит хитре, ҫавра.
Кӗлеткӳне, тен, скульптор хӑй шӑратнӑ,
Шӑп ҫавӑнпа-ши эсӗ сумлӑ, ятлӑ?

Вар-хырӑму ыраш ҫӗмелӗ пек,
Ыр шӑршӑ таврана сарасшӑн тек.
Ӑҫта ан пӑх — эпир куратпӑр хӑтлӑх,
Ӑҫта ан пӑх: кӗтретлӗх, ырлӑх, шӑплӑх.

Ик панулмиллӗ кӑкӑру, вӗсен
Тӳр килнӗ пытанмашкӑн лилирен.
Мӑйна слон шӑмминчен ӑсланӑ, тейӗн,
Куҫу та йӑлкӑшать епле тӗллевлӗн.

Батраббимри[22] хапха ҫывӑхӗнче
Есевон[23] кӳллисем йӑлтӑртатаҫҫӗ,

Сан куçусем те çавнашкал çунаççĕ,
Кăвак хĕлхем сапаласа темччен.

Сăмсу Дамаск хули енне пăхать:
Такамшăн та илемлĕ, килĕшӳллĕ.
Хăйне танлаштару пама ыйтать:
Ливан башни пек вăл тӳп-тӳрĕ, çӳллĕ.

Пуçу асилтерет-ха Кармила[24].
Çӳçӳ кăтра, вăл йĕпкĕн хĕрлĕ тĕслĕ.
Патша кăсăкланать унпа ялан,
Çакна ăнлантараççĕ-ха тем-тĕрлĕн.

Пĕвӳ пулнишĕн пальма йывăççи пек,
Варли сана савать-тĕр питĕ çирĕп.
Кăкăрусем çупкамлă иçĕмрен,
Тесессĕн йăнăшмасть иртен-çӳрен.

Шут тытăн та хăпарăн çӳлелле
Сип-симĕс пальма тăррине хаваллăн.
Пулнишĕн йывăçĕ ытла туратлă,
Сан вĕсемпе те шав кĕрешмелле.

Иçĕм çупкăмĕ евĕр кăкăру сан,
Çакна епле-ха асăрхамăн, тусăм?
Сипетлĕ шăршĕ тухĕ сăмсуран,
Улмаллă садăн техĕмĕ пуртан.

Симпыл юхтарнăн хĕрлĕ тутусем,
Ытла ачаш, пылак пуль çав вĕсем».
«Çак ырлăхпа пĕр çын çеç усă курĕ,
Ана хирĕçлесе пăхмастăп урлă.

Килсем, савниçĕм, хытă тунсăхларăм,
Сана курсан, лăш кайĕччĕ чĕре.
Вара тухатпăр иксĕмĕр хире,
Тӳлек ялта каярахпа пулатпăр.

Ирех хаваслӑн иҫӗм пахчине
Ҫитсе кӗрер, сӑнар йывӑҫсене.
Гранат ҫеҫке ҫурать-и-ха пӗр харӑс?
Унта сана ачашлӑха йӑлт парӑп...

Кур, мандрагорӑн[25] вӗт улми сап-сарӑ,
Вӑл имлӗ шӑршине инҫе сарать.
Кивви, ҫӗнни — пур ҫимӗҫӗ манра,
Эп вӗсене сыхланӑ, тусӑм, саншӑн!»

## VIII

Енчен те ман пичче пулсассӑн эсӗ,
Калатчӗҫ пурте: сирӗн пӗр анне.
Пӗр кӑкӑр сӗчӗпе ҫын вӑй илсессӗн,
Этем шав упрӗ тус-тӑванлӑхне.

Ун чух тӑкӑрлӑкра сана курсассӑн,
Ҫӗмрен пек ыткӑнӑттӑм ытамна.
Чуптӑвӑттӑм, ыталӑттӑм хавассӑн,
Никам та хӑймӗччӗ вӑрҫма мана.

Эп илсе кайӑттӑм шухӑшламасӑр
Сана хампа пӗрле аннем килне.
Каймастӑнччӗ кунтан эрех сыпмасӑр,
Ас парӑттӑн мана эс кулленех.

Гранат шывне ӗҫсессӗн пулӑн ҫепӗҫ,
Хӑрах ална, тен, хурӑн пуҫ тӗлне.
Теприпеле ыталӑн, пуплӗн: «Эпӗ
Пит кӑмӑллатӑп санӑн ӳт-пӗвне».

Иерусалимӑн ырӑ хӗрӗсем!
Чунтан ыйтатӑп эпӗ, тархаслатӑп:
Савнийӗме пит хытӑ юрататӑп,
Эсир мана ан тӑрӑр илӗртсе.

Анчах хĕвелĕ темшĕн халь тарать,
Сив пушхиртен инçе вăл, аякра.
Ман сăн тин çеç кĕреччĕ те хураччĕ,
Асăрхаман та, вăл часах шуралчĕ.

Эс улмуççийĕн айĕнче канаттăн
(Анну сана кунта тахçан çуратнă).
Шăнма нумай та вăхăт кирлĕ мар,
Вара сана васкарăм вăратма.

Хĕл кунĕсем çитсен, шур тумлă Çĕрĕн
Ирĕксĕрех канса илме тивет.
Хĕрӳ чĕре те, пулнăн куçлă çĕрĕ,
Курать пурне те, лайăха кĕтет.

Чăн юрату та шăп çапла, иккен,
Ана тĕл пулинех хаярлăх, вилĕм.
Кулать вăл хăй çулне пӳлекенрен,
Кирек хăçан маттур, хăюллă, пиллĕ.

Чăн юрату сивлет кӳлешĕве,
Леш, чăн та, пит кăра, тискер, хăрушă.
Анчах пуласлăхĕ ытла та пушă,
Шăнăçаймасть пĕр çемĕллĕ кĕвве.

Кĕвĕçекенĕн çулĕ паллă-ха:
Хăех лекет асаплă тамăка.
Чăн юрату — кăвар, вут-хĕмлĕ ухă,
Чĕрĕлĕхе кăна савса вăй пухĕ.

Тем анлăш юханшыв та сӳнтереймĕ
Хĕмпе ялкăшакан юратăва.
Ана, ейӳ тухсан та, шыв илеймĕ,
Пурах, пурах унра сӳнми хăват!

Пуплет пулсан айван: «Эп уншăн парăп
Килти пур ылтăн-кĕмĕле йăлтах».

Ăна тăван-пĕтенĕ вăрçĕ харăс,
Çав çын чысне çухатĕ самантрах.

Çакна та пĕлтересшĕн: пур ман йăмăк,
Вăл çамрăк-ха, ун кăкăрĕ ӳсмен.
Санран ыйтасшăн, çавнашкал ман кăмăл,
Мĕн тумалла-ши çураçма килсен?

Вăл хӳтлĕхсĕр, анчах тăваншăн эпĕр
Кермен çĕклетпĕр — пулĕ кĕмĕлрен.
Алăкĕсем ун — кедр хăминчен,
Ӳссессĕн йăмăк ырлăх тупĕ тетпĕр.

Эп хӳтлĕхре-ха. Кăкăрăм ман çӳллĕ,
Асилтерсех тăрать пĕр башньăна.
Ӳт-пĕвĕм пиçĕ, шухă юн хĕрӳллĕ,
Пĕлсе-курса тăран хăвах çакна.

Ваал-Гамон[26] çывăхĕнче, калаççĕ,
Пур Соломонăн хӳхĕм иçĕм сачĕ.
Ăна вăл сутнă, теççĕ, çынсене,
Унта хурал тăран ĕçченсене.

Вĕсем патшамăра укçа тӳлеççĕ,
Кашни — пин тенкĕ кĕмĕл, сахал мар.
Эп варлине каласшăн, вăл итлетĕр,
Пур çавăн евĕр иçĕм сачĕ ман.

Юлам эппин эп халь пĕр пуссăрах:
Пин тенкине ил, Соломон, хăвах.
Икçĕрĕшне хуралçăна паратпăр,
Сад çимĕçне куллен-кун вăл сыхлатăр.

Пахча ĕçченĕсем, юлташусем
Ăс панине тăнлаççĕ, ĕненеççĕ.
Пар ирĕк, эпĕ те сана итлем,
Çынсем: «Патшан ку ырă тусĕ»,— теччĕр

Савнийӗмҫӗм! Ту качаки пек, вирхӗн,
Пул ҫамрӑк пӑлан евӗр, ыткӑн вичкӗн!
Бальзам тӑвӗсене кӑмӑлласа,
Пурнар пӗрле ҫӳлти вӑя савса.

## АСĂРХАТТАРУСЕМПЕ ĂНЛАНТАРУСЕМ

[1] Мирă — мирра, тутлă шăршлă сăмала. Тропикăри йывăç вуллисенчен юхтарса тăваççĕ.

[2] Иерусалим — Палестинăри хула. Тĕн вĕрентĕвĕсенче: христиансен, иудейсен, мăсăльмансен Святой (Таса) хули.

[3] Кидар — Измаил йăхĕнчен тухнă пĕр халăх ячĕ. Еврейле «кедар» сăмах («кидор» тени те çавнашкал) хура тĕс пĕлтерĕшпе те çӳрет.

[4] Соломон—Израиль-Иудей патшалăхĕн пуçĕ пулнă. Пирĕн эрăчченхи 965—928 çç. патшара ларнă. «Юрăсен юррин» кĕнекене çырнă хыççăн каярахпа, унăн 700 арăм, 300 еркĕн пулнă теççĕ.

[5] Фараон — авалхи Египет патши.

[6] Нард — валериан йышне кĕрекен тутлă шăршлă ӳсентăран.

[7] Ен Геди — (Енгадди-— Енгед — Айн-Джиди — Ейн-Гиди) — пĕр хула ячĕсемех. Палестинăри Вилĕ тинĕс хĕрринче вырнаçнă.

[8] Кипер — ӳсентăран, чечек, виноград сапакĕ евĕрлĕ. Типĕтнĕ çулçисемпе хĕрарăмсем сăн-пите хĕретнĕ чух усă кураççĕ.

[9] Сарон — вырăн ячĕ.

[10] Фимиам — ырă шăршă кăларса çунакан типĕтнĕ курăк.

[11] Сион — Иерусалимри сăрт ячĕ. Унта Давид патшан, каярахпа Яхвен керменĕсем пулнă теççĕ.

[12] Галаад (Галаод) — ту, çĕршыв ячĕ.

[13] Давид — авалхи еврейсен патши. (Христос çураличчен 1010—970 çç. патшара ларнă). Халăх асĕнче Давид ячĕ чаплă патшалăхăн çухалнă Мухтавĕпе, Турă суйласа илнĕ патшалăх пуçĕ тенипе çыхăннă.

[14] Амон, Сенир, Ермон — çӳллех мар сăрт-ту ячĕсем.

[15] Шафран — панулми, курăк ячĕ. Курăкĕпе апат-çимĕçре усă кураççĕ.

[16] Алоэ, корица — ӳсентăран ячĕсем. Медицинăра, апат-çимĕçре усă кураççĕ.

[17] Самум — пушхирти хăйăрлă çил-тăвăл.

[18] Топаз — хаклă йышши чул.

[19] Сапфир — сенкер кăвак чул.

[20] Фирца — хула ячĕ. Иерусалимран çурçĕр енче вырнаçнă пулнă.

[21] Манаим (Маханаим) — хула ячĕ. Иерусалимран çурçĕр-хĕвелтухăç енче вырнаçнă пулнă.

[22], [23] — Батраббим, Есевон — синонимсем. Пĕр хулан ятнех пĕлтереççĕ.

[24] Кармил — (Кармель) — Палестинăри ту ячĕ.

[25] Мандрагор — белладонна йышне кĕрекен панулми сорчĕн ячĕ. Апат-çимĕçре усă кураççĕ. Авал асамлă çимĕç йышне кĕнĕ, çынна çывăрттарма пулăшнă. Хĕсĕр хĕрарăма ача çуратма та майсем туса парать тесе усă курнă. Суламита кунта хăйĕн юратăвĕ нихçан та иксĕлмест тесе çеç çирĕплетет.

[26] Ваал — Гамон — пайăр мар ят, чылай халăх хуçи тесе ăнланмалла.

ТУПМАЛЛИ

Умĕн калани . . . . . . . 3
Соломон хайлавĕсем . . . . . 7
Екклесиаст кĕнеки . . . . . 155
Соломонăн «Юрăсен Юрри» . . . 185
Асăрхаттарусемпе ăнлантарусем . . 205

**КНИГА ПРЕМУДРОСТЕЙ**

**Притчи Соломона**
**Книга Екклесиаста**
**«Песнь песней» Соломона**

на чувашском языке
Перевод с русского **Николая Кушманова**

Художник В. Н. Гончаров
Редактор П. Н. Никандров
Худ. редактор В. А. Чернов
Техн. редактор Г. Р. Евлампьева
Корректор М. Ю. Горчихина

Подписано в печать 17.09.92. Формат $84 \times 108^1/_{32}$. Гарнитура школьная. Печать высокая. Усл. п. л. 10,92. Уч.-изд. л. 7,88. Тираж 5000. Заказ 810.

Типография № 1 Госкоминформпечати
Чувашской Республики
428019, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 15

Малое предприятие «Надежда»
Марийского книжного издательства